26-94

Н. И. ПОЛОРУССОВ

# ШЕЛЕПИ САВВИСЕМ

І-мĕш ТОМ

ÇĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР — 1926 çул

Н. И. ПОЛОРУССОВ

# ШЕЛЕПИ САВВИСЕМ

1-мĕш том

ШУПАШКАР
ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
1926 ç.

Чебоксары, Типография
школы Ф. З. У. при Чуваш-
— госиздате —
Чувашлит № 517. Зак. № 189.
Напеч. 3000 экз.

## Ҫăваш халăхĕн кун-çулĕ.

Ҫăваш респуплĕкĕнҫи Советсен 1-мĕш Сĭесне сума-ćуса.

Ҫăваш халăхĕ
Авалтанпалах
Хăйне ирĕке
Кăларас тесе,
Ытти пусмăрти
Халăхсемпеле
Хăйĕн мĕн пур пек
Вăй-халĕпеле
Пĕрле хускалса
Паттăр кĕрешнĕ.
Вырăс патшисен
Пусмăрне тÿссе,
Хĕн-хур айĕнҫе
Нумай пурăннă
Тăшман ылханне,
Мăшкăлне тÿссе.
Вăйлă халăхсен
Вăйлă тăвăл пек,
Хăватлă, хăруш
Пăлхавĕсенҫе,
Пусмăр тĕнҫине
Ҫапса çĕмĕрме,
Тăшманĕсене
Ватса пăрахма,
Харăс хускалса
Кĕрешнĕ вĕсем.
Мул хуçисемпе
Ҫĕр улпуҫĕсен
Тискер йĕркине
Пĕтерес тесе,
Раçăн Ҫтаппанпе,
Пăкаҫавпала,
Пĕрле кĕрешнĕ—
Патшасемпеле.
Ҫын йунне сăхса,
Йантине ҫыхса
Пурăннă, вăйлă
Тăшмансемпеле
Нумай ĕмĕрсем
Кĕрешнипеле,
Ҫăваш халăхĕн
Хăваҫĕ ҫакса,
Питĕ ҫухăна
Тăрса йулнă вăл.

Çĕр улпуђĕсен,
Пуйан хуçасен
Хăрушă, тискер,
Усал йĕркипе
Вак халăхсене
Пĕтерес тесе,
Çĕр-шывĕсене
Ирĕксĕр илсе,
Урăх çынсене
Вырăнаçтарса,
Пĕтерес тенĕ
Вырăслантарса.
Ђăваш ђĕлхине,
Ун натси йăхне
Çут çанталăкран
Çухатас тенĕ.
Темиçе ĕмĕр
Ђăваш халăхне
Тĕрлĕ йенĕпе
Ђунне хĕненĕ.
Ун сывлăхне те
Сахаллантарнă,
Ĕрђессине те
Кайалла йанă.
Куçне хупласа,
Тăлласа тăнă.
Аслă Октапĕр
Револђутсийĕ
Çĕр улпутсемпе
Мул хуçисене—
Пусмăр тĕнђине
Çапса çĕмĕрсе,
Ватса пăрахса,
Сирпĕтсе йађĕ.
Краштан вăрçисен
Çуламĕ виттĕр
Çуралса тухнă
Совет ирекĕ
Пур халăха та,
Хăйсен кăмăлпе
Пурăнђђăр тесе,
Ирĕклĕх пађĕ.
Вĕсен çийĕнђи
Ылхан мăшкăлне
Çапса салатса
Вăркăтса йађĕ.
Совет Сойусĕн
Ытти хăйĕн пек
Ирĕке тухнă
Ĕç халăхсемпе
Ђăваш халăхĕ
Пĕрле пикенсе,
Çĕнĕ пурăнăç
Тума тытăнђĕ.
Ђăваш ĕç халăх
Хăй ирĕкĕпе
Пурăнма кăмăл
Тунине курса,
Пĕтĕм Раççей
Тĕпĕçтăвкомĕн

Пин те тăхăр çĕр
Çирĕмĕш çулта
Çапăнса тухнă
Текређĕпеле,
Ђăваш оплăçĕ
Пулса та тăђĕ.
Совет Сойусĕн
Ĕç халăхĕсем,
Ђăваш халăхне
Пулăшнипеле,
Вăл хăйĕн ђухăн
Хуçайствине,
Çутта кăларас
Йенĕпеле те,
Тата политтĕк
Тĕлĕшĕнђен те,
Çирĕплетмешкĕн
Вăйлă тытăнђĕ.
Ђăваш ĕç халăх
Хăй оплăçĕнђи
Хăйĕн пилĕкмĕш
Сĕйесĕпеле
Сÿтсе-йавнине
Йышăннипеле,
Ђăваш оплăçĕн
Халăх массине,
Вăйлăрах курма
Совет уссине,
Сотсиалисăмлă
Пурăнăç тума,
Тата çирĕпрех
Тĕп никĕс хума,
Пин те тăхăр çĕр
Çирĕм пилĕкре
Ака уйăхĕн
Çирĕм пĕрĕнђе
Пĕтĕм Раççей
Тĕпĕçтăвкомĕ
Ђăваш оплăçне
Респуплĕк туса,
Ђăваш халăхне
Совет Сойусĕн
Уйрăлми йышĕ
Туса йышăнса,
Ĕç халăх вăйлă
Пĕрлешĕвĕнђе
Пĕр çемйе пекех
Хурса хисеплет.
Пур халăхсен те
Пĕр пек танлăхне,
Ђăваш ĕç халăх
Лайăх астуса,
Тивĕçлĕхсене
Хытă сыхласа,
Хуçайствăпа
Куљттурă йенне,
Малалла кайма
Пултартăр тесе,
Ђăваш Респуплĕк
Мĕн пур халăхĕ,

Пĕр тăвансем пек
Таҫă пĕрлешсе,
Лайăх килĕшсе
Пурăнмаллине,
Ҫăваш халăхĕ
Хытă асăрхаť.
Сотсиалисмлă
Респуплĕк туса,
Ҫĕнĕ пурăнăç
Тума тытăнса,
Комунисăмлă
Çулпа пыракан
Совет Сойусĕн
Ĕç халăхĕсен
Пролеттарилĕ
Çемйине йерсе
Пĕрле ĕçлесе,
Пĕрле пурăнма,
Ҫăваш ĕç халăх
Хытă тăрăшаť.
Пур йенĕпе те
Малта пыракан
Совет Сойусĕн
Ытти халăхсем
Ҫăваш халăхне
Пулăшнипе çех,
Ҫухăна йулнă
Ҫăваш халăхĕ
Çĕнĕ пурăнăç
Тума пултарĕ.

Пĕтĕм тĕнҫери
Пролеттарисен,
Пĕрлешсе тăвас
Револҫутсине
Сотсиалисмлă
Совет Сойусĕ
Вăйлă кĕреппăç
Вырăнне пулса,
Хăй хўтлĕхĕнҫе
Сыхласа тăраť.
Çав кĕреппăçа
Тата вăйлăрах
Тĕреклĕлетме
Ҫăваш Респуплĕк
Правиттĕлстви,
Пĕтĕм вăйĕпе
Астуса тăрса,
Пур ĕç халăхпе
Таҫă пĕрлешсе,
Мĕн пур вăй-халне
Хурса ĕçлеме
Пур вăхăтра та
Хытă тăрăшĕ,
Кирек хăçан та
Хастарлă пулĕ.
Ҫăваш Респуплĕк
Пĕрĕмĕш Сйесĕ
Пур ĕç халăхне
Çакна пĕлтерет.
Авалхине те,

Хаљхисене те,
Мĕн пулнисене
Аса илтерет.
Ђăваш халăхĕ
Ђухăнне курса,
Ун пурăнăçне
Йусасђĕ тесе,
Тĕрлĕ йенĕпе
Сўтсе-йавнипе,
Ђăваш халăхне
Ђунтан савнипе,
Пĕрĕмĕш Сйес
Пĕр ерне хушши
Вăйлă калаçса
Хытă ĕçлерĕ,
Сотсиалисăм
Çулĕпе пырса
Ђăваш халăхĕ
Çутăлĕ терĕ.

---

**Хумма Çеменне** (Ђĕкеç).

Ылттăнăм та çук ман, кĕмĕлĕм çук,
Пĕр Мускавран килнĕ те мулăм çук.
Айван пуçăмпала шухăшласан,
Санран ытла йуратнă çыннăм çук,
Çурри ђунăма çурса та парăттăм—
Ђунсăр пуçне пурăнма халăм çук.
*(Чистай уйĕсĕнчи чăвашсен йурри).*

Çакă йурă асăма килсессĕн,
Ес, йулташăм, асма килетĕн.
Еп ку йурра мĕншĕн йурланише
Хăвах пит лайăх пĕлетĕн.
Йуратса çыратăп çакă йурра.
Ес асăма килсен йурласа,
Авалхи ђăвашсен йуррисене
Аса иле-иле йусаса.
Ђăнах санăн ђĕрў вутла çунаť
Тăван ђĕлхе хăватне курасшăн,

Есӗ пӗтӗм ҫунтан тӑрӑшатӑн
Хамӑр ҫырулӑха тӑвасшӑн.
Сӑвӑсем те ҫыратӑн, пӑросӑ та,
Ҫӗрӗн-кунӗн ун ҫулне шыратӑн,
Ҫамрӑк, хӗрӳлӗ тӑн-пуҫупа
Вӑй хӑватне лайӑх куратӑн.
Ӗҫҫенлӗхпе, вӑйлӑ ӑс—хакӑлпа
Тӑвас тенӗ ӗҫне тӑватӑн,
Тӑван ҫырулӑхӗн илемӗшӗн
Ӑс та тупан, вӑй та тупатӑн.
Йури ҫыртӑм, тусҫӑм, ҫакӑ йурра
Ес асӑма килсен йурлама, —
Кӑтарт ҫасрах хӑвӑн хӑватна!
Ан хӑйайтӑр никам хурлама!

---

**Н. И. Ашмарина.**

Хаҫ Атӑл ҫийӗнҫе
Йӑл-йӑл выҫаӗ хӗвелӗ,
Таҫта пин-пин ҫухрӑмра
Йӑлкӑшакан хӗлхемӗ!
Кӗмӗл пек ҫут пуллисем
Йӑлтӑр-йӑлтӑр сикеҫҫӗ.
Ҫаплӑ хӗвел ӑшшине
Сив шывра та сисеҫҫӗ.

Ха, ҫырулӑх ӗҫӗнҫе
Пӗр ҫӗлхеҫӗ ҫӗр ҫинҫе
Йепле пӗтӗм тӗнҫипе
Тӗлӗнтерет ӗҫӗпе.
Вӑл хаҫ Пакку хулинҫе
Кунӗн-ҫӗрӗн хут ҫинҫе,
Ҫырупала ҫапӑҫса,

Ӟӗлхесемшӗн ҫул уҫса,
Мӗн усалне, ыррине,
Ӟӗлхере мӗн пуррине,
Тӗрлӗ-тӗрлӗ ӟӗлхесен
Сӑввисене-йуррине.
Тӗнӗпеле кӗллине,
Ӟӗррипеле виллине,
Тӳрипеле туррине,
Кукрипеле тӳррине
Йус йӗрӗ пек йӗрлесе;
Хурипеле шуррине,
Ӟӗнтӗрлете тӗрлесе;
Тӗнӟен хӑруш ӗҫсене
Пӗлсе, курса, хуйхӑрса,
Пур ҫынна та йуп курса
Ҫыру ҫырса, вуласа,
Шухӑшласа уйласа,
Тахҫан авал-авалхи
Сӑмахсене суйласа, —
Мӗн пур ӟаплӑ ӟӗлхеҫӗ
Ӑслӑлӑхин ӗҫне те
Вӑл астуса пурӑнаť.
Ҫавӑнпала ун ӗҫӗ
Пур ҫӗрте те курӑнаť.
Ӗҫлет ӗҫне йӑвашшӑн,
Ҫӗрне-кунне пӗлмесӗр,
Халӑх ӗҫне, хӑй ӗҫне,
Асне-пилне илмесӗр.
Пысӑккипе пысӑккӑн,
Аӟасемпе аӟа пек,

Шăнкăрђă пек йăвашшăн,
Вăл хăй ĕçне тăвасшăн.
Ун ђаплă ĕçĕшĕн
Ђĕр-ђĕлĕхсем кирлĕ мар! *)
Хăй умĕнђи хут çийĕ!
Ĕçин уйрăм уççийĕ — **).

---

**Уксак Тимĕр Пўлере илни çинђен.**

Уксак Тимĕр çарпала
Пўлер патне çитнĕ ђух,
Çар пуçлăхне пурне те
Пуçтарђĕ тет пĕр çĕре,—
Мĕнле мелпе Пўлере
Илессине пĕлтерме.
Уксак Тимĕре çавăн ђух
Каларĕ тет пĕр пуçлăх:
Пўлер хули пит ђаплă,
Таçтан-таçта сарăлнă:
Тем тарăнăш валсемпе
Йĕри тавра çавăрнă.
Пўлер патши хушнипе
Валĕсене ђăп тулли
Вăрттăн тимĕр хапхаран
Шыв кăларса тултарнă.
Çавă Пўлер хулинђе
Пăлхар патши пурăнаť,
Пур çĕрте те çар халăх
Вăрман пекех курăнаť.

---

*) Ђĕр-ђĕлĕх тесе авал ђăвашсем светиттĕле каланă.
**) Уйрăм уççи тесе постановленине (йышăннине) каланă.

Улт-çиђ çухрăм хушшине
Ыткăнаççĕ уххисем;
Çта пăхсан та курăнаť
Пĕлĕт пек çын йухнисем.
Вăрçса илес тесессĕн
Пурте вилсе пĕтĕпĕр,
Тем пек ђаплă çар йатне
Намăспа çеç витĕпĕр.
Акă кунта пĕр йалта
Пĕр пит ђаплă асаймăç
Ђăваш карђăк пурăнаť.
Çĕрле вĕçсе çӳрет тет
Мĕлке çине утланса,
Шуйттансемпе пĕр пулса,
Темĕн те пĕр хăтланса,
Çӳçне-пуçне тустарса,
Çӳле вĕçсе хăпарса,
Пĕкĕрĕлсе, хутланса.
Уйăх çиме хăтланса.
Вупăр пулса пусаť тет
Çывăракан çынсене;
Витĕр пĕлсе тăраť тет
Малашнехи кунсене.
Вĕри кĕлпе сапсассăн,
Пиђĕ куçĕ хĕп-хĕрлĕ
Хăпаланса тухаť тет.
Куçне вара алтăр пек
Ђармакласа пăхаť тет.
Унтан ерни ернипе
Урама та тухмасť тет.

Йытă пек те вĕрет тет,
Кашкăр пек те улаŤ тет,
Шуйттансемпе туй туса
Пĕçĕ çапса кулаŤ тет.
Тĕнĕрен тухса кайаŤ тет,
Тĕнĕрен килсе керет тет,
Кунĕпеле çывраŤ тет,
Çĕрĕпеле çӳрет тет,
Мĕнле мелпе Пӳлере
Илмеллине пĕлет тет.
Вăл карђăкран ăс ыйтма
Таçти çын та килет тет;
Ес те çавă карђăкран
Ăс ыйтса кил, Ђăн-пуç-хан
Ђасрах кайса пĕл халĕ,—
Инçе мар тет ун йалĕ.
Çар пуçлăхĕн сăмахĕ
КайаŤ ханăн кăмăлне.
УтланаŤ те лашине,
ЂуптараŤ вăл ун патне.
Карђăк патне çитет те,
Лаша çинђен анаŤ те,
Пӳрт алăкне тапаŤ те,
Хăпăл-хапăл васкаса
Кĕрсе кайаŤ хашкаса.
Карђăк çавă вăхăтра
Хуран çинђен вир пăтти
Ђашкă çине антарса,
Ђăн-пуç-хана ал парса,
СараŤ сĕтел çиттине,

Кўрсе лартат паттине.
Сар вир патти варрине
Сар çупала куç хыват.
Унтан Уксак Тимере
Хана туса ђыс тават.
Уксак Тимер малтанах
Вир паттине куçенђен,
Ђан варринђен, çу çинђен,
Асса илсе хыпат те,
Карђак, ана курсанах,
Сехерленсе хараса,
Уксак Тимере санаса
Каларе тет уйласа:
— Уксак Тимер мар-и ес?
Çава çапла куçенђен,
Патасене çу çинђен
Асса илет тетђеçе.

Уксак Тимер.

Ђан калатан ес, карђак,
Ђанах еп çав пулатап.
Хам çынсенђен илтнине
Ак еп сана калатап:
Ес пит ђапла асаймаç,
Сана пурте пелеççе,
Тенђере мен пуррине,
Усаллине-ыррине,
Курманнине-курнине,
Пулманнине-пулнине
Пелсе тарат, тереçе.

Каласа пар ес мана:
Çакă Пÿлер хулине
Мĕнле мелпе илмелле?
Ăна илем тесессĕн,
Манăн мĕн-мĕн пĕлмелле?
Ђăннипеле каласан,
Санăн пуçу сыв йулĕ,
Улталаса калсан,
Пуçу халех çук пулĕ.

### Карђăк.

Ес, Ђăн-пуç-хан, пит ђаплă,
Сан çар халăх хăватлă.
Çапах Пÿлер хулине
Илейес çук вăйпала,
Ăна илме пултарăн
Акă çапла майпала:
Есĕ йĕтем шăлтарса,
Серепесем хуртарса,
Унта тулă саптарса,
Кăвакарђăнсем тыттарса,
Урисене вĕсенне
Ăвпа кÿкĕрт çыхтарса,
Каçа хирĕç пурне те
Йартар вара вĕçтерсе.
Вĕсем пурте Пÿлере
Йăвисене кайаççĕ,
Вара Пÿлер хулине
Пур тĕлтен те вут хыпĕ.
Çапла тусан, Ђăн-пуç-хан,

Ђасах илён Пӳлере.
Карђӑк çапла каласан,
Уксак Тимӗр, тав туса,
Тухса кайат̆ васкаса,
Вӑл хушнине тумашкӑн.
Мӗн илтнине, пӗлнине
Вӑл хӑвӑртах тутарат̆,
Пӗтӗм Пӳлер хулине
Вӗлт! кӑна вут хыптарат̆.
Акӑ Пӳлер хулинђе
Шӑри-шари хусканат̆,
Пӗтӗм хула халӑхӗ
Урлӑ-пирлӗ кускалат̆;
Патшасене çиленсе
Вӑрçа-вӑрçа ылханат̆,
Йӗрет, куççул йухтарат̆,
Хӑруш сӑмахсем калат̆.

### Пӳлер çунни.

Ах, тур, тур, тур, пӗтрӗмӗр.
Ӑçта кайса кӗрер-ши?
Ах, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр,
Мӗскер тума пӗлер-ши?
Ыр вут ама, вут амӑш,
Ху вутна ху ђарсам-и!
Ырӑ турӑ Пӳлӗхçӗ
Пӗр ху анђах çӑлсам-и!
Ех, мӗн çисе тӑрӑпӑр?
Мӗн-мӗн кӑна курӑпӑр?
Мӗнле майпа вилӗмрен

Ђуна çăлса йулăпăр?
Ах! хăрушă, хăрушă!
Пурте вилсе пĕтĕпĕр.
Куçпа пăхма хăрушă,
Пĕтĕм тĕнђе çĕмĕрлет.
Шăна-пăван вырăнне
Хисепĕ çук çын вилет.
Тăшман, тискер кайăк пек,
Никама та хĕрхенмест.
Урса кайнă пĕтĕмпех,
Ырри çинђен ним пĕлмест.
Капан-капан çын пуçĕ
Купаласа хăварат.
Пĕтĕм тĕнђе халăхне
Усалăхпе хăратат.
Ех! Пўлерĕ, Пўлерĕ,
Ђасах куçран çухалђĕ.
Ав, патша çурђĕ патне те
Вут уласа çывхарђĕ.
Патша хĕрĕсем хăраса
Миçĕт тăрне тарђĕçĕ,
Йĕре-йĕре йурласа,
Куççул тăкса ларђĕçĕ.
Унта та вут çитсессĕн,
Шурă акăш пулђĕç те,
Çиђĕ тинĕс леш йенне
Вĕçсе карĕç виççĕш те.
Çут кĕмĕл пек çунатсем
Йăлтлатса çех йулђĕçĕ,
Пĕр куç уçса хупиђђен

Курăнми те пулђĕçĕ.
Вĕçсе кайас умĕнђен
Акă çапла каларĕç:
Епĕр ĕнтĕ кайатпăр
Çиђĕ тинĕс леш йенне,
Кунти пирĕн çĕр-шыва
Тăшман килсе тулнăран.
Ахăр саман çитнĕ ђух,
Каллех кунта килĕпĕр.
Ку хамăрăн çĕр-шыва
Хамăр алла илĕпĕр.
Пирĕн йалсем, хуласем
Кунта пурте пĕтĕçĕ.
Хăшĕ турă хушнипе
Çаплах çĕре путĕçĕ.
Тĕнђе пĕтес умĕнђен
Вĕсем каллех тухăçĕ,
Унђђен кунти çĕр-шывра
Нумай йунсем йухĕçĕ.
Малти кайа йулĕçĕ,
Кайри малта пулĕçĕ.
Ех, Пӳлерĕн ырлăхĕ
Ăçта кайса кĕђĕ-ши?
Ку тискер ĕç çĕр çинђе
Хăçан кăна пĕтĕ-ши?
Ех, çĕр-шывĕ, çĕр-шывĕ,
Ех, Пӳлерĕ, Пӳлерĕ,
Пĕтĕм халăх ырлăхне
Тăшмансене пиллерĕ.
Пуйанлăхне, ырлăхне

Пур те пĕлсе тăраҕҕĕ,
Унăн ҕапне, хăватне
Пĕтĕм тĕнҕе кураҕҕĕ.
Ех, Пÿлерĕ, Пÿлерĕ
Хĕрĕх пин алăк теҕҕĕçĕ,
Тaçти патша халăхĕсем
Суту-илÿ тăваҕҕĕçĕ.
Сĕт-турăхсем çăвĕпех
Йÿçсе çĕрсе ларҕҕĕç,
Çити-çитмен вăхăтра
Пĕрне-пĕри параҕҕĕç.
Кĕмĕл тĕслĕ шывсенҕе
Хурт пек пулă вĕреҕҕĕ,
Вăрмансенҕе кайăк-кăш
Кĕтÿ-кĕтÿ çÿреҕҕĕ.
Никам татса пĕтерми
Çырла-çимĕç пулаҕҕĕ.
Татса пĕтмен паланĕ
Çуркуннене йулаҕҕĕ.
Шурă мамăк калпаксем
Тăхăнаҕҕĕç пуçсене,
Тăрна куç пек теҕҕĕçĕ
Çăлĕсенĕн куçсене.
Ҕăкăртатса тăраҕҕĕç
Ытарма çук сăрансем,
Симĕс пустав халат пек
Курăнаҕҕĕç çарансем.
Ĕшнисенҕе ҕеҕексем
Вутăн-хĕмĕн çунаҕҕĕç,
Хулисемпе йалĕсем

Питĕ хăвăрт хунаҫҫĕҫ.
Урхамахсем хĕлĕпех
Утă-сĕлĕ ҫиеҫҫĕҫ,
Тĕвисенĕн ҫисене
Хĕрĕхшер пăт тиеҫҫĕҫ.
Улăхсенче хăмлисем
Автан пуҫ пек пулаҫҫĕҫ,
Уйавсенче ҫамрăксем
Ҫĕрĕн-кунĕн выляҫҫĕҫ.
Шĕшкисенче măйрисем
Хăмла пекех курнаҫҫĕ,
Сар кайăк пек савăнса
Пăлхар халăх пурнаҫҫĕ.
Ҫут кĕмĕл пек ҫутăлса
Йухаҫҫĕҫĕ ҫăлĕсем,
Чĕрес-чĕрес лараҫҫĕҫ
Тăварланă ҫăвĕсем.
Хĕлĕн-ҫăвĕн пĕтмесҫҫĕ
Нÿхрепсенче шăрттансем,
Йăшăлтатса тăраҫҫĕҫ
Ҫырмисенче ҫăрттансем.
Вĕҫсĕр-хĕрсĕр вырттаҫҫĕҫ
Ҫаранлăхсем, ҫеремсем;
Тем чул тыр-пул ҫĕртеҫҫĕҫ
Пуйанĕсем, сарансем*).
Йур пек шурă кĕпе-йĕм
Тăхăнаҫҫĕҫ ҫисене,
Ҫĕр ҫывăрма пĕлмесĕр

---

*) Хытă ҫынсем.

Ĕçлеҫҫĕç ĕçсене.
Арман пĕвисене те
Утăпала пĕвеҫҫĕç;
Тырă пулă тума та
Пит лайăх пĕлеҫҫĕç.
Вырăссене выçă ҫух
Тырă парса тăраҫҫĕç,
Пӳлер халăх хăватне
Вĕсем лайăх кураҫҫĕç.
Пӳлерсене ҫас-ҫасах
Пит сăтăр тăваҫҫĕç,
Хулисене, йалсене
Куççулпеле çăваҫҫĕç.
Тăват-пилĕк лашапа
Акалаҫҫĕç анасем,
Ҫаплă Пахтат хулинҫен
Килеҫҫĕçĕ хăнасем.
Пĕр ĕçлеме тытăнсан,
Çĕрĕн-кунĕн ĕçлеҫҫĕç,
Ĕçкĕ ĕçме тытăнсан,
Ернипеле ĕçеҫҫĕç.
Сĕм пылĕсем-сăрисем
Кăпăкланса йӳçеҫҫĕç,
Çӳлте тарай тутрисем
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçеҫҫĕç,
Купăссене тытаҫҫĕç,
Сĕркĕҫҫине сĕреҫҫĕç,
Шăпҫăк йурри йеверлĕ
Йуррисене сĕвеҫҫĕç.
Кĕслипеле тăмрине

Харăс тăрса калаҍҍĕç,
Ватти-вĕтти мĕнĕпех
Вăйĕсене саваҍҍĕç.
Таçти-таçти халăхсем
Киле-киле çӳреҍҍĕç,
Мулкаçсене мăйсенҍен
Ҍӳҍепеле пăваҍҍĕç.
Çамрăкĕсем ушкĕнпе
Аккăшсем пек çӳреҍҍĕç,
Пурçăнпала тĕрлесе
Тумтир илем кӳреҍҍĕç.
Ырашĕсем çулленех
Пĕкĕ çӳллĕш ӳсеҍҍĕç;
Хăна-вĕрле пур ҍухне
Йалан сĕм-пыл ĕçеҍҍĕç.
Урпасемпе пăрисем
Касса уçăлми пулаҍҍĕç,
Тĕрлĕ тырă-пулăпа
Кĕлеҍĕсем тулаҍҍĕç.
Туллине те, вирне те
Темĕн ҍухлĕ акаҍҍĕç,
Вĕсем валли çулленех
Тем ҍул çерем çĕтеҍҍĕç.
Çăва тухсан нумайĕш
Хиртен йала кĕмесҍĕç;
Улт-çиҍ çула çитмесĕр
Лашисене кӳлмесҍĕç.
Сĕлĕ çăнăх пĕçерсе
Тип тинкĕле тăваҍҍĕç,
Хĕрĕсене вăрласа

Инкисене тăвађђĕç.
Улăхсенђе утисем
Кăвапаран ўсеђђĕç,
Шывĕсенђе ђăп-ђăпăр
Кимĕ-сулă ишеђђĕ.
Йур йурласа ташласа
Тăвађђĕçĕ йупасем,
Йалтан йала çўређђĕç
Ташлаттарса упасем.
Уша йупи çумĕнђе
Çунађђĕçĕ çуртисем,
Çĕлĕксене хĕстерсе
Кĕл тăвађђĕç хуçисем.
Пĕтĕм хурсем пĕçерсе,
Ђўклемесем ђўклеђђĕç,
Хăй йупине çын ђунĕ
Килет тесе пуплеђђĕç.
Кĕрсен çĕлĕк силлесе
Кĕрў салам парађђĕ,
Кĕрў ларас вырăна
Хунĕ кĕççе сарађђĕ.
Хĕскĕђĕ пек хĕстерђĕç
Тутарĕпе вырăсĕ,—
Йытă çўппи вырăнне
Пĕтрĕ Пăлхар пурнăçĕ.
Пĕтĕм Пўлер çĕр-шывне
Хупăрласа илђĕçĕ,
Тĕнђе пĕтнĕ йеверлĕ
Çĕр кисретсе килђĕçĕ.
Унăн мĕн пур пурлăхне

Тусан пекех тустарҙĕç,
Халăх йунне, куççулне
Çырма пекех йухтарҙĕç.
Хуласене, йалсене
Вутпа персе пĕтерҙĕç,
Мĕн пур лайăх йур-вара
Çар халăхне çитерҙĕç.
Калама та хăрушă
Усал ĕçсем турĕçĕ;
Çĕр кăкрине йунпала
Куççулпеле çурĕçĕ.
Пĕрне пĕри сĕлĕ пек
Çӳрерĕçĕ тураса,
Сехĕрленсе çех тăҙĕ
Пĕтĕм тĕнҙе хăраса.
Пĕтĕм Пӳлер маттурĕ
Пĕр вăхăтсăр пĕтрĕçĕ,
Çитнĕ хĕр-ипăраçа
Ҙĕрлех çĕрпе витрĕçĕ.
Вĕсен çинҙи тăпрана
„Хĕр ту“ тесе йат паҙĕç,
Уксак Тимĕр çийĕнҙен
Ĕмĕр тискер йат йаҙĕç.
Вăрмансене тарни çех
Сывă тăрса йулҙĕçĕ,
Ĕмĕр ĕмĕр манас çук
Хăруш ĕçсем пулҙĕçĕ.
Вут ами те ҙармарĕ,
Пӳлĕхçи те пӳлмерĕ,
Çĕр çийĕнҙен çухалҙĕ

Ђăваш ђаплă Пӳлерĕ.
Кĕслепеле купăспа
Макра кĕвви каласа,
Патши тарђĕ хăраса
Уллах вырăн шыраса.
Пуçри ђухăн çĕлĕкне
Васканипе Пӳлере
Хире манса хăварђĕ,
Хăй пуçне те вилĕмрен
Тарса анђах хăтарђĕ.
Хаљ те унăн ађисем
Çиђĕ тинĕс леш йенђе:
Аттен ђухăн çĕлĕкне
Кайса илес-ђĕ тесе,
Тăраççĕ тет йĕтесе *).

## Ессепе.

Ĕлĕк авал пĕр йалта
Пурăннă тет Ессепе,
Пĕтĕм тĕнђе халăхне
Тĕлĕнтерсе ăсĕпе.
Ун пĕр пиђĕ çийĕнђе
Хĕвеђ тăнă выљаса,
Тепĕр пиђĕ çийĕнђе
Уйăх тăнă çутăлса.
Таçти-таçти халăхсем
Унтан пырса ăс ыйтнă;
Вăл пурне те ăс парса

*) Иккĕленсе.

Хăна туса ăсатнă.
Çил çунатлă çĕленпе
Çӳређђĕ тет вĕçтерсе,
Кашлатарса - ђашкăртса
Йăл-йал çиçĕм çиçтерсе.
Хăй патшалăх такĕнне
Ђиккине те пĕлмен тет,
Ун пек ђаплă ăслă çын
Çĕр çинђе те пулман тет.
Кĕтӳ-кĕтӳ сурăхне
Кашкăрсемех кĕтнĕ тет,
Çитес тенĕ çĕре вăл
Çиçĕм пек ђас çитнĕ тет.
Вăл иртнĕ ђух, вăрмансем
Йулађђĕç тет кашласа,
Мĕн пур йывăç савăнса
Çын пек сиксе ташласа.
Мĕскер тăвас тесен те,
Вăл калани пулнă тет.
Унăн выљăх-ђĕрлĕхĕ
Пĕтĕм çĕре тулнă тет.
Ылттăн-кĕмĕл тесессĕн,
Никам шутне пĕлмен тет
Вăл пĕлменни çĕр çинђе
Пĕр йапала пулман тет;
Мĕн пур ђĕр-ђун унпала
Калаçнă тет çын пекех;
Вăл пурне те курнă тет
Хăй куç умĕнђи пекех;
Унтан мĕн пур патшасем

Сехĕрленсе тăнă тет,
Çĕрĕн вĕçĕ хĕринҫен
Пуççапмашкăн пынă тет.
Акă пĕрре Ессепе
Питĕ çутă уйар кун,
Хĕртсе хĕвел пăхнă ҫух,
Шурă йур пек шап-шурă
Виçĕ вĕшле йыттипе,
Урхамахпе, уттипе,
Кайаттухса сунара
Ухатара çӳреме.
Вăрман хĕрне çитнĕ ҫух,
Сиксе тухат пĕр пĕлĕт:
Кăвакарса, хуралса,
Кĕмсĕртетсе, кĕрлесе,
Çиçĕм çиççе, йалтлатса,
Аçа çапса шартлатса,
Пĕтĕм çĕре ҫĕтретсе,
Йарат çăмăр ҫреслетсе.
Ĕнтĕркесе йĕпенсе,
Тĕнсе, кӳтсе, шапарса,
Асапланса, ахăрса,
Пырат сĕнксе Ессепе,
Хăй ăçтине пĕлмесĕр.
Малалла мĕн пуласса,
Асне пилне илмесĕр,
Çав вăхăтра пĕр мулкаҫ
Таçтан сиксе тухат те,
Çăмха кусса кайнă пек,
Сирпĕнет ун умĕнҫен.

Ессепен виç вĕшлийĕ
Мулкаҕ хыççăн вăшлатса,
Пĕр пĕринҕен ăмăртса,
Ыткăнаççĕ нăйлатса.
Ессепе те хыçалтан,
Вĕшлисенҕен йулмантан,
Урхамахпа йерипен,
Хăй вĕшлисен йĕррипен,
Ним пĕлмесĕр тĕлĕнсе,
Тĕлĕкри пек тĕлленсе,
Пырать ҕĕп пек хутланса.
Темĕн те пĕр хăтланса.
Пырсан-пырсан вăл курать
Пĕр вĕшлийĕн виллине,
Мулкаҕ хыççăн пынă ҕух
Вилсе ўксе йулнине,
Шартах сикет ун ҕĕри,
Хăйне темĕн пулнă пек,
Тискер кайăк туласа
Вĕшли вилсе йулнă пек.
Кайсан-кайсан вăл татах
Курать тепĕр вĕшлине,
Йун çийĕнҕе пĕр сассăр
Хусканмасăр выртнине.
Ах, мĕн пуҙҕĕ-ши, тесе,
Сехĕрленсе хăраса,
Йулашкине шыраса,
Татах кайать малалла.
Ак пĕр вăхăт кайсассăн,
Вăл виççĕмĕш вĕшлине,

Ђăн йуратнă йыттине,
Темиçене татăлса
Курат̆ вилсе выртнине.
Ах, епĕ те пĕтеп пуђ
Ку хăрушă çул çинђе?
Мĕн курĕ-ши манăн пуç?
Тет вăл хăйĕн ăшĕнђе,
Усал çапла ман куçа
Мулкађ пулса курăнђĕ
Пуђĕ тесе хăраса,
Тĕрлĕ-мĕрлĕ уйласа,
Вĕшлисемшĕн куђанса,
Кĕрсе кайат̆ малалла,
Сĕм вăрмана, шалалла.
Кĕнĕ çемĕн кĕрет вăл
Çулпа вăрман ăшнелле.
Пырса тухат̆ çап-çутă
Пĕр уçланкă ĕшнене.
Акă унта курат̆ вăл
Хăй ĕмринђе курманне,
Çĕр çийĕнђе ниçта та
Нихăçан та пулманне.
Тем-тем тĕслĕ ђеђексем
Вутла çунса тăраççĕ;
Вутăн-хĕмĕн кайăксем
Ытарма çук йурлаççĕ.
Пĕтĕм ĕшне йалкăшса
Йăлтăртатса курăнат̆,
Çавă ĕшне варринђе,
Çут хĕвел пек çутăлса,

Пĕр ылттăн çурт, капланса,
Ларать, вăрттăн пытанса.
Ылттăн çурта йĕри-тавра
Тимĕр карта çавăрнă,
Тимĕр карта варринҫе,
Тимĕр хапха ик йенҫе,
Ик араслан выртаççĕ.
Иккĕшне те мăйсенҫен,
Тимĕр йупа çумĕнҫен
Çыхнă тимĕр сăнҫăрпа,
Çăраланă çăрапа.
Çийес килет Ессепен, —
Нимĕн те çук çимелли:
Ылттăн çурта кĕресҫĕ,
Ниçтан çул çук кĕмелли.
Тимĕр хапхан патне те
Çывăхарма хăрушă,
Арăслансем ахăрса,
Харăлтатса тăраççĕ.
Ăçта кайас, мĕн тăвас,
Ку пуç мĕскер курĕ-ши?
Çиме те çук, вăй та çук,
Ку ҫун ăçта тăрĕ-ши?
Ылттăн çурта кĕрсен те,
Кĕмесен те, вилмелле,
Мĕн курнă пуç куртăрах,
Унта мĕн пур пĕлмелле.
Ак ылттăн çурт патнелле
Урхамахне уттарать,
Хапха патне çитсенех,

Саламатпа çаптарат.
Ик арăслан хушшинҗен
Мĕн пур вăйпа сиктерет.
Урхамаха ик йенҗе
Арăслансем хăр та хăр!
Харăс сиксе хыпаççĕ
Шăри-шари çухăрса
Таткаласа çăтаççĕ,
Хăй кĕлте пек ыткăнса
Вĕçсе ӳкет малалла,
Тимĕр карта ăшнелле,
Çурт патнелле, шалалла.
Ак вăл сиксе тăрат те,
Пăлтăр умне пырат те,
Ылттăн алăк хăлăпне
Аллисемпе тытат те,
Шанкăртатса, кĕрлесе,
Пĕтĕм çĕре кисретсе,
Ылттăн алăк хăй тĕллĕн
Ик йенелле уçăлат;
Хĕвел сиксе тухнă пек,
Пăлтăр умĕ йăлтлатса
Йăлтăртатса çутăлат.
Çав вăхăтра ун патне,
Ăна хирĕç вĕлтлетсе,
Шур акăш пек шап-шурă
Шурă пурçăн кĕпепе
Пан улми пек хĕп-хĕрлĕ
Хĕресленнĕ пиҗĕпе,
Тулли уйăх пек çутăлса

Тутисемпе йăл кулса,
Сар кайăк пек сап-сарă
Пĕр хĕр сиксе тухаť те,
Ессепене аллинђен
Ђупса пырса тытаť те,
Илсе кĕрет пӳртелле
Хĕрĕх те пĕр хĕр пĕрле
Пурăнакан пӳлĕме.
Акă унта Ессепе
Тем пек хытă тĕлĕнет:
— Епĕ кунта, ку çурта,
Хăш тĕнђене килтĕм? тет.
Ылттăн çуртра ђăп-тулли
Лĕпĕш пек хĕр вĕркĕшет,
Лара-тăра пĕлмесĕр,
Урлă-пирлĕ варкăшаť.
Ăш хĕвел пек ăшăнса,
Тăраç пиђĕ-куçĕсем,
Шур кăлкан пек çап-çутă
Йăлкăшаççĕ çӳçĕсем.
Ахах пĕрђи йевĕрлĕ
Пурин те куç шăрçисем;
Йăл-йăл кулса тăраççĕ
Çемçе тутлă тутисем.
Хăлхисенђи хăлханки
Ылттăн кĕмĕл йарапи;
Тарай тутри йенђĕкĕ
Пур те пурçăн шерепи.
Пӳрнисенђе ђăп-тулли
Мĕрђен куçлă çĕррисем,

Кĕпи арки ђĕнтĕрсем —
Мăкăђ ђеђек тĕррисем.
Вырăнĕсем пурин те —
Пăрса тунă прушин те,
Йăлт-йăлт siксе тăраççĕ,
Тĕрлĕ ђеђек хушшинђе
Сыр кăмпи пек хăпарса
Тăрат тӳшек-çытарĕ,
Пăхсан, мĕлке курăнат
Çут кĕленђе урайĕ.
Уша йупи çумĕнђе
Ĕмĕр сӳнми çуртисем;
Кантăксене пурне те
Карнă шурă ђаршавсем;
Сĕтеллисем çийĕнђе
Ĕмĕр курман йур-варсем;
Хăй тĕллĕнех уçăлса
Хупăнаççĕ алăксам;
Вутăн-хĕвĕн çутăлса
Вĕçеççĕ вĕт кайăксем;
Хĕрсен ђеђен сассипе
Пӳрт купăс пек йанăрат.
Антан кайса Ессепе
Сехĕрленсе çех тăрат.
Хĕрĕсем те тĕлĕнсе
Ессепене пăхаççĕ,
Тĕпелелле ирттерме
Ун валли çул уçаççĕ.
Унтан ăна йăвашшăн,
Çу пек çемçен ађашшăн,

Шăнкăрђ ђĕлхи сассипе,
Шăпђăк йурри сăввипе,
Пур те харăс каласа
Ирт, ирт кунта, ирт! тесе,
Тĕпелеллеирттерсе,
Хăйне уйрăм пӳлĕме,
Пĕр пĕђђенçи хĕр патне
Илсе кĕрсе кайаççĕ.
Унта пырса кĕрсенех,
Пӳлĕм алăк хăй тĕллĕн
Пĕтĕм пӳрте йанратса
Шанкăртатса хупăнаť.
Ессепепе хĕр анђах
Иккĕш тăрса йулаççĕ,
Салам парса пĕр пĕрне
Аллисене параççĕ,
Куçран куçа çаврăнса
Ăшшăн-ăшшăн пăхаççĕ,
Унтан вĕсем иккĕшĕ
Тем-тем тĕслĕ апатсем,
Тĕрлĕ ĕçкĕ-çикĕсем
Пĕрле ĕçсе çийеççĕ.
Ĕçсе çисе тăрансан,
Пĕрне пĕри йуратса,
Ыталаса ђуп туса,
Иккĕш выртса çывраççĕ.
Ак ылттăн çурт тăрринђен
Хĕвел тухаť çĕкленсе,
Хĕвел шевли ӳкнипе
Çутăпала шикленсе,

Леш тĕнҫене кайнă пек
Тĕлĕк курса тĕлленсе,
Сиксе тăрат Ессепе,
Сехĕрленсе, тĕлĕнсе.
Йайхисенҫен вăрансан,
Шур супăҫпе ҫăвăнса,
Шур тутăрпа шăлăнса,
Тĕрлĕ тутлă апатсем
Ĕҫсе ҫисе савăнса,
Икĕ ылттăн тенкелпе
Хире-хирĕҫ ларăҫҫĕ,
Тĕрлĕ- мĕрлĕ сăмахсем
Тин хускатса йарăҫҫĕ.

Хĕр:

Ессепе, ес ăсупа
Тĕнҫене тĕлĕнтеретĕн,
Хăватупа, вăйупа
Ҫĕре кисрентеретĕн.
Кала халĕ ес мана:
Мĕн-мĕн куртăн куҫупа,
Мĕскер-мĕскер уйлатăн
Шухăшупа, пуҫупа.
Йепле килтĕн ес кунта —
Ҫакă пирĕн хĕр ҫуртне,
Ҫут тĕнҫере нихҫан та
Курман, илтмен никам та
Хĕрĕх те пĕр хĕр патне.

Ессепе:

Манăн халĕ ăн пĕтнĕ,
Еп нимĕн те пелместĕп

Те тĕлĕкре, те ђăнах
Тăрап санăн умăнта?
Ăçтан килсе ўкнĕ-ши
Сирĕн пата еп кунта?

Хĕр:

Ку çурт — пирĕн хĕр çурђĕ,
Кунта, кађђа каймасăр,
Вилнĕ хĕрсен ђунĕсем
Ĕмĕр ĕмĕр тăраççĕ.
Çулла хĕвел ăшшинђе
Лĕпĕш пулса вĕçеççĕ,
Мĕн пĕр хитре ђеђексен
Пылĕсене ĕçеççĕ.
Тĕнђере мĕн пуррине
Мĕнле ĕçсем пулнине
Пĕтĕмпеле сисеççĕ.
Çимĕк кунĕ çитсессĕн,
Пурте тухса çўреççĕ,
Ăçта çитнĕ вăл тĕлте
Çĕр шыв илем кўреççĕ.
Еп тĕнђери ђи ђаплă
Асаймăç хĕр пулатăп,
Мĕн пур вилнĕ хĕр ђунне
Патша пулса тăратăп.
Пĕр асаймăç карђăкăн
Есĕ пĕртен пĕр хĕрне
Пит йуратса пурăнан,
Ăна халĕ ху валли
Кађђа илсе йарасшăн.

Хӗр пит сана пырасшӑн
Амӑшӗ те парасшӑн.
Хаљ ес кунта тӑнине
Пӗлсе тӑрат̆ вӑл карђӑк,
Вут ҫиййӗнђи ҫӗлен пек,
Ӑшаланат̆ вӑл саншӑн.
Анђах епӗ унтан та
Хӑватлӑрах асаймӑҫ,
Мана пӗтӗм ҫӗр ҫинђе
Ӗмӗр ӗмӗр асӑнӗҫ,
Мӗскер тӑвас тесен те, —
Пултаратӑп тумашкӑн,
Кайӑк пек те, ҫын пек те
Пӗлеп епӗ пулмашкӑн.
Кӑмӑл турӑм еп халӗ
Сана кађђа пымашкӑн,
Емӗр пӗрле савӑнса,
Патша пулса тӑмашкӑн.
Санӑн мӑшру пуласшӑн,
Турӑм епӗ ку ӗҫе,
Сана хытӑ йуратса,
Ҫавӑ хӗртен кӗвӗҫсе.
Виҫӗ кунтан туййӑра
Тӑвас тесе тӑнӑ ђух,
Есӗ виҫӗ йыттупа,
Урхамахна утланса,
Кайрӑн тухса вӑрмана
Ухатара ҫӳреме.
Акӑ еп ҫав вӑхӑтра
Хура пӗлӗт кӑларса

Аслатипе кěрлесе,
Тăвăл пулса уласа,
Çиçěм çиççе выљаса,
Аçа çапса шартлатса,
Пěтěм çěре ђěтретсе
Йатăм çăмăр ђреслетсе.
Шанкăр уйар çут куна
Илђě тěттěм хулласа.
Урхамахна утланса,
Ес пыратăн шапăрса,
Ылттăн йěнер çийěнђе
Ђăх ђěппи пек хутланса
Темěн те пěр хăтланса.
Çав вăхăтра сан умна
Çакă пўртри пěр хěре
Мулкађ туса йатăм та,
Йыттусене вăл санне
Виççěшне те пěтерђě.
Есě килтен тухнийě
Пайан ěнтě хěрěх кун
Сана халě çухатнă,
Пур çěрте те шыраççě;
Тискер кайăк çинě пуљ,
Тесе питě хăраççě.
Акă пăх-ха кантăкран
Мěн куратăн ес унтан?
Вăхăт çитнě, Ессепе,
Пире кайма хаљ кунтан!
Шур ђаршавне туртаť те
Ессепене пăхтараť.

Пĕр куç уçса хупиђђен,
Тĕнђере мĕн пуррине
Пĕтĕмпеле кăтартаť.
Ессепе пит тĕлĕнет,
Йепле унăн кил-çурђĕ
Инçе те мар, хĕвел пек,
Йăлтăртатса ларнинђен.
Унтан хытă савăнса,
Пит ђаплă туй туса,
Хĕрпе иккĕш пĕрлешсе —
Вуник пуçлă аçтакă
Çĕлен çине йунашар
Умлă-хыçлă утланса
Таврăнаççĕ ђашкăртса,
Вут пек çиçĕм çиçтерсе,
Çил-тăвăл пек вĕçтерсе.
Çав Ессепе йăхĕнђен
Пулнă теççĕ хасретсем*),
Тутар халăх пуççапса
Пурăнакан кĕтретсем**).
Ессепене тутарсем
Ђăваш пулнă вăл теççĕ,
Çакă сăмахсемпеле
Халапсем те пĕтеççĕ.

---

*) Мусуђмансем пуççапса пурăнакан çветтуй муллисем.

**) Хăватсем.

## Выçлăх мĕлкисем.

Ăçта пăхнă, вăл тĕлте
Вырăса çӳрет çын вилли:
Хирсенҫе те, йалта та,—
Мĕн курăпăр-ши тата?
Пиҫĕсенҫе çын тĕс çук,
Пăхма хăрăн çисене,—
Çапах тухса пулĕ-ши
Ку асапсен вĕçсене?
Ех, ырлăхĕ, ырлăхĕ,
Ăçта кайса кĕҫĕ-ши?
Ку хĕн-хурсем, асапсем
Ку çĕр çинҫе пĕтĕ-ши?
Атте-анне курманне
Халĕ епĕр куртăмăр.
Ех, авалхи самани!
Çатмахри пек тăтăмăр.
Куллен кунах çĕр айне
Купипе çын хуратпăр,
Аҫасене урама
Кăлармашкăн хăратпăр.
Ку тĕслĕ те пулĕ мĕн
Тĕнҫе кулли пурăнăç!
Ырлăх тунă ĕçĕсем
Хăçан куçа курăнĕç?
Ҫипер утса пынă ҫух,
Ӳке-ӳке вилеççĕ,
Ал-урине çимешкĕн,
Каса-каса илеççĕ.
Пуса-пуса çийеççĕ

Йыт-кађăка, кушакне,
Нихçан етем курман пуљ
Çĕр çийĕнђе кун пекне?
Хăй çуратнă ађине
Тыта-тыта пусаççĕ;
Вăл ашсене хыпмашкăн,
Йепле çăвар уçаççĕ.
Пўлмисенђи тыррисем
Пĕтнĕ çемĕн пĕтеççĕ;
Арăмсенђен маларах
Арçыннисем ўкеççĕ.
Йăвăç кутсем таçтанах
Шап-шурă курăнаççĕ.
Ку етемсем ĕмĕрте
Мĕн-мĕн кăна курмаççĕ?
Хăшин-хăшин çавăнтах
Çĕр айĕнђе тыррисем,—
Лекĕрт кулса тăраççĕ
Ун пек тырă пуррисем.
Автансен те сасси çук,
Йыттисем те вĕрмеççĕ,
Тем пек ватă çынсем те
Ун пек ĕçе пĕлмеççĕ.
Çĕн тырăђђен ку халăх
Пур те вилсе пĕтĕ-ши?
Йе çапах та пĕр йышши
Çĕнне çитсе ўкĕ-ши?
Вĕçен кайăксем те
Таçта кайса кĕђĕçĕ;
Йе кăрмавуй памасан

Пур те вилсе пĕтĕçĕ.
Пĕтрĕ, куран, пĕтĕмпех
Пĕрне пĕри шеллесси,
Пулмаç, куран, кăсенђен
Пурăнăçа меллесси.
Кăнтăрла та нумайĕш
Хапхисене питреççĕ,
Ђуман сĕтĕрнĕ пекех,
Çын вилли сĕтĕреççĕ.
Хапхи панђе вилсен те,
Кӳртесшĕн мар килсене.
Çапах халăх манĕ-ши
Çак хăрушă кунсене?
Арпа-улăм, йăвăç-курăк
Тиркемеççĕ пĕрне те,
Выçă хырăм тем хыптарĕ
Çиеççĕ тăмне-çĕрне те.
Ех! пурăнма пĕлни те
Питĕ кирлĕ пулаť çав,
Ӳлĕмĕнђен тыр пулсан,
Пурте пĕлĕђђĕç ĕнтĕ.
Пуç йăтмашкăн вăй çитмест,
Ӳсĕр çын пек çӳреççĕ;
Хăшин-пĕрин тыррисем
Çĕр айĕнђе çĕреççĕ.
Çуртне-йĕрне çук хакпа
Йыт çӳппине сутаççĕ,
Пăртак пуртарахĕсем
Ырлăх çине путаççĕ.
Шăмăсене авăртаççĕ

Кӑмакара çунтарса,
Йӑвӑç-курӑк авӑртаççĕ
Тура-тура вакласа.
Ех, пурӑнӑç, пурӑнӑç,
Пулаҫ иккен капла та!
Пуйантарахĕсен те
Кĕскелнĕ çем кĕскелет,
Тем пек хытӑ тӑрсан та,
Куллен кунах иксĕлет.
Кĕлетсене кĕрсенех,
Пӳлмисене пӑхаççĕ:
Сахалланаҫ вĕт! тесе,
Пуçĕсене ухаççĕ.
Йепле пурӑнӑпӑр теçе,
Пупле пупле тухаççĕ,
Вӑхӑҫĕсем малалла
Йухӑм шыв пек йухаççĕ.

---

### Хресҫен шухӑшĕсем.

Ку комунсем çĕр çине
Ӑçтан шӑтса тухрĕçĕ?
Ну, хӑйсем те вӑл ӑса
Йепле кӑна тупрĕçĕ?
Патши, купси, улпутне
Пӑр салатса йаҫĕçĕ,
Çĕрĕсене пĕтĕмпех
Хресҫенсене паҫĕçĕ.
Мĕскер тӑвас тесен те,
Çитсе пыраҫ ӑсĕсем,

Тен хаԃ пĕтĕм тĕнԃипех
Ĕнтĕ вĕсен тусĕсем,
Хăлĕ ĕнтĕ сăмахна
Шăлпа ҫыртса тăмалла,
Мĕскер тăвас тесен те,
Вĕсенԃенех ытмалла.
Анԃах ытма тăрсан та,
Пĕлме кирлĕ ытмашкăн,
Ăс та нумай кирлĕ ҫав
Ку халăха тытмашкăн.
Хăйсем тăвас тенине
Вĕсем ĕнтĕ тăваҫҫĕ,
Ĕмĕр илтмен сăмахсем
Шыра-шыра тупаҫҫĕ.
Таҫти патшалăхсенԃен
Тырă-пулă илеҫҫĕ,
Кунти ваксалсене те
Тырă пит килет теҫҫĕ.
Виҫ-тăват ҫул хушшинԃех
Таҫта-таҫта ҫитрĕҫĕ,
Патшипе ун пуҫлăхсем
Вут сӳннĕ пек пĕтрĕҫĕ
Пулаĭ иккен, пулсан та,
Ҫавăн ԃухлĕ хăват та,
Пĕтĕм ҫĕре илĕҫĕ
Вĕсем хаԃ вăл хăватпа.
Халăх ĕнтĕ ку ĕҫе
Ĕмĕрне те манас ҫук;
Илтменнине илтрĕмĕр,
Курманнине куртăмăр.

Ĕлĕк выҫăх йеверлĕ
Ним пĕлмесĕр тăтăмăр,
Ҫавăнпа та хаҫ ĕпĕр
Ҫакă куна куртăмăр.
Йалан капла пулмĕҫ-ха?
Ырлăхне те тăвĕҫ хаҫ,
Хăйсене мĕн кирлине
Шыра-шыра тупĕҫ-ха?
Тин ҫуралнă аҫа пек
Хаҫ тин шăтса тухрĕҫĕ,
Хăш йенелле пăхсан та,
Шыв йуххи пек йухрĕҫĕ.
Ну, хĕстерҫĕҫ хăйсем те
Ҫысти хаҫă йеверлĕ,
Ҫиллисем вут ҫулăм пĕк,
Вĕсене тӳсме те кирлĕ.
Пĕртте вĕри пулмасан,
Йепле тытăн тĕнҫене,
Ăма ҫиленеҫҫĕ-ха
Вĕсем питĕ тĕнсене?
Ĕнтĕ тĕнĕсем те ҫав
Пурте хăйне мухтаҫҫĕ,
Капла пулсан, вĕсем те
Ӳлĕмĕнҫен тăхтаҫҫĕ.
Вĕсем вĕтĕ ҫармаҫҫĕ
Кĕл тумашкăн кама та,
Тĕнĕ-мĕнĕ пуҫ хĕрлĕ
Пулин пулмин хйамата.
Пурăнăпăр тĕнсĕр те,
Хырăм тутă пулсассăн,

Йёркисене йусаса,
Ыр пурăнăç тусассăн.
Кышламалли пулмасан,
Вăл та нимĕн параймасť;
Выçă виле пуçласан,
Тĕн те тытса ђараймасť.
Турри те çав çавнашкал,
Хăй тĕллĕн ним тăваймасť,
Пĕр хăвăнта пĕтсессĕн,
Вăл та нимĕн тупаймасť.
Комуниссем турра та
Çук теççĕ тет! Ђăнах-ши?
Турă ђăнах пулсассăн,
Уншăн йепле ђăтаť-ши?
Тен ђăнах та çук пуђ çав
Ним те тăваймасť вĕтĕ,
Капла пулсан турри те
Вăрах тăмĕ, ђас пĕтĕ.
Кун пек выçă пулсассăн
Кĕл туни те ахалех,
Унпала пуç хĕниђђен
Пăрахас кĕл тума халех.
Комуниссен вĕт вĕсен
Патши те çук, турри те,
Пире никам пулăшмасť тет
Вĕсен вĕтĕ йурри те.
Вăрçăпала уйласа
Туртса илђĕç вăлаçа,
Карлă Марксă çыруне
Вăрттăн-карттăн вуласа.

Мĕн çитмен-ши патшине,
Çапла вăрçă хускатма,
Хăçан та пулсан килĕ-ши?
Влаçа хăйне илĕ-ши?
Ăна вĕтĕ комунсем
Персе вĕлернĕ теççĕ,
Вилсессĕн те нумайĕш
Çапах ăна кĕтеççĕ.
Çĕрсе тăпра пулнă пуђ
Тен ун ĕнтĕ вилли те,
Хăтармарĕ вилĕмрен
Вăрăм çӳçĕн кĕлли те.
Хăшне пĕрне ап-а-пап!
Сăпса пекех сăхрĕçĕ,
Патшасемпе пуçлăхсен
Пуçсене лăнк! усрĕçĕ.
Халăха мĕн кирлине
Вĕсем лайăх сисрĕçĕ,
Йепле йăвăр пулсан та
Пурĕ пĕрех тӳсрĕçĕ.
Вăрçнă çемĕн нумайрах
Вăйпа хăват пухрĕçĕ,
Пĕтĕм çĕрĕн çиййĕнђе
Ђăн паттăра тухрĕçĕ.
Раççей халăх ĕмĕрех
Çаккăн пекех тăрĕ-ши?
Йалан çапла пулĕ-ши?
Йе ырлăх та курĕ-ши?
Ĕмĕтсĕр патша ку вăрçă
Мĕскер тума турĕ-ши?

Хăй ăçта кайса кĕђĕ-ши?
Ĕмĕрех çапла петĕ-ши?
Пĕтин ĕнтĕ пĕттĕрех,
Ырă кун çул памарĕ,
Ĕç халăхне малалла
Ним ђухлĕ те йамарĕ.
Халăх йунне, куççулне
Çырма пекех йухтарђĕ,
Вăйĕсене сĕлĕх пек
Пуршуйсенђен сăхтарђĕ.
Пĕрре çĕннĕ ĕç халăх
Тĕнђипеле çĕнтĕрех,
Пур çĕр çинђи ирĕке
Хăй аллине илтĕрех,
Пĕр ахалех мар пуљ халљ
Комунсен ку ĕçĕсем
Тен çавăнсăр пĕтмес пуљ
Ку хăрушă вăрçăсем.

---

## Ĕçкĕ çикĕсем.

Халĕ кăçал йалсенђе
Йепле ĕçкĕ ĕçеççĕ,
Йĕкĕр-йĕкĕр çыхланса,
Ђĕрне вĕççĕн вĕçеççĕ.
Урам тăрăх кĕр-кĕр кĕр!
Тăпăртатса çўреççĕ,
Купăсĕпе, йуррипе
Пĕтĕм çĕре çĕмреççĕ.
Аллисемпе ђат-ђат-ђат!
Çупа çупа ташлаççĕ,

Ĕнсе панђен лăп-лăп-лăп
Пĕрне пĕри ађашлаççĕ.
Сĕтеллисем çийĕнђе
Тĕрлĕ ĕçкĕ-çикĕсем,
Çук пулсассăн, пулмĕђђĕ,
Пуртан ĕçеççĕ вĕсем.
Тăрна майсем ђас-ђасах
Йĕкĕр йĕкĕр лараççĕ,
Кама мĕн ђухлĕ кирлĕ,
Çавăн ђухлĕ параççĕ.
Тăрăс-тăрăс! сикеççĕ,
Йепле кăна ђăтаççĕ,
Хăшĕ-хăшĕ ханшине
Ђыхна-ђыхна çăтаççĕ.
Хĕлĕн-çăвĕн ĕçле те,
Ăма ĕçес мар халĕ?
Кăна ĕççе йарсассăн,
Тата тепре пар халĕ!
Вилсен мулне шăтăка
Никам илсе кĕни çук,
Кленђе çинђи пулмасан,
Ĕçкĕ илемĕ килни çук.
Ђухăн çын вăл нихăçан та
Çынпа пĕрле йерелмест,
Йĕркелесе çўрин те,
Сĕтел ăшне кĕреймест.
Хăш-хăш ђухне ăна та
Çапах хĕсеп тăваççĕ,
Алăк панђен вĕсем те
Сĕтел патне шăваççĕ.

Пур-и ҫук-и, тиркев ҫук,
Тӑван пулсан ҭӗнеҫҫӗ,
Пырса кӗрсен, ҫукне те:
Ан кил кунта! темеҫҫӗ.
Пуйан-и вӑл ҭухӑн-и,
Ҫын тусассӑн, тӑвасшӑн,
Ҫынсем йепле тӑраҫҫӗ,
Вӑл та ҫапла тӑрасшӑн.
Ах ӗнтӗ! пӑх ӗнтӗ!
Курка тӗпне кур ӗнтӗ!
Епӗ йепле, ес ҫапла,
Вӗлт ҫавӑрса хур ӗнтӗ?
Ҭӗннӗ ҫӗре килтӗмӗр,
Кирлӗ таран илтӗмӗр,
Кунта капла пуласса,
Епӗр килтех пӗлтӗмӗр.
Кӗрӗс! кӗрӗс! тапар-и?
Урай кашти хуҫар-и?
Пур тӑвансем пӗрле ҭух,
Кӑмӑлсене уҫар-и?
Айалти те улаҭа
Ҫийелти те улаҭа,
Пӗр-ик ҭеркке парсассӑн,
Пирӗн кӑмӑл ҫийалта.
Тӑпӑр-тӑпӑр тӑпӑрҭӑк,
Урай хӑмми сӑпӑрҭӑк,
Йӑкӑш-йӑкӑш шӑвар-и?
Пӳрт урайне ҫӑвар-и?
Какликкур калина
Курка парса ӗҫетӗп,

Пăхăр-ха ман çийе,
Акă йепле вĕçегĕп!
Пирĕн пата хăнана пыр
Алапука çунипе,
Алапука çунипе
Ђĕмпĕр кĕсри тихипе.
Пирĕн тĕле пĕлмесен,
Анат касра кĕтесре,
Анат касра кĕтесре,
Улма йăвăç кутĕнђе.
Çулçи çупаť, улми ташлаť,
Хĕртсе хĕвел пăхнă ђух.
Ђĕлхем йурлаť, куççуђ йухаť,
Кăмăл хуçăлса килнĕ ђух.
Акрăм йĕтĕн ăнмарĕ,
Пуруснине тулмарĕ,
Хам çуралнă çĕр-шывра
Ырлăх курса пулмарĕ.
Ансăр çĕре каçма хыврăм
Хăва çулçи пур çĕре,
Çунат пулсан, вĕççе ўкĕттĕм
Ăçта тăван пур çĕре.
Халĕ тата леш касра
Йепле хытă кĕрлеççĕ,
Хăшне пĕрне аларан
Тыта-тыта кĕртеççĕ,
Аллисенђи тутрисем
Вĕлтĕр-вĕлтĕр вĕçеççĕ,
Сăрипеле ханшине
Ђăпăрт-ђăпăрт ĕçеççĕ.

Купӑҫҫисем умӗнђе
Кӗрӗс-кӗрӗс сикеҫҫӗ,
Ырӑ йашки-ҫӑкрине
Ҫи, тӑванҫӑм, ҫи! теҫҫӗ.
Ӗҫни-ҫини ҫех йулаӣ
Сывлӑх пур ђухне, теҫҫӗ.
Ђӑвӑл-ђӑвӑл ђавка пек
Пӗр май ђӑвӑлтатаҫҫӗ,
Хӑшне ҫӗре ӳкерсе,
Пӑђӑр тӗкне татаҫҫӗ.
Алла-аллӑн тытӑнса
Пӗрне пӗри туртаҫҫӗ
Хӑшӗ пӗри: ах! та, ах!
Лӑк-лак! туса вырттаҫҫӗ.
Ним вырӑнне хумаҫҫӗ,
Пулсан, тырри пуллине,
Ассене те илмеҫҫӗ
Выҫӑ тӑрса йулнине.
Хӑшин пуҫне каҫӑртса,
Ҫӑварӗнђен йараҫҫӗ,
Хӑшне: ан тыт ҫын ҫӳҫне,
Йар аллӑна, йар! теҫҫӗ.
Тух, тух, кунтан тух! тесе,
Пӗрне пӗри тӗртеҫҫӗ,
Ӑҫта иртсе кайатӑн:
Кӗр, кӗр кунта, кӗр! теҫҫӗ.
Темӗн ђухлӗ тыр-пулӑ
Ӗҫкӗ пирки ҫӗртеҫҫӗ,
Хӑшӗ ађи-пӑђине
Кунӗн ҫӗрӗн йӗртеҫҫӗ.

## Çĕрпӳ пасарĕ.

Ех, Çĕрпĕвин пасарĕ!
Мĕн мĕн кăна çук унта?
Кам каласа пĕтерес
Унта мĕн мĕн пуррине.
Ăçта пăхнă, вăл тĕлте
Темĕн те пĕр сутаççĕ,
Сутуçисем хăвăртах
Укçа çине путаççĕ.
Унта тырри-пуллисем,
Темĕн те пĕр йапали,
Çуртне-йĕрне, ут тумне
Йусамалли, тумалли.
Ăлав-ăлав тăварĕ,
Вакки-твекки таварĕ,
Мĕскер кирлĕ пулсан та,
Парат Çĕрпӳ пасарĕ.
Хăшĕ кĕлти кĕлтипе
Йĕке йăтса çӳреççĕ,
Хăшĕ ђарăлтаттарса
Пусма тавар ђĕреççĕ.
Унта ђĕлĕш-ђалăшĕ,
Атă-пушмак, калушĕ,
Сăран атă, кăççатă,
Вată-вĕтĕ пурте пур.
Тата выљăх-ђĕрлĕхĕ
Ђăххи-ђĕппи, вут-шанки,
Çĕр улмийĕ, пан-улми
Купăстисем, хăйарсем

Ларса кайнӑ пӗр майран
Таçта çитиӗҫен,
Вӗçӗ-хӗрри таç тӗлтре,
Çӳре çӳре ывӑнӑн.
Ҫӑпти, пушӑт, çӑпати,
Ҫӗрес ҫавси, шӑпӑрӗ,
Ӳраписем, çунисем,
Алси, ҫӑлхи, милкисем,
Темӗн те пӗр ӗлкисем,
Каласа та пӗтес çук.
Ӳрпи, тулли, сӗллисем,
Ырашӗсем, вирӗсем,
Йӗтӗн-кантӑр вӑррисем,
Усалӗсем, ыррисем.
Вӑхӑҫӗпе çырлисем,
Çависемпе çурлисем,
Лапаткисем, хӑйрисем,
Тӗрлӗ-тӗрлӗ мӑйрисем,
Вӑрмантисем, уйрисем,
Вырӑсӗсем, майрисем.
Сунталӗсем, ункисем,
Йӑмӑкӗсем, инкисем,
Кӗнекисем, мӗлкисем,
Ҫӑнкӑр-ҫанкӑр тенкисем.
Аппелççинӗ, лимунӗ,
Кӑвасӗсем, сӑрисем,
Писевӗсем, сӑрӗсем,
Улмуççисем, хырӑсем,
Аккӑш ушкӑн йевӗрлӗ
Ушкӑн-ушкӑн хӗрӗсем.

Хăмат çиппи, шел çиппи,
Йăлтăр йалтăр шăрçисем
Тимĕр-тăмăр хурçисем!..
Мĕн йапала пулсан та,
Пурин те пур хуçисем,
Улталасси, вăлтасси,
Кунĕпеле ĕçĕсем.
Касмăкĕсем, ырçисем,
Йасмăкĕсем, пăрçисем,
Кункăрисем, арђисем,
Пуйанĕсем, тарçисем.
Хăмăђĕсем, сӳсменсем,
Йĕнерђĕксем, ђĕнĕсем,
Ђейникĕсем, ђейĕсем,
Тăманисем, ђейисем.
Пĕренисем, хăмисем,
Салађĕсем, хăмлисем,
Тăпађђисем, вуллисем,
Алçыххисем, суллисем.
Çĕмĕрт хăва хуллисем,
Кантăрĕсем, пусисем,
Тантăшĕсем, тусĕсем.
Аçамĕсем, çăмĕсем,
Тĕрлĕ лапка çимисем.
Çĕррисемпе тӳммисем,
Сăсарĕсем, тиллисем,
Турахупсем, турисем,
Кушакĕсем, виллисем.
Лахханĕсем, ларĕсем,
Тӳшек, минтер-çытарсем,.

Çăкăр-тăвар, пĕлĕмĕ,
Тем тем тĕслĕ ђĕлĕмĕ.
Шĕшлийĕсем, вĕшлисем,
Купăсĕсем, кĕслисем,
Лашисемпе кĕрисем,
Темĕн те пĕр тĕслисем.
Куçкĕскийĕ, куçлăхĕ,
Темĕн ђухлĕ пуçлăхĕ,
Ашăкĕсем, шаккисем,
Атмисемпе çатмисем.
Ирхи куна каçђенех
Пăтă пекех çын вĕрет,
Хурт уйăрнă вăхăт пек
Пĕр май халăх вĕркĕшет.
Сутуçисем тирсене
Хўрисенђен сĕтреççĕ,
Пĕр пĕринђен ăмăртса
Йăпăр-йапăр çўреççĕ.
Хĕлле тумтир çўхисем
Тăрăлтатса ђĕтреççĕ,
— Ай-йай! пайан пит сивĕ,
Тўсме хаљ çук вĕт! теççĕ.
Укçисене сумашкăн
Ал кăларма хăраççĕ,
— Ме-ха, суса пар! тесе,
Çынсен умне хураççĕ,
Ех, Çĕрпĕвин пасарĕ,
Пурĕ пĕрех пыраççĕ,
Пурăнăça кирлине
Пурте унта шыраççĕ.

Çӳремĕђђĕç ђĕтресе,
Нуши тĕртет хыçĕнђен,
Ĕмĕр ĕмĕр килекен
Мелĕ çапла çут тĕнђен.
Ех, пурăнăç, пурăнăç,
Теминçене пăрăнăç,
Хăшне тилĕ тăлăпĕ,
Хăшне алăк хăлăпĕ.
Унта кĕпи-йĕмне те
Йăта-йăта çӳреççĕ,
Хăшĕ-хăшĕ сыснине
Нăрик-нăрик сĕтреççĕ.
Тата савăт-сарисем,
Уçлам çăвĕ, сар çăвĕ,
Сĕт-турăхĕ, ђăкăђĕ,
Ђăххисемпе çмартисем,
Хăва хулли арђисем.
Уңта ашсем, какайсем,
Хĕр-упăрас акайсем
Карђă-кĕрђĕ, мăн çынсем,
Çĕнĕ çынсем, кив çынсем.
Пуракĕсем, турисем,
Вĕт шак сысна çурисем,
Тир тĕрĕсем, ђирĕсем,
Ылттăн кĕмĕл çĕрĕсем.
Çарăкĕсем, кăшмансем,
Кавăнĕсем, тынĕсем,
Ђĕрес ђĕрес лараççĕ
Темĕн ђухлĕ пылĕсем.
Тĕм ђул ђӳлмек ђавсисем

Тилкеписем, пушисем,
Тухйа-хушпу тӑхӑннӑ
Йӑлтӑр йалтӑр пуçӗсем.
Кӑвакалсем, хурӗсем,
Иккунӑсем, турӑсем,
Сарӑсемпе хӳресем,
Тем те куран çӳресен.
Унта ҫӑпти, мунҫали,
Çыххипеле кунҫали,
Кунтисемпе кӑмписем,
Тӑхӑл-йӑхӑл кулнисем,
Темӗн те пӗр пуплени,
Пӗрне пӗри ӳктлени,
Вӑрттӑн-карттӑ итлени,
Кирлӗ маршӑн питлени.
Тупӑшӗсем, сийенсем,
Ҫухӑнӗсем, пуйансем,
Пӑсарисем, йусӗсем,
Мулкаçӗсем, куйансем.
Çамрӑкӗсем çав тӗрлӗ,
Пӗлӗт йухнӑ йеверлӗ,
Урлӑ-пирлӗ йухаççӗ,
Хире хирӗç çаврӑнса,
Йӑл-йӑл кулса пӑхаççӗ.
Ҫӑвӑл-ҫӑвӑл ҫӗкеç пек,
Пӗр май ҫӑвӑлтатаççӗ,
Хӑшӗ хӗвел çавнӑшӗ,
Хӑшӗ мӑйӑр кӑтаççӗ.
Çӗмӗрт ҫеҫек йеверлӗ
Куçа шартса йараççӗ,

Ывăçсемпе пĕр пĕрне
Темĕн те пĕр параççĕ.
Унта йăтса çӳреççĕ
Темĕн те пĕр кив кирĕк,
Çĕнĕ кĕрĕк, кив кирĕк,
Пуремеђђи, куклийĕ.
Улми пыл пек тутлийĕ.
Меек! меек! кăçкăраççĕ
Кађакисем, такисем,
Пăхсан мĕлке курăнаť
Лапаткисем акисем.
Шăрик-шарик шăхлиђĕ
Кăçкăртаççĕ ађисем,
Ђăкăрт ђăкăрт тăваççĕ
Урисенђе аттисем,
Хĕрарăмсен тăхăннă
Хут купăс пек картлисем.
Сухи, плукĕ, сӳрисем,
Шăртсем, ťыха хӳрисем,
Хурт сырнă пек кĕрлеççĕ
Пасарăн ђăн хрĕвĕсем,
Пĕрне пĕри тулакан
Пуршуйсенĕн сĕрĕмсем.
Унта укçа пулсассăн,
Илем тесен, тем те пур,
Пуканĕсем, сĕтелсем,
Улăмĕсем, сенĕксем,
Калпакĕсем, çĕлĕксем,
Сурпанĕсем, масмаксем,
Тĕкĕ, çӳçĕ, мамăксем.

Сăмаварĕ, хунарĕ,
Тем ђуљ сутуç тутарĕ,
Ђăваш халăх укçине
Хусаналла шутарĕ.
Тата çĕтĕк-çатăкĕ,
Темĕн те пĕр татăкĕ,
Пир-авăрĕ, капăрĕ,
Пуртти, çĕçси, пакăрĕ.
Пупсем, măксем, утисем
Çӳхе, тутлă тутисем,
Вут пек çунса тăракан
Пурçынĕсем, укисем.
Ђăнкăр-ђанкăр тенкисем,
Çутă кĕмĕл укçисем,
Мул пулассăн, пурте пур,
Ђухăнсенђе çук вĕсем.
Кутне-пуçне сиктерсе
Кĕçенеççĕ ăйрисем
Кĕлтен-кĕлтен выртаççĕ
Çыххипеле хуйрисем
Ĕни те пур, вăкри те,
Йĕтĕн çиппи хутри те,
Вут çулăм пек йалкăшса
Курăнакан тутри те.
Йăшăлтатаť кăткă пек
Кунĕпеле халăхĕ,
Авал пĕтĕм тĕнђене
Хумхантарнă хун йăхĕ,
Пухăннă ђух, пухăнаť,
Ђисти пĕлĕт йухнă пек,

Хăш çул çине пăхсан та,
Вĕçĕ хĕрри пĕртте çук.
Саланнă ђух, çавнашкал
Пăр кайнă пек, хускалаť
Сутуçи те лапкинђе
Урлă-пирлĕ кускалаť,
Хăш йенелле пăхсан та
Татти-сыппи курăнмасť,
Пыраť пăр пек кĕрлесе
Никамран та пăрăнмасť.
Тĕпĕр-тĕпĕр ут ури
Пĕр пĕринђен иртеççĕ,
Иртмесессĕн хуçисем
Пушăпала хĕртеççĕ.
Ури утан, куç куран,
Пурте пынă пасара,
Хĕсĕнсе те тухас çук
Çын хушшинђен хăш ђухне.
Сырса илет кăткă пек
Пасар Çавал улăхне
Çул çиййĕнђе çул парса
Пĕтерес çук халăхне.
Савăлпала хĕснĕ пек,
Тĕртсессĕн те, сирĕлмест,
Каçалана каймасăр
Кунĕпеле сўрĕлмест.
Хура ури, шур ури,
Хура пуçĕ, шур пуçĕ,
Хурт уйăрнă вăхăт пек,
Кĕрлет вара кунĕпе

Вĕри йунлă ђунĕпе.
Саваť Çĕрпӳ пасарне
Пĕтем ђунпе, ђĕрипе,
Ыран пасар тесессĕн
Çывăрмасť пуђ çĕрĕпе.
Пурлă-çуклă мулĕпе
Çӳрет унта васкаса
Пыраť Çĕрпӳ пасарне,
Ђасран ђасах хашкаса.
Пурте, мĕнте пулсасăн,
Суту-илӳ тăвасшăн,
Ирттереççĕ пасарне
Тӳлек кун пек йăвашшăн,
Тем пысăккĕш савăнăç
Пулаť пасар ђăвашшăн.
  Ех, Çĕрпĕвин пасарĕ,
  Мĕн мĕн кăна çук унта,
  Кам каласа пĕтерес
  Унта мĕн-мĕн пуррине.

---

**Кивĕ Ӳсел ака туйĕ** *).

  Çуркуннехи ăш хĕвел
  Сиксе тухрĕ хĕрелсе,
  Йалтăртатса йалкăшса,

---

*) Кивĕ Ӳсел (Ђистай уйесĕ) пысăк ђăваш йалĕ. Вăл йал акатуйĕ тумасăр, Çĕнĕ Ӳсел тутарĕсем акатуй тумаççĕ. Авалтан йулнă йăлапа, малтан Кивĕ Ӳсел ђăвашсем тумалла теççĕ. Кивĕ Ӳселсем икĕ çулта пĕр акатуй тăваççĕ. Çĕнĕ Ӳсел тутарĕсем кашни çул тăваççĕ.

Тата Çĕнĕ Ӳселĕнђе ђăн вăйлă тутар ратнисем хăйсене Мăрса ăрăвĕнђен пулнă теççĕ. Мăрса мĕнле çын пулнă вăл тесен, асаттесем мăрсасене ђăваш улпуђĕсем пулнă тесе калађђĕç теççĕ.

Çӳлелле май çӗкленсе.
Çут çанталӑк çап çутӑ
Йӑлтлатса çех çутӑлҫӗ,
Тӗттӗм таçта çӗр хыçне
Тарса кӗрсе çухалҫӗ.
Шӑнкӑрҫҫисем шӑхӑртса
Çунат çапса йурлаççӗ,
Тӑрри саспе çут тӗнҫе
Ҫӑрӑлтатса çех тӑрать.
Кӑтик-кӑтик ҫӑх сасси —
Çмарта тӑвать, савӑнать,
Ун сассипе автанӗ
Мӑйне тӑсса авӑтать.
Урам тулли хӗрарӑм
Урлӑ-пирлӗ ҫупкалать,
Путек сурӑх савӑнса
Йӑлтти-йалтти сиккелет.
Аҫи-пӑҫи вӗсене
Хирелле май хӑвалать,
Хӑратасшӑн пушипе
Шӑртти-шартти çапкалать.
Хӑпарнӑçем хӑпарать
Хӗрӳ хӗвел çӳлелле,
Кулса тӑнӑ пӗк пӑхать
Кивӗ Ӳсел çинелле.
Ак çамрӑксем тухаççӗ
Тутӑр-сурпан пуçтарма,
Çӗнӗ çынсен арҫипе
Çӳпçисене тустарма.
Урам тулли ушкӑнпа

Кĕпĕрленсе çӳреççĕ,
Пуйантарахсем патне
Йĕркипеле кĕреççĕ.
Хăшĕ ҫухăн пулсан та
Паратăп, тет, халăхшăн
Хăш пуйанĕ, хыт пăрça,
Тăрат вăрçса харкашса,
Парасшăн мар халăхшăн
Пĕр-ик аршăн пирне те,
Вăл çынăнне выҫăх пек
Сӳсе илĕҫҫĕ тирне те,
Ик çулта пĕр акатуй
Йепле тăвас мар халĕ?
Епĕр ăна тумасан,
Йал пуçлăхĕ тем калĕ?
Ак, акатуй хатĕрсем
Кирлĕ таран пуçтарҫĕç,
Лашасене сăнасшăн
Пĕр ик виç хут кустарҫĕç.
Хăш-хăш кӳршĕ йалсене
Акатуйне ҫĕнҫĕçĕ,
Йарминккене килнĕ пек
Кив Ӳселне килеççĕ.
Урамсене ҫăп тулли
Ушкăн-ушкăн çӳреççĕ,
Хăшне-хăшне алăран
Тыта-тыта кĕреççĕ.
Ҫупкăн лашсем ташласа *)
Пуçĕсене ухаççĕ,

*) Акатуй ҫупакан лайăх лашасем

Вăхăт-вăхăт пăрăнса
Хир йенелле пăхаççĕ.
Хӳрисене пурне те
Хутла-хутла тӳленĕ,
Ђупнă ђухне лашине
Нн кансĕрлетĕр тенĕ.
Çийĕсенђе ађисем
Çилхисенђен тытаççĕ,
Ђĕн йĕвенĕн ђĕлпĕрне
Кăртти-картти туртаççĕ.
Акă халăх тытăнать
Хир йенелле йухмашкăн,
Такăр çерем çинелле
Йал хыçнелле тухмашкăн.
Ват карђăксем сăрапа,
Тĕрлĕ апат çимĕçпе
Хирти хапха патĕнђе,
Йал пуçлăхне асăнса,
Кив йăлапа хываççĕ;
Кив Ӳселшĕн кĕл туса
Ырлăх сывлăх ыйтаççĕ.
Тырра-пулла тутлăх пар!
Йала-йыша канлĕх пар!
Вут кăвартан, ђир ђĕртен
Сыхла йал-йышне, теççĕ.
Унтан ђăн ђухăн çынна
Уншăн парне параççĕ...
Кив Ӳселсем акатуй
Тин хускатса йараççĕ.
Минçе лаша кайнине

Тĕрĕслесе сăваççĕ,
Вăрăм шертĕ тăррине
Сурпансене çыхаççĕ.
Тăват-пилĕк çухрăма
Ăсатаççĕ лашсене,
Тата тепĕр çулпала
Ђуптараççĕ ађсене.
Тата хăйне пĕр çулпа
Мăн çыннисем ђупаççĕ,
Хуса çитсе пĕр-пĕрне
Малтан мала тухаççĕ.
Халăх вĕрет кăткă пек
Кам иртнине пĕлесшĕн,
Ђупакансем ђунтанах
Лайăх тутăр илесшĕн.
Малтисене ђăн лайăх
Тутрисене параççĕ,
Вĕсем ăна мăй тавра
Çыхса çакса йараççĕ.
Акă çавă вăхăтра
Лашсем киле пуçлаççĕ,
Каллех хура ђăн малта —
Ваçтрук Илйин вăл, теççĕ!
Мулкађ пекех вĕлт те вĕлт
Ыткăнаççĕ йалалла,
Вĕççе килнĕ йевĕрлĕ
Сирпĕнеççĕ малалла.
Ваçтрук Илйи ђăнах та
Питĕ пуйан пурăнђĕ,
Ашшĕ-амăш мулĕпе

Улнут пекех курăнђĕ.
Пуртан çука йулсассăн
Çĕрпе тан пек туйăнђĕ,
Тӳсеймерĕ хурлăха
Пăйавпала пăвăнђĕ.
Çунатлă пек çулпала
Лашсем килсе çитрĕçĕ,
Малтисене мăйсенђен
Сурпансене çыхрăçĕ.
Савăннипе лашисем
Пуçĕсене ухаççĕ,
Халăхĕсем халланса
Вĕсем çине пăхаççĕ.
Унтан халăх ункă пек
Карталанса çаврăнђĕ,
Ђăн варрине ĕшне пек
Уçă вырăн хăварђĕ.
Вăйлă çынсем ђăн мала
Туха-туха ларђĕçĕ,
Куçран куçа пĕр-пĕрне
Пăха-пăха илђĕçĕ.
Хăшĕ сурпан тутрисем
Вăркăштарса çӳреççĕ,
Хăшĕ халăх варрине
Кĕрешмешкĕн кĕреççĕ.
Ак кĕрешу хускалат
Тăват пилĕк вырăнран,
Йара-йара тытаççĕ
Пĕрне-пĕри çурăмран.
Кĕрĕс-кĕрĕс пĕр-пĕрне

Çĕкле-çĕкле çапаççĕ,
Паттăрĕсен мăйсене
Шурă сурпан çакаççĕ.
Кĕрешĕве пĕтерсен
Тытăнаççĕ сикмешкĕн,
Çунатлă пек ыткăнса
Кĕрĕслетсе ўкмешкĕн.
Кам ђăн инçе сикнине
Татах сурпан параççĕ.
Ака туйне салатса
Килĕсене кайаççĕ.

## Ваçанкка.

(1915-мĕш çулта çырнă).

Кив Тимушкел йалĕнђе
Пĕр Ваçанкка пуйан пур.
Кирек ăçта пырсан та
Ун умĕнђе пур те пур.
Шăрттанĕ те, çăвĕ те
Ун нихçан та татăлмасť,
Çавăнпа та Ваçанкка
Пит хăвăртах ватăлмасť.
Нумайĕшĕ ун патне
Ерех ђиксех пыраççĕ,
Пўртне пырса кĕрсенех
Сĕтел çине хураççĕ.
Таçти-таçти ыр çынсем
Ăна пĕлсе тăраççĕ
Пĕтĕм Ђистай уйеспех
Пуйан йатне сараççĕ.

Вылăх-ђĕрлĕх çурт тулли,
Ик анкарти тыр пулли,
Ăçта çӳресессĕн те
Пулас çук вăл çын кулли.
Ун акнă та, вырнă та,
Пуçтарнă та, çапнă та.
Тавра йалта пур çынтан,
Вăл пуйан та, ђаплă та.
Тем ђул укçи панккăра
Ӳссе выртӑт хăй тĕллĕн,
Йĕпле халĕ Ваçанкка
Пуйса кайнă вăл тĕрлĕн.
Хăш-хăш улпут çĕрсем те
Ун кăсйине кĕреççĕ,
Хăшĕ ăна йăлăнса
Куççулпелех йĕреççĕ.
Хĕрĕх аллă çухрăмран
Ђул турттарса çурт тăвӑт.
Ăçтан кăна тухӑт пуђ
Ун çав тĕрлĕ вăй-хăват?
Çил арманĕ çилпеле,
Шыв арманĕ шывпала,
Çĕрĕн кунĕн кĕрлеççĕ,
Уншăн мĕн пур вăйпала;
Ваçанккашăн çын çех мар
Çилпе шыв та ĕçлеççĕ,
Çавăнпа та çав ăна
Пур те лайăх пĕлеççĕ.
Пур йĕнђен те ырлăхсем
Шыв пек йухса килеççĕ.

Улпутсем те хăш ђухне
Унтан кивçен илеççĕ.
Питĕ хытă пулăшаť
Аптăранă çынсене —
Сĕлĕх пекех сăхаť вăл
Ђухăнсенĕн йунсене.
Ĕçет хырăм кўпиђђен
Панă ђухне ĕçкине,
Илет кăмăл тулиђђен
Усламĕпе укçине.
Вăхăтĕнђе памасан
Ђасах сута ђĕнтерет,
Муллă çынпа ан тавлаш
Вăл сана ђас çĕнтерет.
Ун сĕтелли çиййĕнђе
Йашка çăкăр татăлмасť,
Кама çитерсессĕн те
Ун нимĕн те катăлмасť.
Ĕçкĕпеле нихçан та
Вăл хăй ăсне çухатмасť,
Ытти пуйан çынсем пек
Вĕçкĕнленме йуратмасť.
Çынпа вăрçса тулашса
Паттăрланса çўремест,
Ĕçлет ĕçне йăвашшăн
Пуйнăçемĕн пуйасшăн.
Вăл хĕрхенет çуксене —
Тем ђул параť укçине,
Илме вăхăт çитсессĕн
Тин пустараť вут çине.

## Çуркунне.

Хĕллехи вăрăм кунсем кĕскелсе килеççĕ,
Кун вăрăмланнăçемĕн вăрăмланса килет.
Хĕвел хăпарнăçемĕн çӳлелле хăпарать,
Çĕр çаврăннăçемĕн хĕвел айнелле кĕрет.
Сивĕ тинĕс пек сивĕ сывлăш сывласа,
Пирĕн тăван çĕр-шыва хупласа тăракан
Усал хăрушă хайар сивĕпе, йурпа пăр,
Çуркуннехи хĕвел хĕрĕвĕнђен хăраса,
Айне вут хунă пек шăраннăçем шăранать.
Мĕн пур çырма çатрасем тарăн варсем тăрăх,
Хурлăхлă хайар сассипе йĕрсе макăрса,
Шавласа кĕрлесе сивĕ куççулне йухтарать.
Улăхсенђи кӳлсенђи тăрна куç пек тăп-тăрă,
Кĕмĕл пек çутăлса тăракан шывсем çинђе,
Çуркуннехи ђап.лă хĕвел шевли йăлтăртатса,
Кăн-кăвак кăвакарса курăнса тăракан
Çӳлти çут çанталăкри сывлăш витĕр,
Симĕсĕн-кăвакăн, вутăн-хĕмĕн ураланса,
Йăрăм-йăрăм вĕлтĕртетсе, пурçăн йăлтăркки пек,
Йăл-йăл курăнса, куç çутине çисе тăрать.
Ăнсăртран кӳлĕ хĕррине пырса пăхсассăн,
Кӳлĕ ăшне те хĕвел шевли кĕрсе кайнă.
Пăхма куç вăйĕ çитместь, шыва вут хыпнă пек,
Кӳлĕри шевле çӳлелле хăйĕн амăшĕ
Хĕвел патне çитиђђенех, вĕлтлетсе тăрать
Кӳлĕ тĕпĕнђе тата, хăйне тепĕр тĕнђе,
Унта татах урăх çут çанталăк курăнать.
Кӳлĕ хĕрринђе сиккелесе çӳрекен ађа-пăђасем

Кӳлӗ тӗпӗнђе те сиккелесе çӳреççӗ.
Сывлăшра йухса çӳрекен хура пӗлӗтсем,
Кӳлӗре шыв тӗпӗнђе те йухса çӳреççӗ
—Пысăк айăп туса тӗрмене кӗнӗ çын пек.
Улт-çиђ уйăх хушши алăра тыткăнра,
Хупăнса тăнă тӗрлӗрен выђăх-ђӗрлӗхсем,
Улăхсене саланса йур айӗнђен тухнă,
Çурхи шыв çуса тасатнă кив курăксемпе,
Тин шăтса тухакан сухан пек йем йешӗл
Симӗс пурçăн пек симӗс курăк тăррисене,
Шăтăрт та шăтăрт татса тăрăс-тăрăс сиксе,
Уçă çӗрте кутсене пуçсене сиктерсе,
Ирӗкре савăнса выђаса курăк çисе,
Пӗрне-пӗри хăваласа тӗпӗртетсе çӳреççӗ.
—Çӳлте те, çӗрте те, пур çӗрте те тăррипе
Ытти кайăксем йӯрлани, ђăрик те ђăрик
Ђăрăлтатни, ђӗвӗлтетни, ђăр-ђăр-ђăр... туни,
Тӗнђери ђăн ђаплă мусăк пӗк туйăнса,
Пӗтӗм çут çанталăка йанратса тăрать.
—Хуралтă тăррисемпе йăвисем çийӗсенђе,
Шăнкăрђăсем пӗтӗм вăйран тăрăшса,
Пӗсехисене касăртса, çунађӗсене çапса,
Сарă çу пек сап-сарă курăнса тăракан
Çăварӗсене кара-кара хупса шăхăртса,
Шакăлтаттарса, шăнкăртаттарса йурласа,
Ђӗлхе калама пӗлес çук илемлӗ сăввисемпе
Ытарма çук, çав тӗрлӗ шăрантараççӗ.
Çавăнпа вӗсене ђăваш ађи-пăђисем,
Хăшӗ хăвăл йăвăçпа, хăшӗ хăмасанпала,
Йури йăвасем туса, шертӗ тăрне лартса,

Ларса йурлама йăвăç турађĕсем çыхса,
Тăванĕсене кĕтнĕ пек кĕтсе илеççĕ.
—Сивĕрен хăраса, хĕлĕпе выçăлă-тутăлă,
Тĕпсакайсенђе çутă курмасăр пурăннă
Хурт хăмăрсем те, хĕвел ăшшине сиссе,
Çӳçе кăђăкисене пĕлĕт пек сырса илсе
Çуркуннен тутлă сĕткенне ĕмсе вăй илсе,
Нăйăлтатма, сĕрлеме, кĕрлеме тытăннă.
Çӳлтен кайăк хурсемпе кайăк кăвакалсем
Кăйик те кăйик кăкăлтатса, карталанса,
Вăрăм мăйлă тăрнасемпе шурă аккăшсем,
Пысăк шывсем, улăхсем, уллах çĕрсем пăхса
Пĕлĕт пек, пĕлĕт пек карталанса иртеççĕ.
—Пулăллă йухăм шыв хĕррисенђи хуласемпе
Йалсенђи, хресђенсемпе ĕç çыннисем,
Шыв пăтранђăк вăхăтра, йепле те пулсан
Пулă тытса йуласђĕ тесе,
Атмасем йăтса, кушилсем çакса васкаса,
Çăмарта тăвас ђăхă пек ђупкалаççĕ.
Çавăнтах хашĕ шăмпăр шампăр шăмпăртаттарса,
Атмине йăлт йалт! тутарса, пăркалантарса,
Йăлтăр-йалтăр пулăсем çавăрса кăларат.
Пулă пуçтарма пынă вĕт-шак ађи-пăђисем,
Пылђăклă йĕп-йĕпе ђăлхи çăпатисемпе,
Ђăпăрт, ђапăрт тутарса йăлт-йалт сиккелеççĕ.
Тата улăхсенђе выђăхĕсене кĕтекен
Ађа пăђасем, мĕн хăтланмаççĕ-ши?
Типнĕ выђăх тислĕкĕсем, çупĕ çапăсем пухса,
Вут ђĕртсе йарса, йĕри тавра хупăрласа илсе.
Çăмартасем, паранкăсем, пулăсем, раксем,

Вӑрттӑн карттӑн, иле-иле пырса пӗҫерсе,
Вутлӑ кӗл ҫинҗе патаксемпе пӑтратса,
Тусан ҫинҗе җӑх җаваланнӑ пек җакаланаҫҫӗ.
Пиҫрӗ ӗнтӗ пиҫрӗ! атӑр ҫиеттпӗр тесе,
Пӗр-пӗрне кӑҫкӑрса илсе, пӗрле ҫийеҫҫӗ.
Ҫисе тӑранса хырӑмӗсене тултарсан,
Кӑпӑр-капӑр ҫийелти тумтирӗсӗне хывса,
Уринҗи җӑлхи ҫӑпатисене салтса ывӑтса,
Йӗмӗсене тавӑрса ҫулелле ҫӗклесе,
Такӑр ҫерем ҫинҗе ака туй тӑваҫҫӗ.
Иртӗшӳ җупаҫҫӗ, кӗрешеҫҫӗ, сикеҫҫӗ,
Вӑкӑрсем пулса пӗр-пӗринпе тӗкӗшеҫҫӗ...
Куйанла выљаса, пӗрне-пӗри виртлесе,
Пак пак! вилнӗ куйана хӑвалакан тесе,
Кушак пек тӑват уран сиккелесе ҫӳреҫҫӗ.
Унта вӗсем ирӗке тухнӑ савӑнӑҫпа,
Мӗнле мӗнле вӑйӑсем выљамаҫҫӗ-ши?
Мӗн мӗн кӑна сӑмхсем калаҫмаҫҫӗ-ши?
—Хӗвел хӗртнӗҫемӗн хытӑран хытӑ хӗртет.
Ҫырмасен патне пыма хӑрушӑ кашласа,
Шавласа, кӗрлесе, пӗтӗркеленсе йухаҫҫӗ.
Сӗнҗери шыв хӑпарнӑҫемӗн ҫӳлелле хӑпарса
Ҫыранран сиксе тухса, Атӑл пек сарӑлать.
Сӗнҗе шывин кӗмӗл пек ҫутӑ сӑнне, хӗлӗпе
Хӗвел кӑтартмасӑр хупласа тӑнӑ сивӗ пӑр,
Ҫуркуннехи хӗвел хӗрӗвӗнҗен хӑраса,
Сехӗрленсе, шӑртах сиксе, кӗрлесе хӑпса,
Капан пек капан пек, купаланса сӗрӗшсе,
Сӗнҗе кукрисене пыра пыра капланать.
Пӑр кайат, пӑр кайат, пӑрпа пӗрле җир кайать тесе,

Пӗтӗм шыв хӗррипе ватти-вӗтти мӗнӗпе,
Икӗ йеннипе те кӑткӑ пек ҫын вӗркӗшет.
Хӑшӗ пахђи вӗрлӗкӗсене шӑтӑр-шатӑр ҫӗмӗреҫҫӗ,
Хӑшӗ ҫӳлелле май васкаса сӗтӗреҫҫӗ.
Кӑҫкӑрашаҫҫӗ, ахӑраҫҫӗ ҫухӑраҫҫӗ,
Хӑшӗ-хӑшӗ ахӑлтатса кулса, пӑхса тӑраҫҫӗ.
Пирӗн Ҫӗн Ӳсел кӗперри сивӗ тытнӑ пек
Хӑлтӑртатса ђӗтресе, туп пӑшал пенӗ пек,
Шӑрт шарт! туса шартлатса, хуҫӑлса ҫӗмрӗлсе,
Тӗппе ђавса кӑларса, вунӑ вуник лашапа
Турттарса килсе ҫапнӑ йуман йупасем,
Шыв тулса пӑр капланса ҫӳлелле ҫӗкленипе,
Армути пек ҫӑлӑна ҫӑлӑна тухса,
Пӗтӗм Сӗнђе калпинӗпе пӗлӗт пек хӑпаť.
Сӗнђе икӗ йеннипе шӑри-шари кӑҫкӑрса,
Вут тухнӑ ђухнехи пек илӗм пилӗм ђупаҫҫӗ...
Тытӑр! тытӑр! ан йухтарӑр кӗпере тесе,
Шывра йухакан кӗпер йӑвӑҫҫисем ҫине,
Пакӑрсем, вӗренсем, шертӗсем ывӑтаҫҫӗ.
Йӑвӑҫҫисене лектерсен, ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе,
Аťӑр!-аťӑр тесе, такмаксем каласа,
Харӑс-харӑс кӑҫкӑрса, туртса илеҫҫӗ.

## Кӗпер хывни.

Ҫӗн Ӳселӗн варринђе
Кукӑр-макӑр кукрӑлса,
Йухаť Сӗнђе ыткӑнса
Ҫырансене ђӑп тулса.
Ака туй та тумалла,
Акапа та тухмалла,

Ђасрах кĕпер хывмалла
Хир йенелле пăхмалла.
Сĕнђе ђакса çитеђђен
Кĕтсе тăма вăхăт çук,
Халăхпала тытăнсан,
Хăрамалли ним те çук.
Халăх сурат̆, кўл тăват̆,
Вăл тытăннă ĕç пулат̆.
—Ак Çĕн Ўсел тытăнат̆
Çĕнĕ кĕпер хывмашкăн,
Пĕтĕм йала хускатат̆
Кĕпер патне пымашкăн.
Йал пуçлăхсем йал тăрăх
Ђупкаласа çўреççĕ,
Теçетниксем ђаткă пек
Сиккелесе ўкеççĕ.
Ватти-вĕтти мĕнĕпех
Шевле пекех выђаççĕ,
Сĕнђе икĕ йеннипе
Икĕ ертел пулаççĕ.
Шыв хĕррине ик йенђен
Хурт пек сырса илеççĕ,
Кĕпер хывма пурне те
Ушкăн ушкăн пўлеççĕ.
Кам мĕн ĕçлеме пĕлет
Çавăн пек ĕç параççĕ,
Пăр хускалнă йевĕрлĕ
Ĕç пуçласа йараççĕ.
Хăшĕ йупа çунаççĕ,
Хăшĕ йĕпсе шăтарат̆,

Хăшĕ хăшĕ пĕр-пĕрне
Йăвăç илсе тыттарать.
Пуртă сасси шăп та шап!
Шатăртатса çех тăрать,
Ывăçпала сапнă пек
Турпас сикет ыткăнать.
Валем-валем вырстаççĕ
Пăйав-шывсем ҫăрканса,
Ăçта пăхнă вăл тĕлте
Йыт пăтти пек арканса.
Йăвăç кӳрсе тăраççĕ
Лашасемпе ҫуптарса,
Шăри-шари кăçкăрса
Пушăпала çаптарса.
Вĕренсемпе васкаса
Тăват канат йаваççĕ,
Вĕрлĕксемпе майласа
Тăват хаҫă тăваççĕ.
Йупасене пуçсенҫен
Канатсемпе çыхаççĕ,
Хаҫăсемпе тăратса
Шыв тĕпнелле ҫышаççĕ.
Кăткăсем пек çыпăçса
Пĕренесем йăтаççĕ,
Пылҫăк çине нуммайĕш
Ҫĕркуççирен путаççĕ.
Йупасене картласа
Йĕпсе тăхăнтараççĕ,
Пăхма хăруш шыв çине
Шăмпăр-шампăр йараççĕ.

Хаҫӑсемпе тӗртеҫҫӗ,
Канатсемпе туртаҫҫӗ,
Хӑраманне хӑпартса
Йӗпсе ҫине лартаҫҫӗ.
Йухат Сӗнҫе урнӑ пек
Йепле унта лармалла,
Айалалла пӑхсассӑн
Пуҫ ҫаврӑнса каймалла.
Сӑвай ҫапма хӑмасем
Кашта хурса сараҫҫӗ,
Кӗрешсемпе ҫӗклесе
Кӗрӗс-кӗрӗс параҫҫӗ.
Харӑс!.. харӑс!.. хоп!.. хоп!.. хоп!..
Такмаксемпе, кӳп те кӳп!
Пӗтӗм ҫӗре кисретсе
Йанраттарса йараҫҫӗ.
Пӗр ушкӑнӗ ывӑнсан
Тепӗр ушкӑн кӗреҫҫӗ,
Шур сухалсем туйапа
Тайкаланса ҫӳреҫҫӗ.
Хӗрарӑмсем ту пуҫне
Пыра-пыра пӑхаҫҫӗ,
Арҫынсенҫен тӗлӗнсе
Пуҫӗсене ухаҫҫӗ.
Ҫӗн Ӳселсем ҫулленех
Ҫапла кӗпер хываҫҫӗ,
Пӗтӗм йалпа пӗрлешсе
Халӑхпалла тӑваҫҫӗ.
Кӗпер патне пухӑнсан
Хурт сырнӑ пек сӗрлеҫҫӗ,

Вăхăт вăхăт хускалса
Çар халăх пек кĕрлеççĕ.
Ик йенђен те йупасем
Харăслатса йараççĕ,
Пĕр пĕринђен ăмăртса
Хире хирĕç пыраççĕ.
Хăмисене çĕклесе
Çын пуç урлă кўртеççĕ
Ăма пăхса тăратăн
Кил-кил! ђасрах кил теççĕ.
Хăшĕ пуçри çĕлĕкне
Тыта тыта ывтаççĕ,
Хăшĕ хăшĕ канмалла
Ђĕлĕм туртса выртаççĕ.
Хăшĕ пĕри пăшăхса
Йарханахне йараççĕ,
Йупа çапса пĕтерсен
Хăмисене сараççĕ.
Çўлтен хĕвел пĕçерет
Тўсме хал çук пуççене,
Çамка тăрăх йухакан
Тарĕ кĕрет куççене.
Аллисемпе тарсене
Шăла-шăла илеççĕ,
Пăђăхнипе пуççене
Лăстăр-лăстăр силлеççĕ.
Çирĕм ђалăш хушшине
Йухаť Сĕнђе пĕтрĕнсе,
Тăват пилĕк çухрăма
Тăраť тĕнђе кисренсе.

ШЕЛЕПИ СӐВВИСЕМ.

Ир тытӑнса каҫ пулсан
Ҫуран каҫма ҫул пулаӗ,
Тепӗр кунне хӑвӑртах
Сӗнӗ кӗпер ӗлкӗрет,
Кунӗн-ҫӗрӗн кӑткӑ пек
Урлӑ-пирлӗ ҫын ҫӳрет.
Ҫӗн Ӳселӗн варринђе
Сӗнђе выртаӗ ҫутӑлса,
Хӗлӗн ҫӑвӑн кӗрлесе
Кӗпер тӑраӗ ҫул пулса.

## Ҫула

Ак ҫу пек ҫемҫе
Ҫу кунӗ ҫитрӗ,
Пӗтӗм ҫӗр шыва
Илемпе витрӗ.
Хирсем, вӑрмансем,
Сӑртсем, улӑхсем,
Ӑҫта пӑхсан та
Пур те сип симӗс.
Йӑш-йӑш ҫӑмӑрпа,
Вӑш-вӑш лӗп ҫилпе,
Йешерсе ӳсет
Тӗрлӗрӗн ҫимӗҫ.
Улма йӑвӑҫпе
Ҫӗмӗрт йӑвӑҫсем
Сӗтпе витнӗ пек
Курӑнса тӑраӗ.
Тӗрлӗ ђеђекпе
Ҫырла ҫимӗҫсем
Вутӑн та хӗвӗн
Ҫунса курӑнаӗ.
Хӗвел йӑл-йӑл йӑл
Ҫунса ҫех тӑраӗ,
Куҫпа тинкерсе
Пӑхма вӑй ҫитмест.
Ҫут ҫанталӑка
Кӑн кӑвак пӗлӗт,
Кӑвак ђаршав пек
Хупласа тӑраӗ.
Татти сыпписӗр
Кайӑк сассипе
Тӗнђе йурласа
Йанраса тӑраӗ.
Касси кассипе
Хура пӗлӗтсем
Хуран хӑрӑм пек
Курӑнса килет.

Аслати авăтаť,
Çиçĕмĕ çиçет,
Тĕнђе кисренет,
Çĕр йепле тўсет.
Çăмăрĕ çăваť,
Хĕвел хĕртет,
Çер шыва симĕс
Пуставпа витет.
Шаланки хытă
Савăннипеле
Сывлăш çиййĕнђе
Ташласа тăраť.

Петĕм хир тулли
Тĕрлĕ тыр-пулă
Тинĕс хумĕ пек
Хумханса лараť.
Хĕвел çав тĕрлĕ
Хĕртнĕçем хĕртет,
Мĕн пур тыр-пулла
Сĕткенне кĕртет.
Çавăнпа ăна
Ватти-вĕттипе,
Пур хура халăх
Савăнса кĕтет.

## Утçи.

Ак ĕнтĕ улăх
Ак илем пахђи,
Сывлăш та уçă
Шăршă та лайăх.
Мĕнле ђеђекпе
Мĕнле курăк çук,
Çиййĕнђен куçа
Илес те килмест.
Хурт уйăрнă пек
Халăхĕ вĕрет,
Урлă та пирлĕ
Ђупса çех çўрет.
Ђăштăр та ђаштăр
Кайăкĕ вĕçет.
Улăх илемĕ
Пĕтнине сисет.

Çўлтен хĕвелĕ
Вут пек пĕçерет,
Кађђă çавине
Çĕклесе перет.
Лăстăр та ластăр
Пуçне силлесе,
Çамкинђи тарне
Çĕре ўкерет.
Кайăк хурсем пек
Карти картипе,
Пĕтĕм улăха
Çын карталаннă.
Харăс çĕкленсе
Йĕрки йĕркипе,
Пĕр пĕрин çине
Кĕрсе пыраççĕ.

Ђăнкăр та ђанкăр
Çава сассипе,
Улăх йнраса
Ђĕтресе тăрать.
Курăк ăшĕнђен
Çĕлен пынă пек,
Çави шăхăрса
Ђашлатса пырать.
Хăш-хăш арăмсем
Лапаткисене
Арçынсем йенне,
Тăсса тăраççĕ,
Çавăнтах хăшĕ
Курăк тĕпĕнђен,
Тутар пуçĕ пек
Хырса пыраççĕ.
Çĕлен калтасем
Хăранипеле,
Шăтăкĕсене
Тарса кĕреççĕ.
Хисепĕ те çук
Хурт кăпшанкăсем,
Йăлттин те йалттин
Сиксе çÿреççĕ.
Урапа çумне
Кăкарнă лашсем,
Пăван çыртнипе
Тăпăртатаççĕ.
Пуçсене хытă
Силленипеле,
Ђĕлпĕрсене те
Туртса татаççĕ.
Хÿрисемпеле
Çапкаланнипе,
Хăш-хăш пăванне
Пăр салатаççĕ.
Кăнтăрла çитсен
Ут çулакансем,
Ĕççе çисессĕн
Выртса канаççĕ.
Шур хĕррисенђи
Шур шăналăксем
Пĕтĕм улăха
Илем кÿреççĕ.
Вĕт-шак ађисем
Кунтăсем йăтса,
Çырла пуçтарса
Ђупса çÿреççĕ.
Тĕллĕн те тĕллĕн
Кăвак тĕтĕмсем,
Ирлĕ те каçлă
Тĕтре пек курнать.
Çăва тухсассăн
Уйăх уйăхпе,
Пирĕн хресђен
Уйрах пурăнать.
Йăлтăр та йалтăр
Вутти йалкăшать,
Йăлт-йалт курăнса
Ђатки сирпĕнет.

Хуранти йашки
Тухса тарас пек,
Сиксе çаврăнса
Пăсланса вĕрет.
Хĕвел çав тĕрлĕ
Хĕртнĕçем хĕртет,
Çине тинкерсе
Пăхма văй çитмест.
Сухан пек йешĕл
Симĕс курăка,
Айне вут хунă
Пекех типĕтет.
Ак ĕнтĕ утă
Çулса пĕтерђĕç,
Касси кассипе
Паккус ўкерђĕç.
Çава пăрахса
Крепле тытрĕçĕ,
Утă пухмашкăн
Тухса утрĕçĕ.
Каллех улăха
Халăх саланђĕ,
Пур те паккуса
Тĕрткеленеççĕ.
Хăшĕ пухаççĕ,
Хăшĕ тавраççĕ,
Хăшĕ сенĕкпе
Ђиксе çавраççĕ.
Çáмарта тăвас
Ђăхă йевĕрлĕ,
Ăçта пăхсан та
Хăлăх ђупкалаŧ.
Шăкăл та шакăл
Калаççа кулса,
Пур те васкаса
Утă пуçтараŧ.
Улăх туллийех,
Выђăх кĕтў пек,
Валемпе купа
Курăнса лараŧ.
Хăшĕ вĕренпе,
Хăшĕ çапăпа
Капан тумашкăн
Утă турттараŧ.
Капан варринђи
Вăрăм шертĕсем
Миçĕт тáрри пек
Курăнса тăраŧ.
Утçи вăхăђĕ
Ĕмĕр ĕмĕрех
Хресђенсене
Пит хĕрў пулаŧ.
Хăш-хăш арçынсем
Капан хывнă ђух,
Валем пысăккĕш
Ђиксе ывтаççĕ.
Арăмсем çўлте
Капан çийĕнђе,
Арак хађђи пек
Йарса тытаççĕ.

Шӳреке тăрлă
Утă капансем,
Улăх туллийех
Шăтса тухаççĕ.
Унтан йĕрипен
Пĕлĕт йухнă пек,
Хуласемпеле
Йала йухаççĕ.

## Д. С. Елмене.

Револӳтси вут-кăвар çулĕпе,
Тимĕр тупă пек паттăр пыратăн,
Хурçă пек çирĕп тăн пуçăпала,
Унăн хăватне лайăх куратăн.
Харсăрлăхăпа, хастарлăхăпа
Тăван халăха çул тупса патăн,
Çивĕђ ђĕлхӳпе ĕçтенлĕхĕпе
Тăвас тенине есĕ тăватăн.
Вутра çунас çук, шывра сӳнес çук,
Санăн хăватлă, ђаплă ĕçĕсем,
Ирĕклĕх çулпе йертсе пыракан
Ђăваш Респуплĕк çул пуçĕ вĕсем.
Çиçĕм пек çивĕђ сисĕмĕпеле
Пурне те курса, пĕлсе тăратăн,
Ђăваш халăхин историйĕнђе
Паттăр комунис... есĕ пулатăн.

## Милли йулташа.

Ес хăш хулара пулсан та
Сана шыраса тупаттăм,
Тем пекех йăваш кăмăлпа
Йаланах хапăл тăваттăн.
Сăввăмсене те, хама та,
Ытла та хытă йуратрăн,

Шухăшсем питĕ йăвăр ђух
Çăмăллатмашкăн тăрăшрăн.
Çывăх пурăннă вăхăтра
Ђас-ђасах сана кураттăм,
Курассăм питĕ килнĕ ђух
Ђăваш çĕр шывне кăтартрăн,
Хал ĕнтĕ ђаплă Мускавра
Манран пит инçе пурăнан
Çапах та есĕ ман куçа,
Умра тăнă пек, куранан.

## Ылттăн Микулике.

Шупашкар çине
Çулахи хĕвел
Выђаса кулса
Пăхнă вăхăтра,
Уçă сывлăшпа
Уçăлас тесе
Атăл хĕрринђе
Çӳренĕ ђухне,
Санпа тĕл пулса,
Савăнса кулса,
Тĕрлĕ сăмахсем
Калаçаттăмăр.
Хăш ђухне сыран
Хĕррине пырса
Ларатăмăрђђĕ—
Атăла курса.
Йалан хĕвел пек
Уçă кăмăлпа,
Курăнаттăнђђĕ
Есĕ куçăпа.
Ме, халĕ, есĕ
Мĕн куран? тесе.
Тĕкĕрĕпеле
Пăхтараттăнђ ђĕ
Хĕвел пек-ăшă
Сăмахăсампала,
Кăмăла хытă
Пусараттăнђђĕ.
Каçпала унта
Шупашкар халăх
Хурт сĕрленĕ пек
Йăшăлтататђђĕç;
Хăшĕ вĕт мăйăр,
Хăшĕ шултрине,
Хăшĕсем хĕвел
Çавнăш катађђĕç.

Пур те хăй савнă
Йулташĕсемпе
Алăран алла
Тытса çўређђĕç:
Хăшĕ çулахи
Театтăр çуртне,
Хăшĕ саталла
Утса кĕређђĕç.
Атăлпа кимĕ
Килнине курса,
Йĕкĕр йĕкĕрĕн
Калаççа кулса,
Пур те унталла
Пăха пуçлађђĕç.
Ушкăн ушкăнпе
Хĕр ушкăнĕсем,
Шăнкăрђ ушкăн пек,
Курăнађђĕçĕ.
Те ђăваш вĕсем,
Те вырăс хĕрсем?
Ђăвашла пĕрт те
Калаçмаç хăйсем.
Хаљхи çамрăка
Йепле пĕлетĕн?
Хула çыннине
Ăçтан паллатăн?
Çи пуçĕсем те
Пурин те пĕр пек,
Пушмакĕсем те
Çўлĕ кĕлелĕ,

Сăн сăпатсем те
Питĕ илемлĕ—
Вĕсем вĕт пурте
Вĕренекенсем,
Йалсенђен килнĕ
Ђăваш хĕрĕсем.
Авă! ђăвашлах
Пупле пуçларĕç,
Ђăваш арăмне
Курсассăн хăйсем.
—Атăл çийĕнђе
Çамрăк кĕрĕмсем
Пĕђĕк кимсемпе
Ишсе çўреççĕ:
Купăс калаççĕ,
Йурă йурлаççĕ,
Çавăнтах хăшĕ
Пулă тытаççĕ.
Вĕсен патĕнђех,
Хăйне пĕр тĕлте,
Вĕт-шак ађисем
Шыва кĕреççĕ.
Вĕсемпе пĕрлех
Çутă пуллисем,
Шăмпăр та шăмпăрт
Йăлт-йалт сикеççĕ.
—Атăл леш йенђе
Сарлака улăх,
Симĕс пустав пек
Курăнса выртаť.

Улăх çумĕнђе
Хырă вăрманĕ,
Касси кассипе
Курăнса тăрaт̆.
Улăхра тем ђул
Ађа-пăђасем,
Ђупса çўресе,
Ђеђек татаççĕ.
Ушкăнĕпеле
Пĕтĕ кимсене
Шывран типпеле
Харăс туртаççĕ.
Улăх туллиех
Тĕрлĕрен кайăк
Теминçе тĕсле
Йурă йурлаççĕ.
—Пăраххут хытă
Çухăрса йарат̆,
Пĕтĕм Шупашкар
Йанраса кайат̆.
Атăл хĕрринђе
Пристăн çинђе,
Хурт сĕрленĕ пек
Халăх ђупкалат̆.
Ватти-вĕттипе
Тĕрлĕрен çимĕç,
Пристăнелле
Йăта пуçлаççĕ;
Хăшĕ пăраххут
Хăш йенђен килет,
Ăçталла кайат̆,
Тесе ыйтаççĕ.
Пăраххут килет
Атăла çурса,
Тем пек пашкаса
Хытă çухăрса,
Хăрăм пек хура
Тĕтĕм кăларат̆,
Атăл çинелле
Салатса йарат̆.
Шыва тем пекех
Шампăртаттарса
Шупашкар çумне
Çаврăнса ларат̆.
Çўлтен хĕвелĕ,
Атăл çийĕнђе,
Йăл-йал курăнса
Выљаса тăрат̆.
Çутă хумĕсем
Пĕр-пĕри хыççăн,
Çыр хĕрне пырса
Ђăт-ђат çапаççĕ.
Атăл хĕрринђе
Вĕтĕ киммисем
Хумпа ђўхенсе
Сиксе лараççĕ.
Пăраххут çине
Ларасђĕ тесе
Тем ђухлĕ халăх
Кĕтсе тăраççĕ.

## Шуррисем килнӗ вӑхӑтра.

Еп Ӳселӗнҫен таратӑп!
Сыв пулӑр ӗнтӗ аҫамсем,
Ан вӑрҫӑр, лайӑх пурӑнӑр!
Ҫын кусне ыррӑн курӑнӑр.
Усал кайӑксен хушшине
Хӑварап сире ҫӗппӗмсем,
Ытла та ҫамрӑк йулатӑр
Пӗтӗмпех тӑлӑх пулатӑр.
Те сывӑ йулап те вилеп;
Ку пит хӑрушӑ вӑхӑтра,
Сире те йӑвӑр, мана та:
Йепле тӳсӗпӗр ку вутра.
Мӗн-мӗн курӗҫ-ши пуҫӑрсем?
Мӗнле асапсем тӳсеҫ-ши?
Ку халӑх йунне пуршуйсем
Ӗмӗрех ҫапла ӗҫӗҫ-ши?
Ех ылттӑнӑмсем, ҫунӑмсем!
Йулаттӑр вӗтӗ уйрӑлса,
Кам сире ҫак ҫут тӗнҫере
Пурӑнӗ ман пек йуп курса.
Ес те аннеҫӗм сывӑ пул!
Ан макӑр маншӑн, ан хуйхӑр!
Халӗ нимӗн те пӗлмеспӗр,
Малти кунсенҫе темсем пур.
Тӗнҫе ӗҫӗсем кулленех
Пӗр май улшӑнса пыраҫҫӗ,
Темле хӑрушӑ ӗҫсем те
Асӑнмалӑх ҫех йулаҫҫӗ.
Пуршуйсен вӑйӗ пӗтемпех

Пĕтсе çитне пек çыраççĕ,
Вĕсем хаљ пĕтĕм тĕнђипех
Питĕ хăраса тăраççĕ.

Амăшĕ самавар хурса.

Ман ăш-ђиккĕм çуннă ђух
Сăмавар ăш те çунтăрха,
Ех Микулай, Микулай,
Хăваран пире хурлăха.
Йалан тĕнђе çийĕнђе
Шырарăн ес ырлăха
Тĕнђе касса çӳресех
Пĕтеретĕн пурлăха.
Пĕтĕм йалта ђăн малтан
Ес çырăнтăн комуна,
Ех ылттăнăм, Микулай!
Пит хуйхăртан ес мана.
Есĕ вилĕн те ним пĕлмĕн
Епĕр йулăпăр асапа,
Йепле пурăнас ват пуçпа
Манăн кун ђухлĕ ађапа.
Тем тума санăн çав тĕрлĕ
Выђанђăк пуљђĕ кăмăлă,
Пурăнма пĕлнĕ пулсассăн
Хăна çитеђђĕ ху мулă.
Камуниссене йăхве те
Хăвармĕç теççĕ йал йышсем,
Çын вăл ахалех калаçмасť,
Тен ђăнах пулĕç вăл ĕçсем.
Ма халĕ манăн çав тĕрлĕ

Вăрăм пулђĕ-ши ĕмĕрĕм?
Лайăх канăçлă вăхăтра
Ђирлесе вилме пĕлмерĕм.
Ађа-пăђашăн хуйхăрсах
Вилсе çĕре кĕретĕп пуљ,
Йалта пĕр çын курманнине
Пĕр еп анђах куратăп пуљ,
Сана вĕлернĕ тенине
Илтсессĕн йепле тусĕп-ши?
Сан виллӳ ăçта выртнине
Пĕлĕп-ши епĕ пĕлмĕп-ши?
Çакă хĕрушă вилĕмрĕн
Йепле хăтăлса йулăн-ши?
Мана пытарнă вăхăтра
Ман тăпрам çинђе пулăн-ши?
Патши те çук ун турри те,
Теççĕ вĕт сана халђ пурте,
Ытла та йал йыш çиленет
Сыв йулас çук пуљ епĕр те.
Пĕтĕм халăхăн пурлăхне
Пĕтерђĕç теççĕ камунсем,
Пĕр камуна та хăвармĕç
Шуррисем килсен тен вĕсем.

Микулай.

Йал йышсем пирĕн пит тĕттĕм
Çавăнпа ним те пĕлмеççĕ,
Камунсем тăвас ырлăха
Вĕсем тăвçăрса илмеççĕ.
Йепле хăрушă пулсан та
Тем тума ђĕре хăрамаст,

Çапах та Калђђак çитиђђен
Ўсељтех тăма йурамасҭ.
Халăха мĕскер кирлине
Камунсем лăйăх пĕлеççĕ,
Пур асаплă халăхсемшĕн
Вĕсем çапăççа вилеççĕ.
Пуршуйсенђен пĕтĕмпех
Вăлаçа туртса илеççĕ,
Улпутсенĕн çĕрĕсене
Хура халăха пӳлеççĕ.

Ванӳк кĕрсе.

Хĕрлĕ çарсем утсемпе
Тарса килеççĕ кунталла,
Урамри çынсем тараççĕ—
Пăхма хăруш унталла.
Кĕрĕс, кĕрĕс!переççĕ,
Çĕре кисрентереççĕ,
Ђасах пирĕн йала та
Вĕсем килсе кĕреççĕ.

(Кантăкран пăхса)

Авă! пĕр салтак лашапа
Килсе те çитрĕ хапхумне.
Лаши тем пекех ывăннă
Кайса ӳкесси çех йулнă.

Хĕрлĕ салтак (кĕрет)

Сывă-и халĕ йулташсем?
Мĕнле хаљ сирĕн пурăнăç?
Йепле ирттертĕр мăнкуна?
Лайăх çитрĕри куна?

Микулай.

Сывӑ хаљ, йулташ! ирт халӗ!
Киљ-ха ђей ӗçме лар халӗ?
Хӑвӑр ӗçӗрсем çийӗнђен
Пире каласа пар халӗ?

Хӗрлӗ салтак

Пирӗн ӗç халӗ хӑрушӑ,
Епӗр кайалла ђакатпӑр,
Пӗтӗм фронт тӑршшӗпех
Вӑйлӑ уккупсем ђаватпӑр.
Тата пӗр ик кун ђаксанах
Харӑс çӗкленсе çапатпӑр,
Пуршуйсенӗн хӑватне
Пӑр салатса йаратпӑр.
Мелеккес кунтан инçе-и?
Миçе çухрӑмне пӗлетни?
Ман лаша питӗ ывӑннӑ
Малалла кайма вӑйӗ çук.
Еп кунта сирӗн лашӑра
Улӑшма кӗтӗм, йулташсем!

Микулй.

Епӗр лашана хаљ анђах
Кастарнӑ вӗт, йултӑшӑм!
Пӗртте ђарӑнса тӑмӑттӑм
Ахалех парса йарӑттӑм.
Пирӗн Çӗн Ӳсел пит пысӑк
Ђасах тупатӑн ес лаша,
Ку пирӗн кас ђухӑн кас —
Кай веç çавӑнта, лӗш касса.
Сӗтел çийӗнђе сӑмавар

Ларат̆ ҫашкăрса уласа.
Тем каласси пур салтакăн
Тăрат̆, пит хытă уйласа.
Хăй вăл сăмавар кутĕнҫе
Ҫей ĕҫҫе ларат̆ куҫанса,
Куҫĕсем кантăк йенелле
Пăхаҫҫĕ питĕ выҫанса.
Пĕр ик курка ҫей ĕҫҫенех
Тăрат̆ сăмавар кутĕнҫен,
Ах пит хăрушă ĕҫĕсем
Вăхăҫĕпеле ку тĕнҫен.

Хĕрлĕ салтак.

Сыв пулăр еппин йулташсем!
Епĕ хăвăртрах кайам-ха!
Ку йал пит пысăк пулсассăн
Лайăхрах лаша тупам-ха?

(Кайат̆).

Микулай.

Мана та кайма
Вăхăт ҫитрĕнтĕ
Сыв пул, аннеҫĕм!
Сыв пулăр пурте.

Амĕш.

Ăҫта ҫитсе пĕтĕн-ши?
Виллӳ ăҫта выртĕ-ши?
Ех, ку пуҫăм ĕмĕрте
Мĕн-мĕн кăна курҫĕ-ши?

Микулай.

Ат̆а, Аҫакка,
Ес те манпала,

Мана çăмăлрах
Пулĕ санпала.
Мăкшелне çитсен
Хăварăп сана.
Кунта пурăнма
Кун пĕтрĕ мана.
(Микулайпа 12 çулхи
Аљакка тухса кайаç-
çĕ.)

Кӳрше арăмĕ (кĕрсе.)
Акай ма лайăх
Йапалăрсене,
Ăçта та пулсан
Пытармастăр хаљ!
Шуррисем килсе
Çитеççĕ вĕтĕ?
Ма есĕр пĕртте
Пуçтармастăр?
Йала çитсенех вĕсем
Сирĕн пеккисен
Йапалисене
Пĕр хĕрхенмесĕр
Çаратаççĕ, тет.

Камуниссемпе
Хĕрлĕ салтаксен
Мĕн пур пек лайăх
Таврашĕсене
Питĕ туласа
Пĕтереççĕ тет.
(Питĕ васкаса йа-
паласем пытараççĕ).

Амĕш.

Тата Микулай
Кĕнекисене те
Вутта пăрахса
Çунтарас пулать.
Вĕсем пирки пире те
Пере-пере вĕлерĕç
Мĕн пур ађам-пăђама
Петĕмпелех пĕтерĕç.

Ванӳк.

Авă пăшал сассисем
Йепле кĕрĕслетеççĕ?
Акă ђасах шуррисем
Йала килсе кĕреççĕ.

Амĕш.

Ах тур-тур-тур! Мĕн пулĕ...
Пур те пĕтетпĕр пулĕ...
Тарăр! ађасем хăвăртрах...
Пĕтес марђђĕ ку çуртрах...
Шăришари пĕтиђђен
Ниçта тухса ан çурĕр!

Ђасрах тарса пытанăр;
Пур те хытă сыхланăр!
Ей турăçăм, пăхсами
Пирĕн çийе ăш куçпа...
Мĕнле тăшман пулсан та,
Шухашлатăр ăс-пуçпа.

(Тараççĕ, карђăк пĕђђенех тăрса йулаť.
Виçĕ шурă салтак кĕреççĕ).

Шурă салтак.

Ăçта пытартăн
Ес ађусене?
Кала ђăннипе,
Шуйттан карђăкĕ,
Каламасассăн
Ђунна илетĕп,
Халех пăшалпа
Персе пăрахап.

(Тĕллет).

Карђăк.

Ађасем пур те
Сиртен хăраса
Кайăк ђĕппи пек,
Таçта çăвана
Саланса пĕтрĕç.
Вĕлерĕсĕр...
Манăн вилĕмрен
Мĕн хăрасси пур!
Тахçанах вилме
Вăхăт çитнĕ ĕнтĕ.

Мана вĕлерсе
Есĕр мĕн усă
Курăр-ши вара?

Шурă салтак.

Сана калатăп:
Ăçта аҫусем?
Ан палкаса тăр!
Кала хăвăртрах!
Сан аҫусене
Камунис, терĕç.
Халех вĕсене
Ҫиксе пăрахатпăр.

Карҫăк.

Иепле пĕлем еп
Аҫсем ăçтине!
Епĕр çавăнта
Кайатпăр тесе,
Çырса хăварман
Вĕсем хут çине.
Те камунис халҫ,
Те камунис мар?
Çын вăл çын çинҫен
Тем те калаçать!
Çын хуйхи çынна
Нимех те мар вăл.

Шурă салтак.

Сирĕн çуртăрта
Лайăх тумтирсем
Пур, терĕçĕ.
Ăçта хутăр вĕрсене?

Кала! персе вёлереп!
Арђусене уç ђасрах!
(Уççа ухтараççĕ, лайăххи-
сене илеççĕ).
Тата кĕлетне уç!
Унта мĕн пур пăхатпăр!
(Кĕлете тухаççĕ).
Карђăк (кĕлетрен пĕђ-
ђенех кĕрсе)
Ах, тур, тур, тур!..
Йепле пурăнăп!..
Çын куç умĕнђе...
Мĕнле курăнăп!..
Пур авантарах
Йапаламсене
Вăрă хурах пек
Туласа карĕç!..
Çав çын хĕрхенме
Пĕлмен çынсене...
Хăш-хăш арăмсем
Савăннипеле,
Ханша йухтарсах
Хатĕрлерĕçĕ...
Шуррисем килсен
Пурăнăçĕсем,
Çăтмахри пекех
Пулĕ терĕçĕ...
Тата вăрлăхлăх
Тырра пулла та,
Пĕр хĕрхенмесĕр

Илсе карĕçĕ.
Ним акмасăрах
Йулăпăр ĕнтĕ!
Пурте выççăнах
Вилсе пĕтĕпĕр.
Нимĕскер айăп
Туман çĕртенех,
Ĕмĕр курманне
Кăтартрĕç вĕтĕ.
Курăп-ши, çук-ши
Ађам-пăђама?
Ăçта ђикĕп-ши
Ватă пуçăма?
Ех, пуçăм, пуçăм!
Мĕн-мĕн курĕ-ши?
Тăшман мăшкăлне
Йепле тӳсем-ши?

Шурă салтак (кĕрет)

Кунта тата мана
Утă илме йађĕçĕ,
Кĕлетĕрте пăри те
Йулнă халĕ терĕçĕ.
Ата, карђăк, кĕлетне
Тухса уçса пархалĕ?

Карђăк.

Йулнă пулсассăн,
Илсе кайăрах.
Ман йĕре-йĕре
Вăй пĕтсе çитрĕ...
Унта кĕлете

Кин кĕнĕҌҌĕ хаљ.
Кайман пулсассăн,
Вăл та унтах пуљ.
(Шур салтак кайсан, пăртак
вăхăтран кинĕ йĕрсе кĕрет).

Кин.

Ах, тур, тур! шуйттансем!
Пĕтереççĕ вĕт пире...
Урнă йытă йевĕрлех
Урса кайнă пĕтĕмпех.

КарҌăк.

Тата мĕн турĕç сана?
Вĕлерме тытăнҌĕ-çи мĕн?

Кин (йĕрсе).

Ех, ани, ани!
Тем те тăвĕç хаљ?
Ирĕксĕр пусса
Выртма тытăнҌĕç!
Епĕр мĕн тăвас
Тĕнине тусан,
Сире никам та
Тивес çук теççĕ.
Ан кăçкăр, персе
Вĕлереп тесе,
Пăшалĕсемпе
Кăкра тĕллеççĕ.
Вăл шуйттансемпе
Тем те курăпăр?..
Ех, ани, ани!
Йепле тăрăпăр?

Çав мур салтакĕ,
Йытă пуçлăскер,
Кăнтăр кунĕнђех
Мăшкăл тăвасшăн.

Карђăк.

Ех, урнă кашкăрсем!
Çăтсах йама тытăнђĕç.
Хаљ те ађсем хăвăртрах
Тара-тара пытанђĕç.
Аŭа, кинĕм, хăвăртрах
Кайар ђасрах ку çуртран,
Тен татах та килĕçĕ
Вĕсем, вăрă-хурахсем.
Йалан капла пулсассăн
Шалçисем ђас тулĕçĕ.
Пит нумайах çӳреймĕç,
Ӳпне питне пулĕçĕ.

(Кайаççĕ. Çĕрле тĕттĕм пурте
Микулай килсе кĕрет).

Микулай.

Ех-хе-хе-хе!.. Ку шур çар
Мĕн-мĕн кăна тунă-ши?
Килйышсене пĕтĕмпех
Пĕтернĕ-шим вĕлерсе?
Уй варринђи йупа пек
Тăрса куртăм куран еп...

(Кантăкран урампа амăш ирт-
нине курат).

Анне, ăçта кайатăн?
Ăма киле кĕместĕн?

Епĕ киле килнĕ вĕт.

Карђăк (кĕрет).

Ех, ађам ађам!
Ех, Микулайçăм?..
Есĕ халĕ те,
Сывă çӳретни?..
Хăш тĕлтен вĕççе
Ӳкрĕн-ши кунта?
Тĕлĕкре-ши ку?
Ђăнах курап-ши?..

Микулай.

Ђăнах еп, анне!
Килтĕм вĕт киле,
Кала-ха мана:
Мĕн пулђĕ сире?..
Мана никам та
Нимĕн те туман.
Хађ ес урампа
Ăçта кайаттăн?

Карђăк.

Левенттук арăмĕ,
Акай хађ татах
Сирĕн патăра
Пĕр çын кĕђĕ терĕ те,
Кам кĕђĕ-ши?
Тесе хăраса,
Кӳршĕ Ваççили
Пĕлмеçти тесе,
Ытса пĕлем-ха?
Тесе килнĕђђĕ.

Йепле ес, ађам,
Пĕр хăрамасăр
Тăран ку çуртра
Сĕм тĕттĕм çĕртре.
Калђђаксем Крахук
Аппусем панђех
Сана сыхласа
Пурăнаççĕ вĕт.
Кунне теминçе
Хуђђен килеççĕ!
Йалан сан çинђен
Ытса пĕлеççĕ.
Хăйсем те халĕ
Пит, хăраççĕ, тет!
Вăрттăн калаçса
Хуйхăраççĕ тет.
Хĕрлисем питĕ
Çĕмĕрсе килеççĕ,
Ђасах тармалла
Пулаť, теççĕ, тет.
Ей турă хăват
Пар хĕрлĕ çара,
Ĕмĕр тав туса
Пуççапăп вара.

Микулай.

Кил йышсем ăçта
Кайса пĕтрĕççĕ?
Ăма хађ вĕсем?
Киле килмеççĕ
Вĕсем ман пирки

Аҫасене те
Вĕлерес тесе
Шыраҫҫĕ-и мĕн?

Карҫăк.

Аҫасем есĕ
Тухса кайсанах,
Кайăк ҫĕппи пек,
Саланса пĕтрĕç.
Еп анҫах киле
Выҫăхсем патне
Хăракаласа
Кунĕпех çапла
Килсе çÿретĕп,
Хама вилсен те
Шалккă мар тетĕп.

Микулай.

Ну, анне, халĕ
Мана нумайҫҫен
Калаççа тăма
Вăхăт çук еппин.
Пĕр хамăра
Çывăх çан патне
Хăвăртрах кайса
Пытанас пулат.

(Кайат.
Карҫăк пуртре пĕҫҫенех.
Хăра каласа тăнă çĕре
Крахук пырса кĕрет)

Крахук.

Тата епĕ килес
Тĕрĕм сирĕн пата!
Мĕнле пурăнатăн
Халĕ Наçтике?

Карҫăк.

Хăвах пĕлетĕн:
Тухман ҫун, сÿнмен вут,
Тенĕ пек, халĕ еп.
Пÿртĕмрĕ пĕр пĕҫҫен
Çÿретĕп вилиҫҫен.

Крахук.

Есĕ, Наçтикке,
Ним пĕлместĕн халь?
Сире халь пысăк
Савăнăç вĕтĕ.

Карҫăк.

Мĕнле çавăнăç?
Кала халь, аҫам;
Пĕр ăш хыпарпа
Ăшăт ҫĕрене.

Крахук.

Хай пирĕн патри
Калҫҫак салтаксем
Çурçĕр тĕлĕнҫе
Пăрахса тарҫĕç.
Хăранипеле,
Хуранти пиçнĕ
Çăмартисене
Манса хăварҫĕç.
Кăпăр-капăр çех
Пуçтарăнҫĕç те

Еппĕн те теппĕн
Тухса тарђĕçĕ.

Карђăк.

Тăхçанах çавна
Ширанă вĕсем,
Вăрă хурахсем!
Акма тухмалла:
Вăрлăхлăх тырра
Илсе карĕçĕ.
Çав çын ђăххине
Урине персе
Хуçман ађана
Вĕлерес тесе
Шыраpĕç вĕтĕ!
Тавта пуç, ађам,
Ăшă хыпарна...

(Кайаççĕ.
Пăртак вăхăтран, пĕри хыççăн пĕри килсе пур те пуçтарăнаççĕ).

Микулай.

Ех, ылттăнăмсем!
Шăнкăрђ ђĕпписем!
Тем пек хăраса
Сехĕрлентĕр пуђ.
Револютсишĕн
Пĕтĕм кил йышпа
Тем ђухлĕ асап
Куртăмăр ĕнтĕ.
Есĕ, Ентри,
Хăравçăскер,
Ăçта пытанса
Çӳрерĕн, ађам?

Ентĕри.

Еп малтан хамăр
Мирун куккасем патне
Тарса кĕтĕм те,
Хăранипеле
Сиксе ђĕтретĕп.
Вĕсем сан пирки
Пире хамăра
Персе вĕлерсе
Пĕтерĕç тесе,
Кай кунтан тесе,
Хуса йађĕçĕ.
Унтан вĕсен кӳршине
Анттун пиђђесем патне
Тарса кĕтĕм те,
Вĕсем те хуса йађĕçĕ.
Унтан тухсан, Тенис
Йыснасем патне кĕтĕм
Хветуç аппа хĕрхенсе,
Саншăн пĕђиккĕскершĕн
Пире темех тумĕç-ха!
Пурăн кунта, терĕ.
Тенис йысни те
Ун сăмахне иглерĕ.
Вĕсем патĕнђе
Пурăнтăм вара,
Иванĕпе выђђаса.

Микулай.
А есĕ, Ванўк?

Ванўк.
Епĕ теминçе
Килле те çитрĕм.
Теминçе тĕслĕ
Сăмахсем илтрĕм.
Ђăн малтан Макçи
Йакурĕ патне
Лупасайнелле
Тарса пытантăм.
Унтан таçта та
Çитсе çапăнтăм.
Ыр çынсем патне
Тарсах çăлăнтăм.
Еп çын куçне те
Ђас-ђасах курăнтăм
Килти хыпара
Илтсех пурăнтăм.

Микулай.
(Урука пуçĕнђен ђуп туса)
Есĕ тата, Урук?

Урук.
Еп асаннепе
Пĕрлех пурăнтăм...
Сана калђђаксем
Вĕлернĕ терĕç-çке,
Йепле ђĕрĕлтĕн
Халĕ ес, атте?

Микулай.
Ех, ђĕппĕм, ђĕппĕм!
Пĕђĕкçĕ ђĕппĕм!
Çулă ђĕлхелĕ
Ђĕкеç ђĕппийĕм?
Хĕвелпе лĕпĕш
Ђĕрĕлнĕ пекех
Халђ ĕнтĕ епĕр
Пур те ђĕрĕлнĕ.
Хăватлă Канаш
Ирĕкĕпеле,
Пире хĕрлĕ çар
Ђĕртсе тăратрĕ.

Карђăк.
Есĕ кин ђасрах
Сăмавар ларт-ха!
Мĕн пур ађампа
Пĕрле савăнса
Ăшăм каниђђен
Ђей ĕçем халĕ?
Пĕр тăраниђђен
Калаçça ларса
Кăмăл пусарса.

Ванўк.
Мĕнле сыв йултăн
Халĕ ес, пиђђе,
Çав тĕрлĕ тискер
Вăхăтсенђе те?
Çак Çĕн Ўселте
Никам та сана

Сыв йулӗ тесе,
Ӗмӗтленмен те.

Микулай.

Ан кала ӗнтӗ!
Хура вӑрман пек
Калђђак çаррине
Ђиркӳл Сӗнђелтен
Хирӗç тухрӑм вӗт.
Тата манпала
Мӑкшелне килме
Ик çамрӑк ђӑваш
Арӑмӗ тухрӗ.
Ђиркул Сӗнђелпе
Мӑкшел хушшине
Пӗлӗт пек тулнӑ
Шур çар халӑхӗ.
Çав çар халӑхӗ
Иртсе пӗтсессӗн,
Пӗр çур çухрӑм пек
Кунталла килсен,
Ак пирӗн хыçран
Ик хусах килет.
Икӗ лашапа
Харӑс кустарса,
Вӑрӑм авӑрлӑ
Сӑнӑсемпеле
Çитсенех ђиксе
Пӑрахмалла пек.
Пӑртак çывхара
Пуçласасӑнах
Ђаранӑр тесе,
Çухӑрса йађӗç.
Ех, пӗтрӗм иккен
Еп кунта тесе,
Тӑп ђарӑнтӑм та
Кӗтсе тӑратӑп.
Манпала пӗрле
Йерсе килекен
Икӗ арӑм та
Ђарӑнђӗç манпа.
Хусахсем пирӗн
Пата çитсенех,
Лашисем çинђен
Сиксе анђӗç те,
Малтан арӑмсен
Кӗпи аркине
Çулелле йӑтса
Уççа пӑхрӗçӗ.
Арӑмсем хытӑ
Сехӗрленнипе,
Ах, турӑ! тесе,
Кӑçкӑрса йарса,
Иккӗш те çӗре
Кукленсе ларђӗç.
Вӗсене урӑх
Ним те тумарӗç,
Мӑкшелнелле май
Ута пуçларӗç.
Пӗр мана анђах
Тытса илђӗç те,

Сĕнђелнелле май
Илсе карĕç.

Карђăк.

Сан ђуну ăçта
Тăђĕ-ши ун ђух?
Йепле хăраса
Тухса каймарĕ?

Ванўк.

Çавăнпа иккен
Санăн пиђђуне
Сĕнђелпе Мăкшел
Хушшинђе тытса,
Персе вĕлĕрсе
Хăварнă тесе,
Пĕтĕм Çĕн ўсел
Шавласа илђĕ.

Микулай.

Çул çинђе вара
Теминçе тĕслĕ
Сăмахсемпеле
Манран тĕпђесе
Ыйтма тытăнђĕç.
Сана пĕр çын:
Камунис, терĕ,
Ес камунис-и,
Камунис мари?
Кала ђăннипе
Тийе пуçларĕç.
Çук, йулташсем,
Тĕрĕс мар терĕм.

Урук.

(Кантăкран аппăш килнине курса)
Авă аппа та килет?

Карђăк.

Микулай килнине
Илтнĕ пуљ ĕнтĕ?
Пиђђуне вĕлернĕ
Тенине илтсе,
Вăл та тем ђухлĕ
Макăрђĕ пуљ-ха?

Алтатти (кĕрет).

Епĕ килсе курас
Терĕм-ха тата.

Микулай.

(Ђей ĕçнĕ çĕртен тăрса)
Аťа ирт халĕ,
Тĕпелелле май?
Ђей ĕçнĕ вăхăтах
Тўрĕ килтĕн,
Мухтаса çўретĕн пуљ?

Алтатти.

(Урука çăмарта парса)
Ме, халĕ Урук,
Мункун çăмарти?
Аçушăн хытă
Макăртăн пулĕ?

Урук.

Епĕ анђах мар!
Пур те макăрђĕç.

Микулай.
Йе, ђей ĕçме лар?
Макăрнисене
Кайран калăпăр.
(Лараççĕ)
Алтатти.
Ех, пиђђе, пиђђе!
Йепле çăлăнса
Йултăн есĕ?
Ванўк.
Çавăн çинђен
Калађђĕ халĕ?
Пиђђе, малалла
Калаха ĕнтĕ?
Микулай.
Унтан ман çумри
Йапаласене,
Кăсйана ђиксе
Шыра пуçларĕç.
Кĕçтенттиноппăђ
Хулине тунипе,
Çарăмсанпала
Хăнтăрça çинђен
Ђăвашла çырнă
Кĕнекесене,
Туртса кăларса
Пăхма тытăнђĕç?
Кăсем сан мĕнле
Кĕнеке? теççĕ.
Вĕсем хам çырнă
Кĕнеке тесен,
Кăсене патша
Пур ђухнех çырнă.
Ун ђухне сан пек
Çăпталă çын,
Кĕнеке çырма
Хал çитерне-ши?
Кам çырнине ђас
Пĕлĕпĕр терĕç.
Тата хаљ канаш
Ирĕкĕ ђухне,
Мĕнле те пулсан
Кĕнеке çырни
Пури сан? теççĕ.
Халĕ çакăн пек
Пăлхав вăхăтра,
Мĕнле кĕнеке
Çырма пĕлмелле.
Пайан пĕр тĕслĕ,
Ыранах тата
Хăйне пĕр тĕслĕ
Нимĕн çырм та
Пĕлес çук терĕм.
Алтатти.
Тен ĕнтĕ çавă
Кĕнекўсемех,
Çăлса йулђĕçĕ
Сана вилĕмрен.
Еп кĕпе çума
Шыв хĕрне ансан,

Кума, пиђђуне
Вĕлернĕ тесе
Калаççĕ терĕ?
Çавăнтах ђĕре
Шарах! çурăлса,
Тĕшрĕлсе анса,
Çĕре кӳплетсе
Кайса ӳкрĕм?

Карђăк.

Темле çăлăнса
Йулђĕ ĕнтĕ вăл?
Те кĕнекисем
Çăлса хăварђĕç?
Те Калђђаксене
Епĕ ылханни
Çитрĕ вĕсене

Алтатти.

Тата малалла
Кала-ха, пиђђе?

Микулай.

Унтан ђăн кайри
Ăлава ђарса,
Мана урапа
Çине лартрĕçĕ.
Ăлавçă тата
Хамăр йалсемех,
Вырăстук Миккуђ
Ăлавех пуђђĕ.
Ку мĕнле çынне
Пĕлетни тесе
Ăлавçăсенђен
Ыйта пуçларĕç.
Те ађасене
Хĕрхеннипеле,
Те хама хытă
Йуратнипеле,
Те камуниссенђен
Хăранипеле
Камран ыйтсан та
Ырă çын терĕç.

Карђăк.

Çĕр сум укçу пулиђђен
Çĕр тусу пултăр тесе,
Ахаљ каламан çавă
Пирĕн ђăваш ваттисем.

Ванӳк.

Анне, пиђђене
Ан ђăрмантар-ха?
Вĕçне тухиђђен
Калатăр халĕ?

Микулай.

Хурт сĕрленĕ пек
Шур çар ушкăнĕ,
Хупăрласа çех
Пыђĕ Сĕнђелне.
Ӳсĕррисене
Манăн çывăха,
Пырса перĕнме
Ирĕк памарĕç.
Пĕр пит хăватлă

Тутар салтакĕ,
Пуринђен хытă
Сыхласа пыђĕ.

Карђăк.

Мана та пĕри
Есĕ тутарла
Пĕлетни терĕ те,
Тутарла калаççа
Йĕме тытăнсан,
Вăл та хĕрхенсе,
Йулташĕпеле
Вырăсла темсем
Калаçрĕçĕ те,
Ан макăр! урăх
Килмĕпĕр тесе
Тухса карĕçĕ.

Микулай.

Акă Сĕнђелне
Çитсе кĕтĕмĕр.
Урампа çуран
Утса пытăмăр.
Куçпа пăхнипе
Сехĕрленмелле.
Пĕтĕм ђиркулĕ
Сĕнђел урамне
Пăр пек шурă çар
Пырса капланнă.
Халăхваррипе
Мана йеррипе,
Пĕр ђăваш патне
Илсе кĕђĕçĕ,
Хăйсен штапне,
Коментант патне...

Карђăк.

Коментант мĕн вăл?

Ванўк.

Салтак пуçлăхĕ.

Алтатти.

Каласа пĕтет-и,
Халĕ пиђђе?
Мана анне ђас
Таврăн тенĕђђĕ?
Кайма та вăхăт
Çитет пуђ ĕнтĕ?

Карђăк.

Алтатти вара...
Хăçан килсен те,
Ђасăх кайасшăн?
Пăртак тăр ĕнтĕ!
Темех тумĕç-ха?..

Алтатти.

Хăвăртрах кала
Хађ еппин, пиђђе?

Микулай.

Шур çар пуçлăхсем
Пилĕк ултă çын,
Йĕркипе ларса
Тем калаçаççĕ!
Вăрах тăмашкăн
Йурамасть, теççĕ...

Коментант: Ку кам?
Ма тытса килтĕр
Ку çынна? тесе
Ыйта пуçларĕ.
Ăна çул çинђе
Соттăв йатлă çын
Камунис, тесе
Тыттарђĕ пире.
Хăй таçта кайса
Çухалђĕ вара.
Çынсенђен ыйтса
Тĕпђерĕмĕр те,
Камран ыйтсан та,
Лайăх çын, теççĕ,
Терĕç салтаксем.

Ванўк.

Кам, пулнă-ши, вăл?
Пирĕн Ўселсенђе
Соттăв йатлă çын
Çук ĕçке вара.
Исоттăв пур та...
Вĕсем каламĕç.

Алтатти.

Кам каласан та,
Сывă йулнă-ха?
Çиленсе çўрес
Пулмасть ĕнтĕ?
Тен тата темсем
Пулмалла халĕ?
Ђасрах каласа
Пĕтер-ха, пиђђе?..

Микулай.

Унтан ман хайхи
Кĕнекесене,
Вĕсем те илсе
Вуласа пăхрĕç.
Урăх нимех те
Ыйтса тăмарĕç,
Мана ирĕке
Кăларса йађĕç.
Урама тухсан
Пĕр шур салтакпе
Кашкăр Халилĕ
Хире тухрĕç те
Кашана çавсем
Илсе йулђĕçĕ.
Персе вĕлерме
Тухаç пуђ тесе,
Питĕ хăрарăм
Вара вĕсенђен.
Унтан çул çинђе,
Пĕђĕккĕ Иван
Пиђђе Мĕкĕти
Хăй лавĕ çине
Ђĕнсе лартрĕ те
Пĕр ик сехетре,
Çĕнĕ Ўселне
Çитсе укрĕмĕр.

Киле килтём те
Тёлёнсе карăм,
Пирĕн пӳрт ăшĕ
Пуш-пушă тăрат.
Йал йышне.
(Йулашки сăмах)
Ех, тăванăмсем!
Хурăнташăмсем!
Йалăм йышăмсем!
Пёлёш тантăшсем!
Аçта кайсан та,
Таçта пулсан та,
Есĕр пурпĕрех
Асма килеттĕр.
Пуçри шухăша
Хăвăр йенелле,
Вăйлă тăвăл пек,
Туртса илетĕр.
Тĕнђе кисренсе
Тăнă ђухне те,
Мана йаланах
Сывă хăвартăр.
Темле хăрушă
Тăшман аллинђен,
Ыр çын вырăнне
Хурса хăтартăр.
Ăçта пулсан та
Ырă кăмăлпа
Хăна пек пăхса
Вăрттăн сыхларăр.
Пĕтĕм кăмăлпа
Тав тăвап сире!
Есĕр ыр сунни
Йултăр ĕмĕре.

## 1905-6-мĕш çулта йурланă йурă.

Пирĕн Раççей питĕ пысăк,
Ах турă!
Виçĕ хĕрри ун курăнмаст,
Тур çырлах!
Улпуђĕсен хырăмĕсем,
Ах турă!
Пиђĕке пек тулса тăрат,
Тур çырлах!
Пуçлăхĕсем, политсисем,
Ах турă!

Пуҫа ухса ҫех тăраҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Куҫĕсене пăхма хăрăн,
Ах турă!
Ҫĕлен пекех пăхкалаҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Аллисенђи саламатсем,
Ах турă!
Ним айăпсăр ҫаптараҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Кăкрисенђе миталĕсем,
Ах турă!
Йăлтăртатса ҫех тăраҫҫĕ;
Тур ҫырлах!
Йыттисене йуратаҫҫĕ,
Ах турă!
Шур кулађă ҫитереҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Хура халăх питĕ ђухăн,
Ах турă!
Нумайĕшĕ выҫă лараť,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей тырри пулли,
Ах турă!
Ниҫта ђиксе пĕтерес ҫук,
Тур ҫырлах!
Хулисенђе йалĕсенђе,
Ах турă!
Вĕҫҫĕр хĕрсĕр ыткалакан,
Тур ҫырлах!

Пирӗн Раççей питӗ ҫапла,
Ах турӑ!
Пӗтӗм ҫынна тӗлӗнтерет,
Тур çырлах!
Ӗç халӑхин йунӗсене,
Ах турӑ!
Сӗлӗх пекех сӑхса тӑрать,
Тур çырлах!
Пирӗн Раççей питӗ пуйан,
Ах турӑ!
Никам шутне тупайас çук,
Тур çырлах!
Хулисенҫе таварӗсем,
Ах турӑ!
Лавкисене шӑнӑçмаççӗ,
Тур çырлах!
Ҫухӑнӗсем темӗн ҫухлӗ,
Ах турӑ!
Çипуçӗсем çӗтӗк-çатӑк,
Тур çырлах!
Вӑрӑм çӳççем ҫиркусенҫе,
Ах турӑ!
Упа пекех çухӑраççӗ,
Тур çырлах!
Виллинҫен те ҫӗрринҫен те,
Ах турӑ!
Тӑпӑлтарса çех илеççӗ,
Тур çырлах.
Пупӗсемпе тийеҫҫуксем,
Ах турӑ!

Вăрçа вăрçа çех пÿлеççĕ,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей шкулсенђе,
Ах турă!
Пуршуйсем çех вĕренеççĕ.
Тур çырлах!
Хĕресђене, ĕç çыннине,
Ах турă!
Ăçта пырсан та çул памаççĕ,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей вăрмансенђе,
Ах турă!
Шуђĕ те çук пурлăх çĕрет,
Тур çырлах!
Хура халăх çурђĕ йĕрĕ,
Ах турă!
Хăрăк-харăк тÿнсе тăрат̆,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей питĕ хайар.
Ах турă!
Ĕмĕр-ĕмĕр йун йухтарат̆,
Тур çырлах!
Тĕрмисенђе ђăп туллийех,
Ах турă!
Айăпсăр çын асап курат̆,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей çĕр шывĕнђе,
Ах турă!
Çăмăр пекех куççул çăват̆,
Тур çырлах!

Пирĕн Раççей вăрçă вăрçат̆,
Ах турă!
Хисеп те çук тăлăх тăрат̆,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей питĕ тĕттĕм,
Ах турă!
Пĕтĕм тĕнђе кулса тăрат̆,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей питĕ пысăк,
Ах турă!
Вĕçĕ-хĕрри ун курăнмаст̆,
Тур çырлах!
Улпуђĕсен хырăмĕсем,
Ах турă!
Пиђĕке пек тулса тăрат̆,
Тур çырлах!

## Т а в.

Çут çанталăк çут тĕнђе
Çуна çуна çутăлсан
Йерипеле сивĕнсе
Тинĕспеле, çĕр пулсан
Тухса выртнă çĕр çине
Çĕр пысăккĕш пĕр çĕлен.
Çĕлен ури пĕрте çук
Çĕлен çитмен çĕр-те çук;
Çакă çĕрĕн çийĕнђе
Çĕлен сăхман çын та çук.
Çутă хĕвел çутти пек
Вĕççе çӳрет пĕр кайăк;

Пуçне çĕклет çав çĕлен
Кайăк çине пăхмашкăн.
Çĕлен сăнни çитес çук
Çав кайăка сăхмашкăн.
Çĕлен çине пăхат кайăк
Хăйĕн çĕр пин куçĕпе.
Пĕтĕ халĕ пĕрре çĕлен
Ĕмĕрлĕхе пуçĕпе.
Çĕлен ђĕтресе выртӑт
Çав кайăкран хăраса,
Кайăк çиçĕм пек çӳрет
Ђăнлăх çутти шыраса.
Кайăк çутти кансĕрипе
Çĕлен çĕре кĕринђђĕ,
Çав кайăкран хăранипе
Çĕлен çĕрте çĕринђђĕ.
Кайăк çӳлтен çĕре ансан
Çĕлен куçне уçаймĕ,
Çав кайăкран хăранипе
Вырăнĕнђен куçаймĕ
Кайăк ђĕри пин пулђĕ
Çĕлен ђĕри çук пулђĕ;
Çĕрпе шывăн пиђĕ çине
Мулшăн тăкнă йун тулђĕ.
Кайăк ђасрах килинђђĕ
Çĕлене вĕлеринђђĕ,
Ђăн ђăнлăха пĕлтерсе
Пире тĕлĕнтеринђђĕ.
Йунпа куççуљ нумай йухат
Çĕлен çĕрте выртнăран:

Çĕлен ӳҕе йун йухтарат
Кайăк анса çыртнăран.
Çĕлен пĕрре вилĕ-ха,
Ĕмĕрлĕхе пĕтĕ-ха.
Çĕлен халĕ çĕр çинҕе
Кунĕн çĕрĕн йун ĕçет,
Кайăк çĕрĕн вĕçне-хĕрне
Ылттăн çунатпа вĕçет.

## Ленин.

Камăн варĕнҕе
Ӳтленсе пулса
Кам кăкри сĕтне
Çисе усрĕн-ши?
Кам ҕĕрçи çинҕе
Выљҕаса кулса
Хĕвел шевли пек
Йăлт-йăлт сикрĕн-ши?
Канăçлăхпала
Ултав суйана
Ывăç çинҕи пек
Курса тăраттăн.
Мĕн пур хурлăхлă
Асаплă йăха
Вут йупа пулса
Йертсе пыратăн.
Вут çулăмĕ пек
Ҕĕлхӳ çăварă
Йепле сивĕнсе
Ҕĕнми пулҕĕ-ши?
Тĕттĕм пуçлăхĕ
Хăрушă вилĕм
Йепле сан патна
Хăйса пыҕĕ-ши?
Тулли уйăх пек
Çут сăн сапатă
Мĕншĕн хăвăртах
Тĕскĕмленҕĕ-ши?
Пурне те курса
Тăракан куçу
Йепле хупăнса
Тĕттĕмленҕĕ-ши?
Пĕтĕм çĕр çинҕи
Ĕç халăхшĕн
Сан йат ҕăн-ҕăнах
Ҕăн çутă çăлтăр.
Аслă, мухтавлă,
Хăватлă, ҕаплă,
Влатимĕр Илйиҕ
Уљйанăв Ленин
Хĕвел çутти пек
Çутă йат пултăр,
Çутăлса тăтăр,
Ĕмĕр сыв пултăр!

## Ленин шухӑшӗ.

Санӑн пӯҫӑнти вӑйлӑ шухӑшсем,
Аслати саспе ҫӗр ђӗтренӗ пек,
Патшасен тискер усал ӗҫсене
Тӗпӗ йӗрӗпе кисрентереҫҫӗ.
Пӗтӗм ҫӗр ҫинђи йӗркесӗрлӗхе,
Туппа пенӗ пек, ишсе пыраҫҫӗ,
Мӗн пур ӗҫ халӑх ирӗклӗхӗшӗн
Хурҫӑ шӑратса никӗс хураҫҫӗ.
Санӑн хӑватлӑ ђаплӑ шухӑшу
Хӗвел пек ҫутӑ, ҫӑлтӑр пек ҫӳлте.
Ҫут ҫантрлӑкра вӗҫҫе ҫӳреме
Нимле емел те тытса ђарас сук.
Пӗлӗт йухнӑ пек ирӗккӗн йухма
Тем пек хӑват та ҫулне пӳлес ҫук.
Тем ђухлӗ пысӑк тинӗссем ҫинђен
Урлӑ та пирлӗ тӑвӑл пек ҫӳрет.
Тимӗр картасем, вӑрмансем урлӑ
Ҫил пек ыткӑнса ҫиҫӗм пек кӗрет.
Тинӗс ҫийӗнђи вӑйлӑ хумсем пек
Пур йенелле те пырса ҫапӑнать.
Мӗн пур ҫӗр ҫинђи етем ӑрӑвӗ
Ҫавӑнпа сана пур те асӑнать.

## Инттернатсионал кунӗ.

Авалхи кивӗ ылханлӑ,
Йунлӑ куҫҫуллӗ, ултавлӑ,
Хӑрушӑ ирсӗр канӑҫсӑр,
Етем ӑруне макӑртса,
Хӑратса йӗртсе, хуйхӑртса,

Ĕç çыннисене тăлласа,
Хура халăха туласа,
Пурăннă пăсăк йĕркене,
Хĕрлĕ йалав хăвађĕпе
Пур хĕн хурлă халăхсем
Пĕтĕм тĕнђипе пĕрлешсе,
Çапса çĕмĕрсе пĕтерсе,
Çĕнĕ канăçлă, савнăçлă,
Лăпкă илемлĕ ырлăхлă,
Ырă йĕркесем тăвăпăр.

* * *

Харăс-харăс çĕкленсе
Кĕрĕс-кĕрĕс сикĕпĕр
Çитес тенĕ вырăна
Çитме пулнă çитĕпĕр.
Хăшĕ çӳлтен вĕçĕпĕр,
Хăшĕ шывран ишĕпĕр,
Пĕлĕт ӳснĕ йевĕрлĕ
Сехеђĕпе ӳсĕпĕр:
Тума пулнă тăвăпăр
Илме пулнă илĕпĕр,
Пур çĕр çинђи халăха
Пĕрлештерме пĕлĕпĕр.

## Ађа çуртĕнђи тăлăх ађа.

Ђухăнпа тăлăх
Ађи пăђисем
Ĕмĕр çын хурри
Пулса ӳсеђђĕç,
Мĕн пур хĕн-хура
Асапа, хуйха,
Йĕрсе макăрса
Вĕсем тӳсеђђĕç.
Пур хăрăк-харăк
Çĕтĕк-çатăка,

Вĕсен çийĕнђе
Кураттăмăрђђĕ.
Выртса çӳрекен
Татăк-кĕсĕке,
Килĕрен килле
Шыраттăмăрђђĕ.
Хал ĕнтĕ епĕр
Канаш ирĕкпе,
Çын ађи пекех,
Ырлăх куратпăр.
Ленин çулĕпе
Вут пек пыратпăр,
Çпектаккăлсем,
Каççем тăватпăр.
Кунĕ кунĕпе
Çĕрĕ çĕрĕпе,
Çыру çыратпăр,
Вăйă выђатпăр.
Çиçĕм çиçне пек
Ђаткă сикнĕ пек,
Çаврăнкалатпăр,
Сăмах калатпăр.
Тăвас ĕçе те
Лайăх тăватпăр,
Сăмахсене те
Аван калатпăр.
Тавта пуç сана,
Совет вăлаçĕ,
Пире хĕрхенсе
Пăхса тăнăшăн,
Ђаплă ĕç халăх
Патшалăхĕнђе,
Ађа çурђĕсем
Нумай тунăшăн.

## Йупа уйăхĕнђи революци.

Аçа пек те çиçĕм пек,
Иртсе карĕ йуп уйĕх,
Куççулсемпе йунсемпе
Аслă ђаплă кунсемпе.
Аслати пек кĕрлесе,
Пĕтĕм çĕре кисретсе,
Мулăн вăйне-хăватне
Сив тытнă пек ђĕтретсе.
Пайанхи кун ĕç çыннин
Ђăнах питĕ ђаплă кун,
Пуршуйсенĕн пуççене

Харăс тăрса çапнă кун
Ĕç халăхин хăвађĕ
Пайанхи кун палăрђĕ,
Пайан мулăн хăвађĕ
Ĕç халăхне парăнђĕ.

***

Ĕмĕрхи тискер
Усал йĕркене,
Кĕленђе пекех,
Ватса пăрахрĕ,
Мĕн пур хĕн хурлă
Асаплă йăхăн,
Ылхан мăшкăлне
Çапса салатрĕ,
Тимĕр сăнђăрне
Татса ывăтрĕ,
Ђăнлăх çуђ çине
Туртса кăларђĕ.

Ирĕклĕхпеле
Канăçлăхăнне,
Хурçăпа хыврĕ
Никĕсĕсене,
Хĕрлĕ йалавпа
Пĕвесе хуђĕ,
Пуршуйсен пăсăк
Йун çулĕсене.
Ĕмĕр ылханлă
Мăшкăлтан çăлђĕ,
Ђухăнсемпеле
Ĕç çыннисене

***

Çавăнпа пайан
Хĕрлĕ йалавсем
Вут çулăмĕ пек
Çунса тăраççĕ.
Урамсем тăрăх
Кăткă пек халăх,
Хурт уйăрнă пек
Хăпса пыраççĕ.
Йурă сассипе
Мусăк сассисем,
Аслати сас пек

Кĕрлесе тăраť.
Харăс çĕкленсе
Йĕрки йĕркипе
Пĕлĕт йухнă пек
Çар халăх пыраť.
Çӳл вырăн çинђе
Ђаплă сăмахсем
Аçа çапнă пек
Вут кăлараççĕ
Таçти тинĕссен
Леш йенђисене,

Сассисемпеле
Илтĕнтереççĕ,
Совет ирĕкĕн
Хăвађĕпеле,
Пĕтĕм тĕнђене
Тĕлĕнтереççĕ.
Пуршуйсемпеле
Мул хуçине,
Çывăрмасăрах
Тĕллентереççĕ.

## Ђăваш сăвви.

Авал патша пур ђухне
Пирĕн ђăваш йалсенђе
Вăрттăн çĕр те пытанса
Йăвашланса вăтанса
Пĕр сар кайăк пураннă.
Ăна пирĕн ђăвашсем
Çĕрне кунне пĕлмесĕр,
Хĕлĕн çăвĕн ĕçлесе
Хырăç-марăç тўлесе
Ĕçкĕсенђе, туйсенђе,
Уйавсенђе, уйсенђе
Ађашласа усранă.
Суккăр патша тарçисем
Ăна сума-сумасăр
Ним вырăнне хумасăр,
Кулса тăнă хурласа
Хуласене йамасăр
Çўреме çул памасăр.
Халĕ ĕнтĕ вăл кайăк
Хулара та пурăнаť.
Таçта çĕр шывсенђе те
Йăлтăртатса курăнаť.
Сасси лайăх йурлама

Йурри хитре итлеме,
Револутси ырлăхпе
Хăй тытăнђĕ питлеме.
Йурла-йурла сар кайăк
Шăпђăк сас пек сассупа
Санăн йунна ĕçекен
Тăшман сăнни хуçăлђĕ.
Халĕ сана çӳреме
Çĕр çийĕнђе çул пулђĕ.

## Ђĕмпĕрти ђăваш шкулĕ.

Халĕ Ђĕмпĕр хулинђе,
Сĕве шывин хĕрринђе,
Ту хыçĕнђе айлăмра,
Нӳрлĕ вырăнта лăмра,
Çĕве тăвĕ сĕвекрех
Айлăмтарах тĕлĕнђе,
Çăлсем сиксе тухакан
Вăрттăнтарах вырăнта,
Йепле ђăваш шкулĕ
Сат пахђисем хушшинђе
Ђĕмпĕрĕн пĕр хĕрринђе
Сĕве тăвин ђĕрçинђе
Тем пысăккĕш капланса
Таçтан таçта сарăлса
Пĕтĕм ђăваш халăхне
Витĕр курăнса ларать.
Йăвăç хушшисемпеле
Йешĕл çулçă айĕнђен
Кукăр-макăр кукăрлса

Çӳрет çулсем-сукмаксем.
Тĕл-тĕл йăвăç кутсене
Йăвăç сулхăнĕсене
Хĕвел пĕçерменнĕрен
Туса хунă хăмапа
Ларса тăмалли саксем.
Вĕренекен аҙасем
Саксем çине сулхăна
Туха-туха лараççĕ,
Йе йăвăççен хушшипе
Симĕс çулçă айĕпе
Алла-аллăн тытăнса
Пăшăлтатса калаçса,
Каллĕ-маллĕ çаврăнса
Уткаласа çӳреççĕ.
Çамрăк ĕçҙен ҙĕрисем
Вутла çунса тăнă ҙух
Ир тытăнса касҙенех
Вĕркĕшеççĕ çиçĕм пек
Ывăнасса канасса,
Ассене те илмеççĕ.
Хăш йенелле пăхсан та
Пĕр май шевле выҙаççĕ,
Аçта пăхнă вăл тĕлте
Кĕнекесем вулаççĕ.
Сĕве шывин хĕрне те
Ҙупа-ҙупа анаççĕ,
Пĕр-пĕринпе йăпанса
Кил шухăшне манаççĕ;
Вуттине те касаççĕ

Тăприне те ђаваççĕ,
Тĕрлĕ пахђа çимĕç те
Тыр-пулă та тăваççĕ.
Пăшахаççĕ пиçеççĕ
Ĕçпе пиççе ӳсеççĕ,
Шур тутăрпа питсене
Шăла-шăла илеççĕ.

## Вăрман касни.

(Некрассăвăнни майлă).

Йĕрет ђĕкеççи
Сехĕрленнипе,
Вăрман каснине
Курса хăраса
Ђеђен аллипе
Куççулне шăлаť,
Ађаш ђĕрипе
Ђунтан хуйхăраť.
Йепле йăвăççем
Шатăртатнине,
Айăкран анђах
Вăл пăхса тăраť.
Унта лăпсăркка
Кăтра хурăнсем,
Шĕвĕр тăрăлă
Ватă ђăрăшсем,
Çурта пек тӳрĕ
Хырсем, ăвăссем,
Çемçе çулçăлă
Сарă çăкасем,
Симĕс çулçăлă
Турађĕсене,
Вĕл-вĕл выђатса
Вĕлтĕртеттерсе,
Лăс-лăс силлесе
Кашласа ларса,
Пĕтĕм çĕр шыва
Илем кӳређђĕç.
Вĕсен хӳттинђе
Хăйне пĕр йышши
Вĕт-шак йăвăççем,
Тутлă мăйăрлă
Лутра шĕшкĕсем,
Шапшур ђеђеклĕ
Улма йăвăççем,
Çĕмĕрт йăвăççем,
Мерђђен пек хĕрлĕ
Палан çупкăнсем,
Тем пек илемлĕн
Курăнађђĕçĕ.

Ĕшнесемпеле
Усланкăсенҫе
Теминçе тĕслĕ
Симĕс курăксем,
Вутăн та хĕмĕн
Хитре ҫеҫексем,
Ытарма та çук
Ыррăн курăнса,
Ҫĕкеççи кусне
Илĕртетҫеçĕ.
Вăрман ăшĕнҫе
Çулçă хушшинҫе
Хăйсен йуратнă
Патшалăхĕнҫе,
Хĕсепĕ те çук
Вĕçен кайăксем,
Ҫăрик те ҫăрик
Йурă сăвăсем,
Мусăк сасси пек
Йурлаҫҫĕç вĕсем.
Вăрман айĕнҫе
Уллах вырăнта,
Тăват уралă
Кайăк-кĕшĕксем.
Вăрттăн тытанса
Пурăнаҫҫĕçĕ;
Ҫăпăрт та йапăрт
Ҫупса çӳреҫĕç,
Йăлттин те йăлттин
Сиккелетҫеçĕ.

Акă хăвăртах
Çынсем пыҫĕç те,
Пурттисемпеле
Каса пуçларĕç.
Йăвăççи ӳкет
Çĕре кисретет,
Çынни савăнса
Тинех пĕтрĕ тет.
Кӳп те кӳп туса
Ӳкет кӳплетсе,
Иккĕн те виççĕн
Харăс крĕслетсе.
Çулçă татăлса
Кайăк пек вĕçет,
Тĕнҫе кисренет
Çĕр йепле тӳсет.
Йĕрет, йăнăшаť,
Улаť, шăйлатаť,
Шăмми-шаккине
Шăмă пек ватаť.
Шăй-шăй шăхăраť
Тем пек çухăраť,
Çине тинкерсе
Пăхма ҫун хăраť.
Мулкаç хăраса
Вĕлт çеç сирпĕнҫĕ.
Тилĕ шăтăкне
Тарса пытанҫĕ.
Хытă хăраса
Сехĕрленнипе,

Кайӑк ҫунатне
Йӑлт-йӑлт сиктерет.
Вӑрман ҫӗмрӗлнӗ
Хӑрушӑлӑха,
Мӗн пур кайӑк-кӑш
Пур те систерет.
Хӑранипеле
Шартах ҫикнипе,
Кӑткӑ йӑвине
Тем те пӗр туртать.
Темӗн пысӑккӗш
Ҫӳпӗ ҫапӑсем,
Ђун хавалӗпе
Ђӗтресе ҫыртать.
Тӑшманӑн ҫилли
Питӗ хӑватлӑ,
Ҫавӑнпа та вӑл
Ҫӗр хуҫи йатлӑ.
Ҫулса тӑкнӑ пек
Йӑвӑҫ ӳкерет,
Тӗнђе илемне
Ђасах пӗтерет.
Ҫӗрҫи вӗҫнӗ пек
Турпас ыткӑнать,
Ђавка ушкӑн пек
Ҫулҫӑ тӑкӑнать.
Ђӗллӗн те ђӗллӗн
Турат ҫурӑлать,
Вӑрман хир пулса
Ҫаралса йулать.

Хӑрӑк-харӑксем
Шӑрт-шарт! ванаҫҫӗ,
Кӗленђе пекех
Пӑр саланаҫҫӗ.
Пур йӑвӑҫран та
Паттӑр йумана,
Тепӗ тымарпе
Ђавса кӑларђӗҫ.
Унтан пурттисем
Ҫӳлелле сиксе
Туратсем ҫине
Ыткӑнса ларђӗҫ.
Ватӑ мӑн хырра
Малтан касрӗҫӗ,
Унтан тӑрринђен
Вӗренпе ҫыхса,
Ушкӑнӗпеле
Туртса ӳкерсе,
Ҫӗр ҫумне лайӑх
Ҫыпӑҫтарасшӑн,
Ҫине хӑпарса
Йӑлт-йалт сикрӗҫӗ.
Унта урӑх та
Нумай пулђӗҫӗ,
Ђун хурланмалли
Хурлӑхлӑ ӗҫсем.
Ҫӑмӑр ҫунӑ пек
Куҫҫул сирпӗтрӗҫ,
Кайса ӳкнӗ ђух
Йӑвӑҫҫен кутсем.

Çут çанталăкри
Çĕр-шыв илемсен,
Питĕ асаплă
Пулђĕç вилĕмсем.
Ним çук вăхăтра
Куçран çухалђĕç,
Вĕсен çийĕнђи
Илем кун çулсем.
Çăкасемпеле
Шурă хурăнсен,
Ђĕрĕлех сӳрĕç
Ӳт тирĕсене,
Кукрисем кирлĕ
Пулĕçĕ тесе,
Ђавса кăларђĕç
Тымарĕсене.
Хĕвел çĕр хыçне
Анса пытансан,
Тин ђарăнђеçĕ
Пvртă сассисем.
Хурансем çинђе
Пăсланса сиксе
Вĕре пуçларĕç
Ђейсем йашкисем.
Хурăн хупписем
Сарса пăрахса,
Ларта пуçларĕç
Унта ђашкăсем.
Унтан ункă пек
Çаврăнса ларса,
Тĕпсĕр лакăма
Апат тултарса,
Тумтирĕсене
Çĕр çине сарса,
Çывра пуçларĕç
Харăлтаттарса.
Çĕмрĕлнĕ вăрман
Çине пĕлĕтрен,
Уйăхĕ пăхать
Тем пекех хитрен.
Çӳлте çалтăрсем
Йăлтăртатаççĕ,
Кайăксем салху
Ђăвăлтатаççĕ.
Касса ӳкернĕ
Катмар хурăнсем,
Йаштака тӳрĕ
Хитре йăвăссем,
Урлă та пирлĕ
Тăсăлса çĕрте,
Нимĕн пĕлмесĕр
Выртаççĕ çĕрле.
Çулçисем шăппăн
Ђăштăртатаççĕ,
Кайăксем вăрттăн
Йăштăртатаççĕ.
Вилнĕ йăвăççен
Сисенђе, вĕлт вĕлт!
Çулçă мĕлкисем
Вĕлтертетеççĕ.

Тăлăха йулнă
Кайăк ђĕпписем,
Мĕскĕн сасăпа
Ђĕмпĕлтетеççĕ.
Вĕсен сассипе
Ашшамăшĕсем,
Урлă та пирлĕ
Ђупса çӳреççĕ.
Хруђăкисем те
Тăманисем те,
Хăй ђĕппишĕн хăй
Пур те йĕреççĕ.
Куккук та питĕ
Салху авăтаť,
Вăл та хуйхине
Лайăх пĕлтерет.
Тем пек усăлă
Вăрман сана та,
Етем алли вăл
Ђасах пĕтерет,
Ђĕкеççи куççуђ
Ахаљ йухман çав
Тĕнђе илемне
Вăл лайăх курнă.
Çавăнпа та вăл
Йĕрсе куђанса,
Куççуђ йухтарса
Ђунтан хуйхăрнă.

**Хирте.**

Ут-ут, лашам, ут, лашам
Тĕрмĕш, тĕрмĕш малалла!
Ирхи нӳрпе анана
Ђасрах сухаламалла.
Ана выртаť сарăлса
Ĕçлес пулаť хĕрӳллĕ.
Шурăм пуç те шуралђĕ,
Васкас пулаť хирелле.
Ăшă лăпкă çăмăр та
Çĕр кăкрине шăварђĕ,
Ту хысĕнђен хĕвел те,
Йăлтăртатса хăпарђĕ.
Йурă, сăвă сассисем,
Пĕтĕм хире йан йараť.

Ут-ут, утçăм, ут, утçăм,
Çак ĕç пире трантарать.
Ирхи ырă çанталăк,
Сывлать ырă сывлăшпа,
Пĕр тытăннă ĕçĕме
Пĕтерес̧ĕ сывлăхпа.
Çынсем питĕ васкаса,
Ўпне ўксе ĕçлеççĕ,
Йулас марҫҫĕ çын хыçне
Çынпа пĕрле ĕçлесҫĕ.
Суха туса пĕтерсен
Утă çулма тухăпăр,
Сана валли хĕл каçма
Симĕс курăк пухăпăр.
Унтан хĕлле сив ҫух
Тăраниҫҫен канăпăр,
Ҫипер ĕçсе çийĕпĕр
Пур асапа манăпăр.

## Улах.

Лайăх сире, аҫасем,
Хĕлле вăрăм каçсенҫе,
Улахсенҫе йĕркипе
Ларнă ҫухне сак çинҫе.
Кĕнҫеле те арлатăр,
Тĕрĕсем те тăватăр,
Аҫаш алăрсемпеле
Пĕр пĕрне те саватăр.
Анҫах телей çĕр çинҫе
Темшĕн пĕр пек мар çавă?

Питĕ нумай çĕр çинђе
Ђухăнĕ те тăлăх те!
Вĕсемшĕн пит хурлăхлă
Уйавĕ те улах те!
Халĕ ђухăнсемшĕн те
Пурăнăç çул уçăлђĕ,
Вĕсен йунне ĕçекен
Тăшман çынни хуçăлђĕ.
Хăйсем майне пĕлсессĕн,
Халĕ вĕсем ђăн малта,
Канаш ирĕкĕпеле
Пуйанĕсем айалта.

### Кăрлађăн 9-мĕшĕ.

Пайан Питĕр хулинђе
Выçă виле пуçланă
Ĕç çыннисем пĕрлешсе
Турăшпала пуппала
Йĕрсе çырнă хутпала
Патша сăнне çĕклесе
Йĕре-йĕре ӳсĕклесе
Вилсе пĕтес мар тесе
Çăкăр ыйтса илесшĕн
Патша патне кайаççĕ.
Хула урамваррипе
Патшан мухтав йуррипе
Çар халăх пек ђăп пулса
Йанраттарса йурласа
Куççулсене йухтарса
Хурт пек сырса пыраççĕ.
Хăйсен хуйхи-суйхине

Улпуђёсем суйнине,
Раççей тискер ёççене
Халăх лайăх туйнине
Калас теççĕ патшана.
Анђах патша, тĕттĕм куç,
Курмасť вĕсен хуйхине,
Пĕлмест халăх асапне,
Çаварăймасť йăхине.
Çав куççулĕ çынсене
Ђăн асаплă ђунсене
Хула урам варрине
Йухтарат вăл йунсене.
Ĕç халăхне хăйĕнђен
Ĕмĕрлĕхе пистерет,
Хăйĕн тискер кăмăлне
Питĕ лайăх систерет.

## Тăвансем.

Ĕç çыннипе хресђен,
Иксĕмĕр те пит ĕсђен:
Епĕ тимĕр шакатăп,
Есĕ пĕр май çĕр ĕçлен.
Пирĕн пĕрле йуратса,
Килĕштерсе пурăнни—
Вилĕм путсĕр пуçлăхшăн
Йуна ĕçекен йăхшăн.
Асапланса еп çĕртен
Тимĕр-тăмăр кăларап,
Мĕскер кирлĕ пулсан та
Епĕ сана паратăп.

Пирĕн куçсем пĕр пĕрне
Питĕ ăшшăн пăхаççĕ.
Епĕр пĕрле тăмасан
Пирĕн йуна сăхаççĕ.
Ĕç çыннипе хресђен
Епĕр иккĕн пĕр тăван,
Пирĕн кăкăр тĕреклĕ,
Алă питĕ хăватлă.
Епĕ пĕр май шаккатăп,
Тĕрлĕ хатĕр тăватăп,
Есĕ унпа çĕр ĕçлен
Пару-илӳ тикĕслен.

## Ђăваш вĕрененекенсене хисеплесе.

Курăп-ши, çук-ши
Епĕ вилиђђен
Мускаври ђăваш
Çамрăксене?—
Вут çулăмĕ пек
Вĕри ђĕреллĕ
Револђутсийĕн
Çăлтăрĕсене?
„Ĕçлекенсенĕн
Сасси“ çийĕнђе
Курса савăнса
Вĕсен ĕçсене,
Çунатăм пулсан—
Вĕççе ӳкĕттĕм,
Асма килнĕ ђух

Куçсен умсене.
Те Мускав ђапĕ
Пит илĕртет,
Те сăвăмсем пит
Выљљантараççĕ.
Вата йенелле
Сулăннă пуçма
Темле ĕçсем пит
Куљљантараççĕ.

**Комун шкулĕнђи ађасене.**

Ђĕкеç ђĕлхи пек
Ђĕлхĕрсемпеле
Кунĕ кунĕпе
Ђăвăлтататтăр.
Шăнкăрђ сасси пек
Сассăрсемпеле
Кăмăла хытă
Савăнтараттăр.
Кунĕ-кунĕпе
Çĕрĕ-çĕрĕпе
Вĕллери хурт пек
Йăшăлтататтăр.
Хăвăра пăхса
Тăракансене
Çулелле сиксе
Йăпăлтататтăр.
Комун шкулĕн
Пысăк çуртĕнђе
Пĕр ывăнмасăр

Ђупса çуреттĕр.
Револђутсийĕн
Çулăмĕ çинђе
Вут хĕлхем пек
Çунса ӳсеттĕр.
Хăвăра камсем
Хыт йуратнине,
Çамрăк пулсан та
Лайăх сисеттĕр.

## Камунисăм.

Çил çунатлă, вут ђĕлхелĕ
Камунисăм,
Пур çĕре те çитсе ӳкет
Санăн сисĕм.
Пуршуйсенĕн ђĕрисене
Вут хыптарат̆,
Ĕç çыннипе хресђене
Хăват парат̆.
Хăвађĕпе пур çынна та
Тĕллентерет.
Ђуралăхăн танатине
Пăр салатат̆.
Ылханлăха кĕленђе пек
Персе ватат̆.
Çĕрте çӳрет вут çулăм пек
Çулăмланса,
Çӳлтен вĕçет кайăк пекех
Çунатланса,
Шывра ишет тинĕссене
Хумхантарса.

Пĕр пуршуй та хăтăлас çук
Унтан тарса.
Пуҏ тĕле те çиçĕм пекех
Çитсе ўкет.
Вутлă-хĕмлĕ çулăмланса
Ђатки сикет.
Çут хĕвел пек пĕтĕм çĕре
Çутăлтараҭ,
Емĕр тĕттĕм етем йăхне
Çутă параҭ.
Туррисене, пупĕсене,
Тĕнĕсене,
Вăл хăвăртах персе хуçĕ
Тунисене.
Пуршуйсемпе кулаксенне
Мулĕсене,
Тимĕр карта карса хураҭ
Çулĕсене.
Пур çĕр çинђи ĕç халăхне
Пĕрлештерет,
Харăслатса пуршуйсемпе
Кĕрештерет.
Ађисене ашшамĕшпе
Тавлаштараҭ.
Етем йăхне пурăнăçпа
Паллаштараҭ.
Ун вăй хăват сехеђĕпе
Ўссе пыраҭ
Ун хăватне пĕтĕм халăх
Сиссе тăраҭ.

Çил çунатлӑ вут ђӗлхелӗ
Камунисӑм,
Çиçӗм пекех çиççе çурет
Унӑн сисӗм.

## А ђ а – ђ у х.

Акӑ манӑн йал,
Акӑ манӑн çурт,
Акӑ еп йепле
Пӗђик çунапа
Ту пуçӗнђен,
Ђӑн ђӑнкӑ çӗртен
Пӗр хӑрамасӑр
Йарӑнатӑп-ха.
Çуна пӑрӑнса
Кайса ӳкрӗ те,
Хӑйакӑн выртса
Шуса анатӑп.
Пӗтӗм ӳт-пӳпе
Аллӑм урампа,
Шыва ђӑмнӑ пек,
Йур ӑшне ђӑмрӑм.
Акӑ йурпала
Çапкаланатӑп,
Алсапа хама
Шаплаттаратӑп.
Манӑн йулташсем
Ман çийа пӑхса,
Ахӑлтатса çех
Кулса тӑраççӗ.
Сивви те сивӗ,
Тӗттем те пулнӑ.
Епӗ выђаса
Пит каçа йулнӑ,
Хам шӑннипеле
Сиксе ђӗтретӗп.
Мӗн туса тӑрас,
Кайас пуђ, тетӗп.
Уйӑх та çутӑ,
Çӑлтар та нумай,
Йӑлтӑр та йӑлтӑр
Йӑлтӑртатаççӗ.
Ађа-пӑђасем,
Ту пуç туллийех,
Йӑхӑл та йӑхӑл
Йӑхӑлтатаççӗ.
Хӑшӗ выђаççӗ
Хӑшӗ йӗреççӗ,
Хӑшӗ пӗр-пӗрне
Тытса çӳреççӗ.
Ак еп килелле
Ђупса килетӗп,
Шӑкӑрт та шакӑрт
Пӳрте кӗретӗп.

Йури шывпала
Сапса шăнтнă пек,
Аллăм урамсем
Шанк хытса кайнă,
Ĕф-те-ĕф туса
Алла вĕретĕп,
Куççулĕм йухаť
Епĕ йĕретĕп.
Анне ман çирен
Кивĕ кĕрĕке
Хывса илђĕ те
Лăс-лăс силлерĕ,
И, ăссăр, ăссăр!
Пĕђĕкçĕ ђĕппĕм,
Ăма халиђђен
Çўрерĕн терĕ.
Камака çине
Асатте хыçне,
Йăпăр та йапăр
Хăпарса карăм.
Ђĕнмесĕр шăппăн
Ларап ăшăнса,
Асатте: ăма
Çўрен тет шăнса.
Атте сак çинђе
Çăпата тăваť,
Пуçне пĕкĕртсе
Шĕшлипе ђиксе,
Ху килне манса
Çакă вăхăтђен
Ма çурерĕн тет,
Тумтирне çĕтсе,
Пĕђĕкçĕ пуçпа
Ђĕтресе кўтсе.
Шăнса килнĕшĕн
Ăна пĕр иккĕ
Памаллађђĕ тет
Анне аттене.
Хăй аллипеле
Çўлелле тăсса
Пĕђĕк ђашкăпа
Йашка пађĕ те,
Ме, ăшă çĕрте
Ђасрах çи терĕ.
Хăвăртах ĕçсе
Çисе тăрантăм,
Каллех асатте
Хыçне йăвантăм.
Ак асаттене
Халлап йар тесе,
Тытăнтăм епĕ
Тархасламашкăн.
Асатте ђасах
Мана итлерĕ,
Йаратăп еппин
Ес итле терĕ.

Халап.

Акă икĕ çын
Вăрмана кайсан
Упăте курса,

Хăранипелен
Шăла кăларса
Илет вăл тесе,
Çĕрте выртакан
Йăвăç хăвăлне
Иккĕшĕ икĕ
Пусĕнђен кĕрсе
Пытанса выртнă.
Упăте пырса
Çавă хăвăлăн
Ике пуçне те
Çаврăнса пăхса,
Ха, киђем, киђем!
Халĕ пĕр киђем,
Кун пек ик кутлă
Çын та пулĕ мĕн?
Тесе тĕлĕнсе
Аллисемпеле
Икĕ пеççине
Шарт, шарт! çупрĕ тет.
Мĕн вăл упăте?
Терĕм те епĕ,
Çын пек пулнă вăл,
Терĕ асатте.
Асатте халап
Йани хăлхана,
Тем пекех лайăх
Илтĕнђĕ мана,
Унăн халапне
Хам та вĕрентĕм,
Кайран çынсене
Каласа пама.

**Пĕђĕк хресђен.**

Пĕрре хĕлле, сивĕ ђух,
Еп вăрмантан тухрăм та,
Пăхап мала çул çине,
Ак йерипен ту çине.
Пĕр пĕђĕк çын лашапа
Вут тийанă ăлавпа
Пĕр пĕђђенех улăхаť,
Пуçне kaçăртса пыраť.
Ђĕлпĕр вĕççĕн лашине
Кăртти-картти турткалаť,
Йăпăр-йапăр пускалаť,
Тем-тем сăмахсем калаť.

Лăпăш-лапăш атăпа,
Пысăк алса тулĕпе,
Кивĕ шалпар кĕрĕкне
Йуле йанă туммине.
Хăй пăшăхнă, пиçĕхнĕ,
Çамки тăрăх тар йухат;
Пуç тĕлĕнђен тĕтĕм пек
Мăкăрланса пăс тухат.
—Сывă-и, ађам? терĕм те,
—Сан мĕн ĕç пур ман çумра!
Ут ху çулăпа, терĕ.
—Ай-ай есĕ пит хайар!
Аçтан турттаран ку вутта?
—Вăрмантан. Атте касат,
Еп турттарса тăратăп.
Сирĕн çемйе пысăк-и?
—Çемйе пысăк та çавă,
Арçын—аттепе еп çех.
—Авă мĕнле халĕ вăл.
А есĕ ху мĕн йатлă?
—Влас йатлă пулатăп?
А миçе çулта есĕ?
—Ултăмĕш çула кайнă...
Ну-у!... Вилнĕ! ут ђасрах!
Тесе, хытă çухăрса,
Кăрт-карт туртса ђĕлпĕрне
Ыткăнат çех малалла.

## Çутта хирĕç.

Шурăм пуçĕ çуталђĕ;
Тăрăр ђасрах, ађасем,
Кăпăр-капăр тумланăр
Çăвăр питĕр-куçăра.
Тăрăр, тăрăр хăвăртрах,
Уçăр ђасрах ăйхăра,
Тĕттĕм çĕрте тăрас мар
Пĕр май хуйхă-суйхăра.
Пур те харăс çĕкленсе
Тăрук сиксе тăрăр та
Çитсе ўкĕр çиçĕм пек
Çутă патне пурăр та.

## Çутталла.

Шăннă ђўређе
Йăлт çех çуталђĕ
Теминçе тĕслĕ
Йăр-йăр çутăпа.
Пуçне çĕклĕсе
Пăхрĕ Петĕр те:
Ха! хĕвел йепле
Ўкнĕ тет, пўрте,
Анне хăвăртрах
Çăкăр пар тесе,
Кăппă-каппăн çех
Ĕççе çирĕ те
Кĕнекисене
Сумкине ђиксе,
Кайаť шкула
Выљаса кулса.
Сивви те сивĕ,
Вăхăт те пит ир.
Ирхине ађан
Ăнĕ те пит кĕр —
Мĕн ыйтсассăн та
Тĕлĕнсе тăмасť,
Петĕр хăвăртрах
Каласа параť.
Ун пĕлнĕхĕ
Вĕреннĕлĕхе
Куçне пăхнипех
Курăнса тăраť.

—Вĕреннĕлĕхе
Мĕн çитет тесе
Ахаљ каламан
Çавă ђăвашсем.
—Çыру тĕнђене
Тытаť тесе те
Вĕсем ђăннипе
Каланă çавă.
Мĕн кăна тума
Тытăнсассăн та
Вĕренмен сынран
Лайăх тăваť вăл.
Ун кусне пурте
Витĕр курăнаť,
Унăн ĕçĕ те
Ĕмĕр пурăнаť,
Пур ђăнлăха та
Çыру пĕлтерет,
Мĕн пур асапа
Вăлах пĕтерет,
Пĕтĕм тенђене
Вăл пĕлсе тăраť,
Куç умĕнђи пек
Пурне те кураť.

## Тимĕр „хурђăка“.

Шупашкарăн çийĕнђе,
Аслати пек кĕрлесе,
Вĕççе çӳрет ероплан
Хурђăка пек йавăнса.
Мĕн пур хула халăхĕ
Пусĕсене çĕклесе
Пăхса тăраť çӳлелле
Вăл вĕçнипе савăнса.
Атăл çине, шыв çине,
Вĕççе анса лараť те,
Пысăк пулă йевĕрлĕ
Шыва çурса çех пыраť.
Кам хăраман сынсене
Хăйĕн ăшне лартаť те
Илсе кайаť пĕлĕ те
Çĕнтерейместь çилĕ те.

Атăл хĕрне кăткă пек
Халăх тулнă курмашкăн,
Еропланпа вĕçмешкĕн
Ĕрет çитмест лармашкăн.
Атăр ђасрах тăрăшар
Мĕн ђул вăй хал çитнипе
Пĕтĕм Совет çĕр шывне
Сывлăш флођĕ сармашкăн.

## Хĕлпе сивĕ хорĕ.

Хĕлпе сивĕ хăвађĕ
Ĕмĕрлĕхе сыв пултăр.
Йурпала пăр çĕр çинђе
Ĕмĕр ĕмĕр пурăнтăр.
Хăрамаспăр хађ епĕр
Хĕвел хĕрў ăшшинђен,
Халĕ епĕр çĕнтĕмĕр,
Халĕ епĕр пуç ĕнтĕ.
Пур çĕр çинђи илем те
Шăнса пĕттĕр пĕтĕмпе,
Çĕр нихçан та ăйхинђен
Ан вăрантăр ўлĕм те.
Хĕвел пиртен хăраса
Тарса кайтăр пĕр йенне.
Ăшăпала çуркунне
Ан килейтĕр çĕр йенне,
Пур çĕрте те ирĕке
Хамăр алла илтĕмĕр
Хĕвел килес çул çине
Пăр хўмепе пўлтĕмĕр.

Хěлпе сивě сыв пулђђăр
Пур çěрте те пуç пулђђăр,
Ěмěр ěмěр çěр çинђе
Патша пулса пурăнђђăр.

## Курак йурри.

Пăр катăкě кăшлăп та,
Кайап епě вăрмана.
Ăçта хўре пăрăнě
Çав йенелле сулăнăп.
Тěтěм шăрши пур çěрте,
Ăçта çынсем пур тěлте
Çěрçи мана каларě
Апат тупăн ес терě.
Сăхă тăман кăмăђшěн
Еп тăрăшса ěçлетěп
Пит тăрăшса йăвашшăн
Вăл хушнине итлетěп.
Йапалисем патěнђен
Пěр каймасăр сыхлатăп
Мěскер тума хушсан та
Питě лайăх ђухлатăп.
Вăрăм сăмса ырлăхпе
Шăршă лайăх сисетěп
Ăçта виле пур çěре
Ђасах çитсе ўкетěп.
Кăрак-кăрак! кăçкăрса,
Пěр май вěççе çўретěп
Вăрттăн карттăн ђěпсем те
Тыта-тыта çийетěп.

## Мулкаç.

Ăçта пырса ларсан та
Маншăн пĕрт те канлĕх çук.
Ах, хуйхă мана хуйхă,
Кун пек пурăнăçпала.
Пур те мана кураймасť
Нихăшĕ те хĕрхенмест.
Еп мĕн тума пулнă-ши?
Мана мĕншĕн тунă-ши?
Пуринђен те хăратăп
Мĕн курсан та таратăп,
Сивĕ тытнă йевĕрлĕ
Халтăртатса тăратăп,
Сехреленсе çех анђах
Йăвăç хуппи хыратăп,
Кăшт çеç сасă илтсен те
Шартах сиксе ўкетĕп.
Хам никама тивместĕп
Ним усал та тумастăп,
Çапах мана тивеççĕ
Пур те тытса çийеççĕ.

## Пăр.

Тем пысăккĕш шывсене,
Çырмасене, кўлсене,
Тĕттĕм çĕре хăварса
Выртап пусса хупласа
Сиввĕн сивĕ кăмăлне
Йурас шухăш шутласа.
Хĕвелпеле çутăлса

Илем кӳреп тĕнђене,
Ахах пĕрђи йевĕрлĕ
Йăлтăртатса курăнап.
Ман çийăмра ађасем
Шăва-шăва выљаççĕ,
Хăшĕ шуса ӳксессĕн
Ахăлтатса кулаççĕ.

## Пас.

Вăрманне те, çĕрне те,
Йăвăçне те, хирне те
Йăлтăртатса çыпăçса
Илем кӳреп пурне те.
Пур те кĕмĕл йевĕрлĕ
Курăнакан пулаççĕ,
Пĕтĕм йăвăç çийĕсем
Пурçăн пекех çутлаççĕ.
Йăлтăрккамсем йăл-йăл-йăл
Вут пек çунса курăнаť,
Хĕвел ăшши çитесрен
Пит хăраса пурăнап.

## Сивĕ.

Епĕ пур çĕре те кĕретĕп
Пур пурăнăçа та пĕтеретĕп,
Манран пур те хăраççĕ
Сехĕрленсе тăраççĕ.
Йухам шывсен çисене
Шурă ђул пек хытарап,
Кайăк-кăша хăратса

Кăнтăр йенне шутарап.
Вĕççе пыран çерçийе
Çĕре персе ӳкереп,
Ăçта çитнĕ вăл тĕлте
Пурăнăça пĕтереп.
Тухăр ђасрах тăвăлсем,
Усал хайар тăмансем,
Улăр, кĕрлĕр, шăхăрăр,
Пăсăк кунсем кăларăр.
Сукмакне те, çулне те
Шăлса кайăр пурне те,
Лашапа та çурăн та
Çӳреме çул ан пултăр.
Пур çĕр çинђи ђĕрĕ ђун
Вилсе пĕђђĕр пĕтĕмпе,
Çут тĕнђере ниçта та,
Ан хăварăр нимĕн те.

### Хĕл хорĕ.

Хыт саспа йурăсем
Харăслатса йурлăпăр,
Хĕл мухтав йуррине
Йанăратса йарăпăр.
Хĕлпе сивĕ иккĕшĕ
Пĕр пĕрне савнине
Хайарлăхĕсемпе
Мухтава тухнине,
Пĕтĕм çĕр çийĕнђе
Шурă йур выртнине
Йурлатпăр савăнса

Пĕр çĕре пухăнса.
Тĕнђе илем пĕтĕмпех
Йур айне йулнине
Шавласа кĕрлесе
Пăраçник тăватпăр.
Хĕлпе сивĕ иккĕшĕ
Патша пек тăнине,
Мĕн пур çĕр шыв илемне
Пĕтерсе тăнине,
Савăнса кĕрлесе
Мухтаса йурлатпăр.

## Сăхă тăман.

Ирĕк çĕрте çӳретĕп
Ирĕкленсе савăнса,
Çил тăвăлпа уласа
Пăрăлтатса йавăнса.
Хирĕсене йалсене,
Çырмисене варсене
Шăлса кайап пĕтĕмпех
Йурпа пусса хупласа.
Çул çийĕнђи çынсене
Куç уçмашкăн памастăп,
Ађасене савăнса
Вăй выљама йамастăп.

## Й у р.

Епĕр йурсем пит çăмăл
Çил вĕрнине итлетпĕр
Вĕлтĕртетсе çаврăнса

Сиксе вĕççе çуретпĕр.
Пăртак та пулсан çĕр çинђе
Пурăнăç сыхласђĕ тетпĕр,
Çил тăвăлтан хăраса
Таçта таçта çитетпĕр.
Ăçта çитнĕ вăл тĕле
Шурă ђаршав витетпĕр.
Пирĕн ĕмĕр вăрăм мар
Ăна лайăх пĕлетпĕр,
Хĕвел хĕрте пуçласан
Епĕр ђасах пĕтетпĕр.

## Çеçпĕл.

Хăрамăп санра хайар сивĕ:
Есĕ мана пĕтерме пултрас çук,
Пурпĕр çуркунне ђеђекленсе
Çынсен куççене савăнтарăп..
Кăш çурхи илем пĕлĕнсенех
Кăш ăшă çил пите перĕнсенех
Йур айĕнђен тухăп та
Симсĕн кăвакăн курăнăп.
Хаљ çуркунне çывăхра
Сивĕ хăрушă мар мана,
Ђасах ăшă çилпеле
Пĕтĕм тĕнђе вăранĕ.
Çурхи хаклă тĕнђепе
Ун ђух пур те савăнĕ,
Ман ђеђекĕм çийĕнђе
Хурт хăмăрсем йавăнĕ,
Вĕт-шак ађа-пăђасем

Ман патăмра ђупкалĕç,
Аллисемпе тыткалĕç
Шăлĕсемпе çырткалĕç..
Ех çеçпĕлĕ хитре те
Ытарма çук тийĕçĕ,
Йуратнипе хама та
Тата-тата çийĕçĕ.

## Хĕвел шевли.

Хăрамăп усал тыткăнран
Санăн пăрлă куçăнтан,
Хăрамăп хайар сăмахран
Кĕтсе тăрăп ырлăха.
Хуйха, сивве, усала
Халăм çитет сăнама,
Савăнтарăп тĕнђене
Ăшă сутă сăнăмпа.
Килĕ ăшă çуркунне,
Пирĕн патран хĕл кайĕ,
Ун ђух есĕ, сивĕ куç,
Хăвах мана пуççапăн.
Ылттăн хĕвел шевлипе
Пур усал та çухалĕ,
Çĕнĕ ђаплă çутăпа
Пĕтĕм тĕнђе çуталĕ,
Çĕр çийĕнђе ун ђухне
Çĕнĕ пурăнăç хускалĕ.

## Кăнтăр йенђи çил.

Хĕвел шевли йаланах
Йăлтăртатса тăракан

Çĕр шыв çийĕ ĕмĕрех
Вутăн хĕмĕн курăнакан,
Тем пысăккĕш тинĕссем
Пĕр шăнмасăр пурнакан,
Хамăн ђаплă çĕр шывран
Ырă хыпар калама
Ку çĕр шыва килтĕм еп.
Акă ђасах çуркунне
Кунта килсе çитĕ те,
Унăн вутлă урапи
Вут хыптарĕ пĕлĕте.
Манăн тăван çĕр шывра
Çӳлĕ тусен тăррисем
Пĕлĕт ăшне кĕреççĕ,
Вĕсен çине хупласа,
Ĕмĕр выртаť шурă йур,
Теминçе çĕр çухрăмран
Шурă пĕлĕт пек курăнса.
Кăвак тинĕс çийĕнђе
Ахах тĕслĕ хумĕсем
Хĕлне çуне пĕлмесĕр,
Сив пăр айне пуласса
Асĕсене илмесĕр,
Кĕленђе пек çутăлса,
Йăлтăр йалтăр выђаса
Ĕмĕр ĕмĕр пĕр-пĕрђе
Хăваласа çӳреççĕ.
Тем-тем тĕслĕ ђеђексем
Пĕр май вутла çунаççĕ,
Тем пысăккĕш пуллисем

Шӑмпӑр-шампӑр ҫӑмаҫҫӗ.
Кайӑк сасси йаланах
Мусӑк сас пек илтенет.
Ҫавӑ ҫаплӑ ҫӗр шывран
Ку ҫӗр шыва килтӗм еп.
Епӗ — кӑнтӑр йенҫи ҫил;
Ыр ҫанталӑк сывлӑшӗ
Еп килсессӗн тин килет
Кунта ҫӗр шыв ырлӑхӗ
Ҫуркуннепе ҫӗр ҫинҫе,
Йалан пӗрле ҫӳретӗп.
Ӑҫта ҫитнӗ вӑл тӗлте
Сивве ҫапса ҫӗмӗретӗп.
Вӑрманне те уйне те
Вӑрататӑп ӑйхинҫен,
Пур ҫӗр ҫинҫи ҫӗр-ҫуна
Хӑтаратӑп хуйхинҫен.
Шыв шурсене пурне те
Пӑр айӗнҫен кӑларап,
Пӗтӗм ҫӗр шыв илемне
Еп вилӗмрен хӑтарап.
Ку ҫӗр шыва йаланах
Ҫак вӑхӑтра килетӗп,
Ҫӑвӗпелех савӑнса
Ирӗкленсе ҫуретӗп.
Тӑрӑр ҫасрах пурӑр та
Ҫуркунне килет кунта!
Вӑл панӑ пек ырӑлӑх
Парайас ҫук мӑнкунта?
Ҫуркунне килет! ҫуркунне!

Пур-те хытă савăнăр!
Улăхсене хирсене
Хурт пек ђĕр ђун саланăр.

## Çуркунне хорĕ.

Хĕвел ђаплă ăшшипе
Аслă ђаплă мухтавпа
Пĕтĕм çĕре йанратса
Вĕççе килет çуркунне.
Вăл çĕр çинђе ђĕрĕлĕх
Пĕтĕм ђунтан йуратат,
Шăнса хытнă пурнăçа
Вăл ăйхинђен вăратат.
Пирĕн савнă çĕр шыва
Ђĕрĕлĕх шыв ĕçтерет,
Тĕрлĕ çырла çимĕçпе
Йăвăç курăк ӳстерет.
Усал, хайар, хăрушă
Хĕлпе сивĕ, йурпа пăр,
Унтан анђах хăраççĕ
Теттĕм йенне тараççĕ.

## Пĕр шăнкăрђă.

Пур кайăкран маларах
Килтĕм вĕççе васкаса,
Ывăннине пĕлмесĕр
Йурла йурла хашкаса.
Çурт тăррине лартăм та
Йанăратрăм йуррăма,
Савăнтартăм, култартăм

Ађасене сӑввӑмпа.
Йӑпӑрт-йӑпӑрт йӑвана
Кӗре-кӗре пӑхатӑп
Ӑшӑ вырӑн тумашкӑн
Тӗксем ҫӳҫҫем пухатӑп.
Унта ђӗпӗ кӑларса
Йӑвам тӑррине ларса
Йурлап тем пек савӑнса
Ҫунатӑмсене сарса.

## Ушкӑн шӑнкӑрђӑ.

Епӗр ӑшӑ хыҫенђен
Йалан вӗҫҫе ҫӳретпӗр,
Вӑл хӑш тӗле ҫитсен те
Унпа пӗрле ҫитетпӗр.
Ӑшӑ йенђи ылттӑн пек
Ытарма ҫук ҫӗр шывран
Ҫуркуннене йуратса
Харӑс хӑпса килтӗмӗр.
Халӗ ӗнтӗ савӑнса
Ҫунат ҫапса йурлатпӑр,
Ҫитес ҫӗре ҫитнипе
Кӑмӑлсене ырӑлатпӑр.
Пире кӗтсе ађасем
Хатӗрленӗ йӑвасем,
Вӑрӑм шертӗ тӑрринех
Ҫыхса хунӑ хаљ вӗсем,
Лара-лара йурлама
Ҫыхнӑ ђӗрӗ туратсем,
Пирӗн йура итлеме

Ех!. тем пекех рат вĕсем.
Йепле пирĕн йурлас мар
Çав тĕр хисеп тунăшăн,
Мĕн пур йалсем хуласем
Йăва туса хунăшăн.
Ех çуркунне, çуркунне!
Шăрантарать тенђене
Савăнтарать ырлăхпе
Мĕн пур ђĕрĕ ђунсене.
Çыв пул, сыв пул çуркунне!
Савăнăçсен савнăçĕ,
Çĕр ђăмăрки çийĕнђи
Ђĕрĕлĕхĕн амăшĕ.

## Тăрри йурри.

Çĕр çинђе те çӳлте те
Çут çанталăк туллийех,
Ђăрăлтатса çех тăрать
Кунĕн çĕрĕн ман сасă.
Çуркуннепе савăнса
Ташла-ташла йурлатăп
Унăн усă кăмăлне
Пĕтĕм ђунтан йуратăтăп.
Çу шăраннă йевĕрлĕ
Шăрантарап сăввăмпа
Пĕтĕм ађа-пăђана
Савăнтарап сассăмпа.

## Сар кайăк.

Тĕкĕм çӳçĕм сапсарă,
Сар ђеђек пек курăнать,

Йуррăмпала сăввăмпа
Çут çанталăк хумханаť.
Сассăмпала сĕм вăрман
Мусăк пекех йанăраť,
Шакăлтатса шăйлатса
Шăнкăртатса çех тăраť.
Йур йурлама йурийех
Ку çĕр шыва килтĕм еп,
Çуркуннешĕн савăнса
Çĕрĕн кунĕн йурлама.
Çĕр çывăрма пĕлмесĕр
Еп ун йатне мухтатăп,
Ывăнса хал пĕтсен тин
Кăшт çеç вăхăт тăхтатăп.

### Шăпђăк.

Мухтанмастăп çынсем пек
Хитре тесе сăнăмпа,
Иртен çӳрен çынсене
Ђарап хамăн сăввăмпа.
Еп йурлама тытăнсан
Сар кайăк тă вăтанаť,
Йăваç çулçи хушшине
Тĕттĕм çĕре пытанаť.
Çакă ђаплă çуркуннен
Еп ђăн ђаплă сăвăçи,
Тинĕс хум пек хумханаť
Ман сасăпа йăвăç çи.

### Лĕпĕшсен хорĕ.

Пурçăн çунатпа
Йăл-йăл курăнса,

Вĕл-вĕл вĕçетпĕр
Вĕлтĕртеттерсе.
Ылттăн çуркунне,
Ђаплă çуркунне,
Ытармалла мар
Сана, çуркунне!
Ушкăн-ушкăнпе
Пĕлĕт пек хăпса,
Ђеђексем çинђе
Пылсене ĕççе
Çўретпĕр вĕççе.
Ылттăн çуркунне,
Кĕмĕл çуркунне,
Ытармалла мар
Сана, çуркунне!

**Çеçпĕл.**

Акă йепле çуркунне
Хĕвел хытă пĕçерет,
Вут хунă пек шăрăтса
Йурпа пăра пĕтерет.
Кулса тăнă йевĕрлĕ
Хĕвел пăхат çутăлса,
Сивĕ куççуђ йухтарса
Тарат йĕрсе çухăрса.
Шăкăлтатса калаçса
Шăнкăртатса шавласа,
Пĕрне-пĕри хăваласа
Пыра-пыра капланса,
Кĕпĕрленсе кĕрлесе

Сӗлтӗшленсе сӗрӗшсе,
Йӑлтӑр-йӑлтӑр курӑнса
Çырмасемпе пӑр кайат̆.
Ех çуркунне, çуркунне!
Савӑнтарат̆ пурне те
Вут хунӑ пек çунтарат̆
Вӑл йурне те пӑрне те.
Сӑртсем, тусем, çеремсем
Уйсем, çеçен хирӗсем
Йешернӗçем йешерет,
Симӗс пустав витӗнет,
Пур çӗрте те ђӑр-ђӑр-ђӑр
Кайӑк сасси илтӗнет.
Пӗтӗм çӗрӗн çийӗнђе
Ытарма çук йурӑ сасси,
Хӗвел ђаплӑ ӑшшипе
Килђӗ çӗр-шыв йурласси.
Мӗн пур ђӗр-ђун савнасси.

## **Куккук ђеђекӗ.**

Мӗн пур ђеђек хушшинђе
Еп патша пек курӑнап,
Куккук кӗрен ђеђекӗ
Йатлӑ пулса пурӑнап.
Хаклӑ йышши супӑњ пек
Ырӑ шӑршӑ кӑларап,
Сӑн сӑпатпа çынсене
Савӑнтарса култарап.
Ытарма çук илемлӗн
Таçтан курӑнса тӑрап,

Вутăн хĕмĕн çунса çех
Пуçăма силлесе ларап.

### Мăкăђ ђеђекĕ.

Манăн илем çийĕнђе
Ырă ĕçкĕ-çикĕ пур,
Вăл пит тутлă çимешкĕн
Çăвар тути кўмешкĕн.
Тата вăлта анђах мар
Пыл та çу та паратăп,
Пахђасене сатсене
Ырă шăршă саратăп.

### Шăлан ђеђекĕ.

Йеплĕ хулăсемпеле
Йешĕђ çулçă айĕнђе
Еп, пытанса пурăнап.
Çуркуннепе савăнса
Вутăн-хĕмĕн курăнап.

### Çўçе кăђăки.

Пуринђен те маларах
Еп ђеђеке ларатăп,
Шур пурçăн пек çап çутă
Шур кăђăкă кăларатăп.
Хĕлпе сивĕрен тарса
Тĕттĕм çĕрте пурăнса
Халран кайнă пыл хуртне
Малтан епĕ ђĕртетĕп.
Çуркунне килђĕ вĕт!
Çут тĕнђене тух тетĕп.

## Панулми ђеђекĕ.

Йулташăмсем, тусăмсем,
Çуркуннехи илемсем.
Пур çĕр çинђе ўсекен
Йăвăç курăк ђеђексем,
Ман çиййăма пăхăр-ха?
Пурçăн ђаршав витнĕ пек
Витрĕм епĕ йăвăçа,
Ђеђек айне хăвартăм
Сар кайăка сăвăçа!..
Пахђасене сатсене
Ырă шăршă тултартăм,
Нумайĕшне ĕмĕрте
Ырлăх çине путартăм.
Пур те мана йуратаť
Пур те хытă саваççĕ,
Пуринђен те ытларах
Ађсем хытă савнаççĕ.
Сăмахпа çех кăна мар
Йурăра та асăнаççĕ.

## Курăк.

Пĕтĕм çĕр шыв илемне
Епĕ кўрсе пурăнап,
Симĕс пурçăн йевĕрлĕ
Симсĕн кăвакăн курăнап.
Нўрпе витсе тăратăп
Ĕмĕр-ĕмĕр еп çĕре,
Кунĕн çĕрĕн ђăр та ђăр
Кайăк сасси ман çире.

Тĕвик-тĕвик текерлĕк
Тăрик-тăрик тăрнисем,
Йанăраса çеç тăрат
Тĕрлĕ кайăк йуррисем.
Хам çуратнă ађсем пек
Еп вĕсене сыхлатăп,
Ырă уçă сывлăшпа
Çиййĕсене сывлатăп.
Çак ылттăн çурт йевĕрлĕ
Йăлтăртатса тăракан
Уç кăмăллă çуркунне
Йăл-йăл кулса тăнипе.
Ун сĕткенне ĕçнипе
Епĕ ђасах йешереп
Тĕнђе илемне кўреп.
Еп пулмасан çĕр çинђе
Ђеђексем те пулмĕђђĕç,
Нўхрепсемпе клетсем те
Сĕт-çупала тулмĕђђĕç.
  Çак çуркунне килмесен
  Еп те шăнса выртăттăм,
  Сивĕ йурăн айĕнђе
  Ним курмасăр выртăттăм.

### Ђеђексен хорĕ.

Сывпул, сывпул, ай çуркунне
Савăнăçсен савăнăçĕ,
Мĕн пур ђеђек ай амăшĕ,
Пĕтĕм тĕнђе илемĕ!
Кунти çĕр шыв ай илемĕ

Есĕ килсен тин килҕĕ.
Усал сивĕ ай хăраса
Тарса карĕ çĕр йенне.
Пур кайăк кăш ай хуртхăмăр
Туй тумашкăн тытăнҕĕ.
Пирĕн тăшман ай хайар хĕл
Таçта тарса пытанҕĕ.
Мухтав ылттăн, çуркунне,
Пирĕн çĕр шыв ырлăхĕ!
Мухтав сана, çут хĕвел,
Çут çанталăк пуçлăхĕ.
Хĕвел шевли ăшă çил
Мухтав сире, тав сире,
Кăнтăр йенҕи ырлăха
Кунта илсе килнĕшĕн.
Пурсăра та тав туса
Мухтав йурри йурлатпăр;
Сирĕн ҕаплă ĕçĕре
Пур те хисеп тăватпăр!
Пурсăмăр та пĕр тăрук
Харăслатса, хорпала
Йанăратса йаратпăр.
Сана ҕунтан ыр сунса
Пуç тайса тав тăватпăр,
Сан ырлăхăпа анҕах
Епĕр сывă тăратпăр.

## Хӗвел шевли.

Еп тӗнђере нимрен те
Хăрамастăп нихçан та,
Хуйхă суйхă йеплине
Асăма та илместӗп.
Çуркуннепе йаланах
Пӗрле йерсе çӳретӗп,
Усал сивӗ хăватне
Ђасах çапса çӗмретӗп.
Йурă сăвă сассипе
Пӗтӗм çӗре тултарап,
Хӗлпе сивӗ хăватне
Вут хунă пек çунтарап.
Çӗр ђăмăрки çийӗнђе
Пур йенне те çутатап,
Йурпа пăра хăвăртах
Ку çӗр шывран çухатап.

## Хор.

Йур сассисем,
Купăс сассисем
Кӗрлесе тăрăр
Пӗтӗ çӗр çинђе!
Сирӗн сассăрсем
Çут çанталăка
Тинӗс хумӗ пек
Ишсе çӳређђӗр,
Хӗвел патне те
Çитсе çапăнђђăр.
Пур ђӗрӗ ђун та
Илтсе савăнтăр.
Асаппа хуйхă
Хăраса тартăр.
Çуркунне килђӗ
Пур те савăнтăр!
Хӗл усаллăхӗ
Пӗтӗмпех пӗттӗр
Çуркунне çӗре
Илемпе виттӗр.

## Ђ ĕ к е ç.

Çeçен хирсемпе
Вăрмансем урлă,
Вĕçĕ хĕрисĕр
Тинĕссем урлă,
Çиçĕм çиçнĕ пек,
Вĕççе килтĕм еп.
Шурă пўртсенĕн
Хăйĕкĕсене,
Йăва çавăрса
Ђĕпĕ кăлартăм,
Ђăвăлтатса çех
Йурласа лартăм.
Ђаплă суркунне
Ыр кăмăлĕшĕн,
Пĕр ывăнмасăр
Ђăвăлтататăп.
Тăван çĕр шыва
Илем кўнĕшĕн,
Çуркунне сана
Ђунтан саватăп.
Епĕ вĕçнине
Сывлăш та сисмест,
Хамăн çиййăмра
Тĕкĕм те вĕçмест.
Ăнсăртран вĕççе
Пўрте кĕрсессĕн,
Манăн пуçăма
Сар çу сĕреççĕ:
Сан çăварна—çу,
Тутăна—пыл, теççĕ.

## К а ш к ă р.

Епĕ Кашкăр-Кашаман,
Выçă ђух, пит асакан,
Хĕлле сурăх çимешкĕн
Хўме урлă каçакан.
Уншăн мана тытсассăн
Урнă пекех хĕнĕççĕ,
Тире сўсе илеççĕ
Сутса укçа пўлеççĕ.
Хаљ çуркунне ман валли
Ăçта пырсан та апат пур.
Выљăх-ђĕрлĕх хир тулли
Ђас пулас çук çын кулли.

Йунсене çех ĕçетĕп,
Вăрманалла вĕçетĕп.
Тавă сана, çуркунне,
Ес пĕтертĕн хĕл кунне.
Упа туспа савăнса
Саншăн еп те ташлатăп,
Тăрăс-тăрăс сикетĕп,
Тăпăр-тăпăр тăватăп.

## Тилĕ тус.

Еп тилĕ тус пит ђейе, —
Ăна пур те пĕлеççĕ,
Хĕлле мана йĕрпеле
Питĕ хытă йĕрлеççĕ.
Пăшалпа та переççĕ
Капкăнсем те хураççĕ,
Йытăсем те хăш ђухне
Ђĕрене хыт çураççĕ.
Çырма çатра хушшинђе
Пĕр май тарса çÿретĕп.
Çĕрле вăрттăн-карттăн çеç
Йала пырса кĕретĕп.
Автан тусăн сассине
Пĕтĕм ђунтăн йуратап,
Хăш ђух ăна, май килсен,
Ăйхинђен те вăратап,
Тÿрĕ килсен ђăхха та
Каплаттарса хыпатăп,
Хамăн ăшă тирĕмпе
Пуршуйа çех ăшăтап
Нумай хĕн хур куртăм еп

Ку çуркунне пулиђђен,
Хаљ кайăк-кăш тем ђухлĕ
Çи кăмăлĕ тулиђђен.
Тавах сана, çуркунне,
Мана ырлăх панăшăн
Кунти çĕр шыв туллийех
Ђĕрĕ ђунсем йанăшăн
Упа туспа кашкăр тус!
Атăр, пур те ташлар-ха!
Çуркуннене ыр сунса,
Пĕтĕм ђунтан савнар-ха!

## Упа.

Епĕ Упа-Утаман,
Ик урапа утакан,
Пур кайăкран хытăрах
Мĕкĕрттерсе улакан,
Çăва тухсан вăрманта
Вĕллесене ватакан.
Тутлă пылне çийекен,
Ĕнесене тытакан.
—Усал сиврен хăраса
Хĕлĕпеле шăтăкра,
Ура тупаң çуласа
Вилнĕ пекех сывăртăм,
Çуркунне тин вăрантăм,
Тинех çисе тăрантăм.
Çак çуркунне пулмасан
Тен шăтăкрах вилĕттĕм,
Çут çанталăк ырлăхпе

Илемне те пĕлмĕттĕм.
Сыв пул, сыв пул, çуркунне!
Кăмăлтан тав тăватăп,
Саншăн сиксе ташлатăп,
Йăкăш-йăкăш шăватăп.

## Хĕвел çавнăш ђеђекĕ.

Еп çуркунне ырлăхпе
Ђасах ўссе çитĕнеп,
Темĕн ђухлĕ сип-симĕс
Çунатсемпе витĕнеп.
Сар пурçăн пек курăнса
Ларап çилпе силленсе
Йалан хĕвел йенелле
Савса пăхса киленсе.
Мухтав сана, çуркунне,
Тав тăватăп савăнса,
Пĕтĕм ђунтан ђĕререн
Пуçа ђиксе авăнса.
Еп хĕвелĕн çĕр çинђе
Ђăн йуратнă ђеђекĕ,
Çавăнпа та çав мана
Хĕвел çавнăшĕ теççĕ,
Тем пек маттур хĕрсем те
Пит йуратса çийеççĕ.

## Пыл хурђĕ.

Пин-пинĕпе пĕрлешсе
Епĕр пĕрле пурнатпăр,
Ĕмĕр пĕрле ĕçлесе
Пĕрле ĕçсе çийетпĕр.
Мĕн пур хитре ђеђексен
Пылĕсене илетпĕр,
Килĕштерсе пурăнма
Питĕ лайăх пĕлетпĕр.
Усал хĕлпе сивĕрен
Епĕр питĕ хăратпăр
Тĕттĕм çĕре пытанса
Сехĕрленсе тăратпăр
Хĕл каçиђђен пĕтĕмпех
Нађарланса çитетпĕр,
Нумайĕшĕ пăђăхса
Выçă вилсе пĕтетĕпĕр.
Çуркунне çех хĕрхенсе
Пире çутта кăларать,
Хăруш усал вилĕмрен
Пĕр вăл анђах хăтарать.
Вăл килсессĕн савăнса
Ђеђек çине саланса

Çăвĕпеле пыл йатса
Пурăнатпăр наўлатса.
Пирĕн пылтан тутлийĕ
Нимĕн те çук тĕнђере,
Ăна çиме тытăнсан
Çăтса йарăн ђĕлхĕне
Патши, вакши, сăсарĕ,—
Пурте ăна йуратаť,—
Улпуђĕ те, упи те,
Муллипеле пупĕ те.

## Кайăк.

Кайăк хуйхи-суйхи çук,
Ырлăх те çук, хурлăх та,
Çын тунине тумашкăн
Ăнĕ те çук асĕ те.
Вăл хăй пĕђĕк йăвине
Ђасах туса пĕтерет,
Унта вăрттăн лăпђăнса
Ђĕп кăларса çитерет.
Ун акнă та, вырнă та,
Çи пуçĕ те питрĕннĕ,
Çĕтĕлмест те пĕтмест те,
Кивелмест те, çĕтĕлмест те.

Хакĕ 65 пус.